27-88

И. НИКИТИНСКИЙ

# ХАМĂР ТАВРАРИ ÇУТÇАНТАЛĂК

## II-МĔШ ПАЙĔ



СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ
МУСКАВ * 1927

И. НИКИТИНСКИЙ.

# ХАМӐР ТАВРАРИ ÇУТÇАНТАЛӐК

II-мӗш пайӗ

А. АНТОНОВПА М. ЙУМАН куçарнӑ

Допущено ГУС'ом для
чувашских школ I ступени

СССР-ти ХАЛӐХСЕН ТӖП ИСТАТТӖЛСТВИ
МУСКАВ—1927

КНИЖНАЯ ФАБРИКА
ЦЕНТРАЛЬНОГО
ИЗДАТЕЛЬСТВА
НАРОДОВ СССР
МОСКВА, ШЛЮЗОВАЯ
НАБЕРЕЖНАЯ, 162

Главлит № 90.702
Тираж № 3.000

Заказ № 1565

# ШЫВ, СЫВЛĂШ, ТАТА ÇĔР

## Шывсем мĕнлисем пур.

Çуллахи шăрăх кун ђĕреслетсе çунă çумăр хыççăн йалти шывсем хир тăрăх шавласа-кĕрлесе Пăла çырминелле*) ђупнă ђухне, епир те, виçĕ йулташ, çавăнталлах ђапăлтаттаратпăр.

Пит аван-çке анасем тăрăх анаталла ђупса пыма: кашни праснара, кашни йĕр тăрăх шывсем йăлтăртатса йухса выртаççĕ. Акă пĕр çырминђе шывсикки пулса ларнă, унта, шыв ђавнипе, шăтăк пулса тăнă. Нумайах та тăмĕ, çĕр ишĕлнипе шывсикки сăрталла ђакса пырĕ, çўлелле ђакнипелен, вăл çўлĕрех пулса пырĕ, ун хыçĕнђи канав тарăнланса пырĕ. (Шухăшласа пăхăр: хирсенђе анаталла выртакан тарăн çырмасем йепле пулаççĕ?)

Пĕтĕм хирти çырмасем тăрăх ђапăлтатса ђупса курса çўрес-ђĕ, анђах пур çĕре те ђупма вăхăт çитмест: пирĕн пулă тытма васкамалла.

Пăла патне ђупса çитсе пăхар. Хаљ ăна пĕлес те çук: аран-аран йухса выртакан пĕђĕкçеççĕ çырма йăлтах урса кайнă: ăсла пек пăтранђăк шывĕ акăрса выртаŤ, ун тăрăх кăпăксем вĕлт-вĕлт вĕлтлетеççĕ. Ку шывра ђулĕ те, куракĕ те, пулли те, нимĕн те курăнас çук. Анђах епир пулăсем ăçта пуррине пĕлетпĕр: вĕсем çыран хĕрринђи лăпкă шырансенђе. Пăтранђăк шывра вĕсем ним те курмаççĕ, çавăнпа вĕсене халĕ атмапа тытма çăмăл.

Пулă тытнă хыççăн ăшă шывлă хирти çырмара шыва кĕресех килет. Анђах, сасартăках çăвара шыв лексен, аван мар: шăл çинђе ва а темĕскер ђакăртатаŤ,

*) Пăла — Патĕрйел уйесĕнђи çырма, вăл Сĕвене йухса кĕрет.

ҫӑвара хыраҫ. Ку ӗнтӗ хӑйӑрпа тӑм, вӗсене ҫумӑр шывӗ хиртен йухтарса килнӗ.

Акӑ, пӗр-икӗ кун иртсен, Пӑла ҫырми ҫакса лӑпланӗ, унӑн шывӗ тӑп-тӑрӑ пулӗ. Хӑйӑрпа тӑм унӑн тӗпне ларӗ. (Стакканри шыва тӑм йарса пӑтратӑр; пӗр тавлӑкран шывӗ мӗнле пулӗ: пӑтранҫӑк-и, тӑрӑ-и?)

Халӗ ӗнтӗ шыв тӗпӗнҫи ҫулсем, ӑшӑкрах ҫӗрте ишсе ҫӳрекен пулӑсем те, лайӑх курӑнаҫҫӗ. Епир ҫырантан шыври йапаласене, пулла лайӑх куратпӑр пулсан, шыври пулӑ вӑлта ҫине лартнӑ ӑмана тата лайӑхрах кураҫ. Шывра ҫӑмнӑ ҫухне епӗ куҫа уҫса пӑхкалаттӑм. Шывра епир куратпӑр, анҫах нумайҫҫен пӑхма кансӗр, куҫа йывӑр пек туйӑнаҫ.

Пирӗн йал патӗнҫи шурлӑхри-лаҫакари шыв вара йӑлтах урӑхла тӗслӗ. Кунти шыв йаланах ҫей йеверлӗ сарӑ. Аслисем пире, аҫапҫасене, ҫир йарасран хӑраса, ҫав шурлӑхри шыва ӗҫме хушмасҫӗҫ. Вӗсем тӗрӗс каланине епӗ ҫасах пӗлсе ҫитрӗм. Пирӗн уҫитӗл шурлӑхра пӗҫик кӳлӗ ҫавса, унта караҫсене йаҫӗ. Акӑ мӗн пулҫӗ вара. Нумайах та вӑхӑт иртмерӗ,— караҫсем пур те пӗтрӗҫ. Ҫапла ӗнтӗ ҫав шывра караҫсем те пурӑнма пултараймаҫҫӗ пулсан, вӑл шыв ҫӑнахах та сийенли хӑй тӗллӗнех курӑнса тӑраҫ.

Ҫак шурлӑхран пӗҫӗк ҫырма пуҫланаҫ, унӑн та шывӗ сарӑрах. Анҫах вӑл малалла йухса пынӑҫемӗн тасалса ҫуталса пыраҫ. Вӑл йухса кӗнӗ ҫӗрте Пӑла ҫырминҫе те шыв кӑшт сарӑрах.

Шурлӑхри шыв пӑтранҫӑк шывӗ пек мар: темӗн ҫухлӗ тытсан та вӑл тӑрӑлмасҫ. Хӑйӑр пӗрҫисем те унӑн ӑшӗнҫе курӑнмаҫҫӗ. (Ҫунакан лампӑ умӗнҫе ҫутталла хирӗҫ кӗленҫе куркасене (стакқансене) тытса, пӑтранҫӑк шывпа шурлӑхри шыва танлаштарӑр). Кирек мӗнле пулсан та, шурлӑхри шывра мӗн те пулин пурах, вӑл ахалех сарӑ тӗслӗ мар.

Ку сарӑ тӗс мӗнтен килет-ши? Шурлӑха тултаракан ҫумӑр шывӗ ҫутӑ кӗленҫе пек тӗссӗр-ҫке. Паллӑ, ҫав шыв шурлӑхра саралаҫ. Ҫавӑн пекех вӗри шыва кофе йе ҫей хурсан, шыв саралаҫ. Ун пек ҫухне „ҫей

тухаҫ“ теҫҫӗ; тепӗр тӗрлӗ каласан, ҫей сахӑр йеверлӗ ирӗлет. Анҫах шыва хунӑ сахӑр пӗтӗмпех ирӗлсе кайаҫ, унтан нимӗн те йулмасҫ; шыва хунӑ ҫей пӗтӗмпех ирӗлмест, унӑн пайӗ анҫах тухса ирӗлсе кайаҫ.

Ҫавӑн пекех, шурлӑхри курӑксем те, йӗпенсе, пӑртаккӑн та пулин ирӗлсе, таса ҫумӑр шывне сараҫҫӗ. (Ҫавӑн пек пулнӑ урӑх тӗслӗ шывсене кӑтартса парӑр-ха).

Анҫах ирӗлҫӗк-шыв *) йаланах тӗслӗ пулмасҫ, хӑш ҫухне вӑл тӗссӗр пулаҫ. (Мӗнле тӗссӗр ирӗлҫӗк-шыв-сене пӗлетӗр есир?) Ҫавӑн пек ирӗлҫӗк-шывсене таса шывран уйӑрма ҫӑмӑлах мар. Анҫах ирӗлҫӗк-шыва паллама, унта мӗн ирӗлнине пӗлме пӗр паллӑ пур. Ун пек ҫухне епир ӑна ҫӗлх пе пӗлетпӗр. Кашни ирӗлнӗ йапалан хӑйӗн тути пур. Ҫавӑнпа тути тӑрӑх шывра мӗн пуррине епир ҫасах пӗлетпӗр: тӑвар-и унта, сахӑр-и, йе мӗнле те пулсан имҫам-и. (Ҫырмари пӑтранҫӑк шывӑн тути пур-и? Мӗншӗн?)

Ҫи таса шыв тесе епир ҫӑлпа пусӑ (тараса) шывне шутлатпӑр. Ҫӑнахах та вӑл ҫап-ҫутӑ тӑрӑ, тӗссӗр. Нумайӗшӗ шыва шурӑ тӗслӗ теҫҫӗ. Апла калани вӑл тӗрӗс мар: шывӑн тӗсӗ ҫук. Ҫавӑн пек шыв сывлӑхшӗн ҫи усӑллӑ шыв. (Есир шурӑ тӗслӗ шӗвӗ йапалана мӗнлине пӗлетӗр?)

Ҫапах та ҫӑлри шывра та мӗн те пулсан пур иккен. Епӗ ӑна сӑмавар ҫинҫе сӑнарӑм. Сӑмавара епир йаланах таса шывпа анҫах лартатпӑр. Ҫапах та ҫӗнӗ сӑмаварӑн шал йенҫи йӑлтӑртатакан айккисем малтан тӗскӗмленсе кайаҫҫӗ, унтан вӗсем ҫине хӑйӑр тӗслӗрех хуйӑр лараҫ. Ӑна сӑмавар айккинҫен катса илме те, хырса пӑрахма та пулаҫ. Курӑнсах тӑраҫ ӗнтӗ, ҫӑлпа пусӑри таса шывра та ҫӗртен лексе ирӗлнӗ йапаласем пур. (Ҫырмари шывпа йе ҫумӑр шывӗпе танлаштарсан, ҫак пусӑри шывӑн хӑйӗн расна тути пур-и?) Сӑмавара вӗретнӗ ҫухне ҫак йапаласем вӗрекен шывран уйӑрӑлса сӑмавар ӑшҫиккине лараҫҫӗ.

---

*) Раствор.

Çапла ҫӑн таса шыв çӗр ҫинҫе ҫук пулаҭ. Çырмара йухакан шыв çумӑр хыççӑн пӑтранҫӑк пулаҭ, шурлӑхри шывсем курӑк тавраше пӑртаккӑн та пулса ирӗлнипе саралса тӑршланса кайаççӗ, çӗр айӗнҫен тухакан шыв çӗрти хӑш-пӗр йапаласене ирӗлтерет. Пӗлӗтрен ӳкекен çумӑр шывӗ те питех таса мар иккен: тусанлӑ сывлӑш витӗр анса вӑл та кӑшт варланаҭ.

Анҫах ҫӑн таса шыв пур. Ăçта-ши вӑл? Вӑл çав сӑмавартах, унӑн хупӑлҫи ҫинҫе. (Кӗленҫе ҫине виç тӗле пӗрер тумлам тумлатӑр: пӗр тумламне сӑмавар хупӑлҫи ҫинҫен, тепӗр тумламне хамӑр ӗçекен шывран, виççӗмӗш тумламне тӑварлӑ шывран. Кӗленҫене лампӑ ҫинҫе тытса типӗтӗр. Тумлам йӗрӗсене танлаштарса пӑхӑр. Вӗсем пӗр пек-и, йе пӗр пек мар-и? Пӗр пек мар пулсан, мӗншӗн вӗсем пӗр пек маррине шухӑшласа калӑр).

Сӑмавар хупӑлҫи ҫинҫе тап-таса шыв ӑçтан пулҫӗ-ха? Паллӑ, сӑмавар вӗренӗ ҫухне тухакан пӑсран. Çапла вара ҫӑн таса шыв тума йывӑр мар; ӑна тӑвас тесен, шыва пӗр савӑтра вӗретсе унӑн пӑсне трупа тӑрӑх тепӗр савӑта йарса сивӗтес пулаҭ, вара пӑсран ҫӑн таса шыв пулса тӑраҭ. (Сӑмавартан тухакан пӑса мӗнле пуçтарма пуррипе тумламсене мӗнле пуçтарма пурри ҫинҫен шухӑшласа пӑхӑр).

## Сӑмавар пире мӗне вӗрентет?

Сӑмавара лартса вӗретесси йывӑр ӗç мар: шывне тултаратӑн, кӑмрӑкне йаратӑн, вут ҫӗртсе йаратӑн, тата пӑртак кӑмрӑк йаратӑн,— ӗçӗ пулҫӗ те. Çапах та ӗçе лайӑх туса пӗтересси ҫасах пулмасҭ: кунта та алӑ-ура çыпӑçни, ӗçе хӗнӗхни, тума пӗлни кирлӗ. Малтан манӑн ӗç ӑнсах пымасҫӗ.

Шывне сӑмавара аванах пултарнӑ пек туйӑнаҭ ӗнтӗ: шывӗ туллийех, сӑмавар хӗррине пӑртак кӑна çитмест. Анҫах, сӑмавар вӗриленсе çите пуçласанах, хуплавçи айӗнҫен шыв сирпӗте пуçлаҭ. Хуплавçине

çĕклесе пăхатăн,—сăмаварта шыв туллийех. Шывĕ çĕкленнĕ пек.

Унтан епĕ сăмавара шыв сахалтарах тултара пуçларăм. Вара ĕç ăна пуçларĕ: вĕрекен сăмаварта шыв хăпарасса хăпарађђĕ те, çапах сăмавартан тăкăнмасђĕ. „Вĕриленнĕ шыва сивĕтсен мĕн пулĕ-ши? Тен вăл ђакĕ“, тесе шухăшла пуçларăм.

Вара мана акă мĕн тума шухăш кĕђĕ: епĕ сăмавар çинђе ерех савăтне ăшăтрăм та (мĕншĕн ăшăтрăм?), йерипелен унта сăмавартан вĕри шыв туллийех тултартăм. Мĕн пулђĕ вара? Шыв сивĕнсен, савăт мăйĕнђе вăл пĕр вершук ђакрĕ.

Апла ĕнтĕ сивĕ шыва вырăн ăшшинђен сахалтарах кирлĕ пулаĭ. Ку саккун шыв тĕлĕшĕнђен çеç мар, ытти йапаласем тĕлĕшĕнђен те çаплах. Пĕрре пирĕн путылккăран краççин мĕншĕн хăй тĕллĕнех йухса тăкăна пуçлани те мана паллă пулђĕ вара. Хĕлле лавкаран ђетвĕрт кĕленђипе туллийех краççин илсе килтĕмĕр те, ăна пўртре çўле, ăшă çĕре лартрăмăр. Хайхи ăшăннă краççин хăпарса савăтран йуха пуçларĕ. (Мĕншĕн?)



№ 1. Сăмавар вĕрет.

Сăмаварах илер-ха. Акă вăл темиçе саспа йурласа йађĕ, ђасах вăл шавла пуçларĕ. Хуплавçине уççан, епир сăмавар тĕпĕнђен пĕђĕк хăмпăсем нумайăн хăпарнине курма пултаратпăр. Ку пăс мар-ха: пăс тухнă ђухне шыв лакăртатса сикет. Алăпа хыпаласа пăхсан, сăмаварĕ те пит вĕрийех мар-ха.

Акă сăмавар пăртаккăн-пăртаккăн шăппăнланса пыраĭ. Хаљ ĕнтĕ ун хыççăн лайăхрах пăхас пулаĭ; астумасан, шыв ђасах тухса тарĕ. Вĕренĕ шыв лакăртатса сиксе сăмавартан сирпĕте пуçлаĭ. Кунта пĕр

сĕмĕл анҫах: хăвăртрах сăмавар трупине илсе сăмавар хуплавçине çĕклес пулаҡ. Пĕр-ик çеккунтран шывĕ кĕç лăпкăн вĕре пуçлаҡ; халҫ ĕнтĕ пăс шывран ирĕккĕн тухаҡ. (Канхуркка çинҫе вĕресе ларакан ҫейникĕн хуплавçи мĕншĕн сиккелет?)

Епĕ сăмавартан пăс купаланса тухнине, вăл маҫҫа айĕнҫе таçта саланса кайса курăнми пулнине пăхма йурататăп.

Тухакан пăс ăçта кайса çухалаҡ-ши? Пӳртрен вăл тухас çук, мĕншĕн тесен алăк та, кантăксем те хупăнса тăраççĕ. Апла пулсан, вăл пӳртрех пулмалла. Ав, пăхăр-ха кантăксем çине: унта мĕн пур? Вĕсем тарласа йĕп-йĕпе пулнă. Куçа курăнми пăс сивĕ кантăка тĕртĕнсе каллех шыва çаврăннă. (Хĕлле, сивĕ вăхăтра, типĕ пурта йе савăт таврашне пӳрте илсе кĕрсен, мĕншĕн вĕсем тарлаççĕ?)

Çапла ĕнтĕ пăс шыв иккен, анҫах вăл урăх тĕрлĕ йапала пек туйăнаҡ. Сăмавар вĕренĕ ҫухне шыв пăсланса пĕтĕм пӳрте сарăлаҡ; пӳрте уçсан вăл тулалла та тухаҡ. (Йашка пĕçернĕ ҫухне мĕншĕн савăта хуплаççĕ?)

Кунта пирĕн малалла пăс тесе мĕне шутласси çинҫен лайăх татса калас пулаҡ. Сăмавартан йе йашкаран тухса çӳле çĕкленекен пăс ҫăн пăс мар, вăл пит вĕтĕ тумламсем; вĕсем тусан пек сывлăшра вĕçсе çӳреççĕ, унтан йапаласем çине сывлăм шывĕ пек лараççĕ. Пăс тесе епир куçа курăнми шыва калатпăр. Пăс сывлăш йевĕрлĕ, çавăнпа вăл сывлăшпа хутăшса кайаҡ. Сывлăш та, пăс та куçа курăнмаççĕ, иккĕшĕ те вĕсем пур йеннелле те çăмăл сарăлса кайаççĕ. Çавăн пек йапаласене епир кассем тетпĕр.

Апла пулсан, ҫăн пăс кас пулаҡ. Сăмавартан тухса куçа курăнаканнисем — пит вĕтĕ тумламсем пулаççĕ. (Тинкерсе пăхăр-ха: сăмавартан тухакан пăс кантăк çине ларса тумлам пулаҫҫен ăçта çӳресе, йепле улшăнса пыраҡ?)

Халĕ ĕнтĕ сăмавара уçса пăхар. Вĕри шыва мĕн пулнă? Вăл пĕр-ик стаккан ҫакнă. Епир ҫей ҫас ĕçей-

мен пирки, сӑмавар нумайҫҫен вӗресе ларҫӗ, ҫавӑнпа шыв, пӑсланса тухса, ҫакрӗ. Ҫак шывран пулнӑ кас пӗтӗм пӳртӗ саланса кайрӗ.

Хамӑр таврари шывсене асӑрхаса пӑхар.

Епир ҫӳлӗк ҫинҫе кӗленҫе курка тӗпӗнҫе шыв манса хӑварнӑҫҫӗ. Пӗр-ик кунтан кӗленҫе курка алӑ айне пулҫӗ. Шывӗ пӗртте ҫук. Ӑҫта кайнӑ-ши вӑл? Вӑл типсе ларнӑ, пӑса тухса кайнӑ.

Апла ӗнтӗ шыв вӗренӗ ҫухне ҫеҫ пӑса тухмасҭ иккен, ахаҫ ларнӑ ҫӗрте та пӑса тухаҭ иккен. (Ӑҫта хӑвӑртрах пӑса тухаҭ: вӗренӗ ҫухне-и, йе ахаҫ ларнӑ ҫӗрте-и?)

Ҫавӑн пекех, ҫунӑ сӗтел те, ҫунӑ урай та, ҫунӑ кӗпе-йӗм те, вӗсем пур те типеҫҫӗ; йӗпе ҫӗр, лаҫака тавраш—типсе лараҫҫӗ. Сӑмахран, шыв йе нӳр пур ҫӗрте йаланах пӑс тухса сывлӑша ҫӗкленсе кайаҭ. (Кӗленҫе куркана та, ҫей ҫашки ҫине те шыв пӗр пек тултарса, пӗр ҫӗре лартӑр, ӑҫтан шыв хӑвӑртрах пӑсланса типсе кайнине асӑрхаса пырӑр. Икӗ куркана шыв пӗр пек тултарса тӗрлӗ ҫӗре лартӑр: пӗрне ӑшӑ ҫӗре, тепӗрне сивӗрех ҫӗре лартӑр. Ӑҫта шыв хӑвӑртрах типсе ларӗ?)

Апла ӗнтӗ ҫӗр ҫинҫи шыв пӗтӗмпех пӑса тухса ҫӳлелле ҫӗкленесшӗн. Кайран-кайран ҫӗр йӑлтах типсе ларнӑ пулӗҫҫӗ, анҫах ку йапала пулмасҭ, мӗншӗн тесен ҫӳлте пӑсран каллех шыв пулса тӑраҭ. Ҫав шыв ҫумӑр пулса ҫӗре типме памасҭ, ҫӗре ҫителӗклӗ шыв парса тӑраҭ.

Ҫумӑр пӗлӗҫӗсем йепле пулаҫҫӗ-ши? Ҫуллахи уйар шӑрӑх кун пӗлӗт ҫинҫе мӗн пулнине сӑнаса пӑхар-ха. Хӑш кун пӗлӗт тап-таса пулаҭ, унта пӗр пӗлӗт татӑкӗ те пулмасҭ. Хӑш кун унта-кунта кӑвак пӗлӗт ҫинҫе шур пӗлӗт татӑкӗсем, пӗлӗт куписем курӑнкалаҫҫӗ. Хӑшӗ-пӗри вӗсенҫен сарӑлса ӳссе кайаҫҫӗ; пӗр пӗлӗҫӗ тепӗр пӗлӗтне хӑваласа ҫитсе хутшӑнса кайаҭ; тепӗр пӗлӗҫӗ саланса таҫта ҫухалса кайаҭ. Акӑ ҫутҫанталӑка пӗтӗмпе хура пӗлӗт хупӑрласа илҫӗ. Ҫак йапаласем мӗнтен пулаҫҫӗ-ши? Ун ҫинҫен хамӑр сӑмавартан ыйтар: вӑл пире тӗппипе каласа кӑтартӗ.

Куҫа куранман вёри пăс сăмавартан тухса ăшă мар пўртре сивĕнсе тĕтре пулаť; тĕтре тесе епир вĕҫсе ҫўрекен пит вĕтĕ шыв тумламĕсене калатпăр. Ҫав тĕтре те пĕлĕт те пĕрех.



№ 2. Ҫумăр пĕлĕҫĕ (аслатилĕ пĕлĕт).

Апла ĕнтĕ пăс, сивĕнсен, шыва ҫаврăнаť, шыв тусанĕ (тĕтре) пулса тăраť. Шыв тусанĕ ҫўле маҫҫа айне ҫĕкленсе пур йенне те сарăлса кайаť, унта ăшă ҫĕрте каллех пăса тухса куҫа куранми пулаť. Ҫапла пўртре ирĕк ҫĕрте сăмавартан тухакан пăс ҫылай сарăлма пултараť.

Ҫакăн йевĕрлех ҫутҫанталăкра та. Ҫĕр ҫинҫи пăс ҫўле ҫĕкленсе шыв тусанĕ пулса кайаť. Ҫав тусантан, ҫав ҫăралнă тĕтререн ҫумăр пĕлĕҫĕ пулаť. Мĕншĕн пăс ҫўлте тĕтреленсе ҫăралаť? Мĕншĕн тесессĕн ҫўлте ҫĕр ҫинҫинҫен сивĕрех. Ăна кашнийех ҫуллахи шăрăх кун ҫўлĕ ҫиркў тăрне улăхса сăнаса пĕлме пултараť. (Кратусник пулсн, ҫўлте айалтинҫен миҫе

кратус сахалтараххине сăнаса виççе пĕлĕр). Çӳлте хĕлле те, çулла та сивĕ теççĕ.

Пĕҫҫен пĕлĕт татăкĕ, çӳлте пушă вырăн нумай пирки, каллех пăса тухса саланса пĕтме пултарать. Анҫах пăс пур йенҫен те çĕкленсе пырать, таврари çутçанталăка тултарса пырать. Кайран, çутçанталăк пăспа тăранать те, пăса çăтми пулать; вара çĕнĕрен çĕр çинҫен хăпаракан пăс вĕт тумламсем пулса пĕлĕте тухса кайать. Пĕлĕтсем ӳсеççĕ, пĕр-пĕринпе хутшăнса кайаççĕ, хĕвеле те хупăрласа илеççĕ. (Пĕлĕтсем кун тăрăшшĕнҫе кунăн хăш вăхăтĕнҫе тухаççĕ? Мĕншĕн?)

Унтан пĕлĕтсем çăраланса хуралса кайаççĕ. Ку ĕнтĕ тĕтрери вĕтĕ тумламсем пĕр-пĕринпе хутшăнса шултăра тумламсем пулнине кăтартать. Çак шултăра тумламсене сывлăш тек çĕклеймест, çавăнпа вĕсем вара çĕрелле персе анаççĕ. (Мĕншĕн аслатилĕ çумăр иртсе кайсанах таса уйар çанталăк пулать?)

## Ирхи сивĕпе.

Каçпах кил-йышсем „ирхине сивĕ пулать“ тесе калаçкаласа ларҫĕç, мĕншĕн тесен çанталăк уйарса, тӳлекленсе кайрĕ, пĕлĕт çинҫе темиçе пин те пулĕ çăлтăрсем йăлтăртатса çуна пуçларĕç.

Ирхине урама тухатăп, хай таврари йапаласене пĕлме те çук: йывăçсем, хӳмесем, çурт таврашĕсем,— пур те шурă мамăклă тумтир тăхăнса йусаннă пек. Мĕскер-ши ку? Йур мар-ши? Анҫах йур çӳлтен çăвать, кунта йывăç тураҫĕсем пур йенҫен те мамăкланса шуралса лараççĕ. Çул çинҫе те йур çуни таврашĕ курăнмасть.

Ку—тăм иккен. Вăл тĕсĕпе йур йевĕрлĕ, пуласса урăхла пулать. Йур пĕлĕтрен çăвать, тăм уйар сивĕ каçпа йывăççем çине, çĕр çине, ытти йапаласем çине те никама та систермесĕр ӳкет.

Тăм ӳкнĕ йывăç туратне çывăхарах пырса пăхар.

Унта пăр йĕпписем хĕллехи хĕвел çинҫе темиçе тĕрлĕ хĕлхемленсе йалтăртатса лараççĕ. Ку йур мар

иккен. Йур пĕрҫисем урăх тĕрлĕ. (Хăвăр куракан йур пĕрҫисене лайăхрах пăхса, хут ҫине пысăккăн ӳкерсе хурăр). Тăм йывăҫ ҫине пур ҫĕре те пĕр пек ӳкменнине асăрхăр. (Хăш тĕлте вăл таҫăка ӳкнĕ, хăш тĕлте вуҫах ҫук?)



№ 3. Йывăҫ ҫине тăм ӳкнĕ.

Ăҫтан пулать-ши тăм?

Кăна епир урамра пĕлейменĕпĕр. Хăвăртрах ăшă пӳрте кĕрер. Кунта та пĕр-пĕр тăм йеверлĕ йапала тупăпăр.

Пăхăр-ха: ҫĕр каҫаҫҫен кантăк ҫине таҫăка йур ларнă. Анҫах вăл йур мар, тăм. Халĕ вăл ирĕлет (мĕншĕн?) Каҫпа пӳрт сивĕнсен, кантăк шăннипе, кантăк ҫинҫе йĕпсем карталанса кайаҫҫĕ: сулҫăсем те, ҫăрăшсем те курăна пуҫлаҫҫĕ. Унтан шăннă кантăк тĕрленĕ пек пулса пăрланса ларать. Ҫĕр каҫаҫҫен ун ҫине ҫемҫе тăм ларсах пырать. (Шăннă кантăка вĕрсе витĕр курнаҫҫен ирĕлтерĕр, унтан вăл йепле шăннине сăнаса пăхса хут ҫине ӳкерĕр). Ăҫтан пулҫĕ ҫак тăм? Вăл пӳртри сывлăшран пулни палăрсах тăрать.

Ђăнахах та пӳртре йаланах пăс пур. (Ăçтан, йепле майпа вăл тухса пырат?) Тулта ăшă çанталăк ђухне пӳртре пăс пуррине епир сисместпĕр те, асăрхамастпăр та, мĕншĕн тесен пăс куçа курăнми йапала. Сивĕ килсе çапсанах, кантăксем сивĕнеççĕ, вара кантăксене лекекен пăс, сивĕнсе пăр йе тăм пулса, кантăксем çине ларат. Мĕн ђухлĕ пӳрт сивĕрех, çавăн ђухлĕ пăс кантăксем çине ытларах ларат, çавăн ђухлĕ кантăксем ытларах шăнса тăмланаççĕ. Акă пӳрте лайăхрах хутса ăшăтрĕç, кантăксем ирĕлсе типсе кайрĕç. Шывран пулнă пăса (кантăксем çинђи пăр ирĕлсе пăса тухнă) пӳртри ăшă сывлăш çăтса йађĕ.

Çапла ĕнтĕ йаланах та ăшă пӳртри сывлăшра пăс сивĕ пӳртринђен ытларах пулат. (Урайсене çунă кун мĕншĕн кăмакасене вĕрирех хутаççĕ? Мĕнле пӳртре кантăксем хытăрах шăнаççĕ: ăшă пӳртре-и, йе сивĕ пӳртре-и? Мĕншĕн?)

Хаљ ĕнтĕ сивĕ каçра тăм мĕнтен пулни паллă. Вăл сывлăшри пăсран пулат. Пăс шуђĕ сывлăшра, çанталăкне кура, тĕрлĕ пулат: ăшă çанталăк ђухне пăс ытларах, сивĕ ђухне сахалтарах пулат. Каçпа тулти сывлăш сивĕнсен, унта вара ку таранђђен тăнă пăс текех тăраймаст. Ытлашши пăс тăма çавăрăнса сивĕ йапаласем çине ларат. Вăл ăшă пӳртсен пĕренисем çине анђах лармаст. (Мĕншĕн?) Сивĕ мĕн ђухлĕ хăватлăрах, çавăн ђухлĕ пăс сывлăшран ытларах уйăрăлса йывăççене тăмпа йусантарат. Вĕсем çинђе те, епир малта каланă пек, тăм пĕр пек тађăка пулмаст (Мĕншĕн?)

Пĕр кун та иртет, тепĕр кун та иртет, сивĕ ђакат; хай тăм çук та, таçта кайса çухалнă, йывăççем каллех çара лараççĕ. Йепле çухалнă-ха вăл? Вăл ирĕлсе пĕтеймен (сивĕ ђылай пысăк тăрат); йывăççем çинђен те вăл пĕтĕмпех тăкăнса пĕтеймен. Паллă ĕнтĕ: тăм пăса тухса каллех сывлăша кайнă.

Епир йурпа пăр ăшă çĕрте ирĕлсе шыв пулнине, унтан шывран пăс пулнине пĕлетпĕр. Сивĕ çĕрте ирĕлесси-мĕнĕ пулмаст; апла пулсан, тăм шыв пулма-

сӑрах тӳрех пӑса тухаҭ. Тӑм та, йур та, пӑр та пӑса ҫавӑрӑнаҭ. Епир кӑна йаланах та куратпӑр.

Сивӗ ҫӗре ҫакнӑ кӗпе-йӗм йепле типет? Вӑл ун ҫинҫи пӑр пӑса тухса пӗтнипе типет. Алӑк умӗнҫи, йе хӳме ҫинҫи пӑр та ҫавӑн пекех: сивӗ вӑхӑтра пӑса тухса пӗтет. (Пӑр татӑкне виҫсе, кантрапа ҫыхса, тула йывӑҫ, йе стена ҫине ҫакса хурӑр. Пӑртак вӑхӑт иртсен, ӑна каллех виҫсе пӑхӑр. Мӗн курӑр? Мӗнтен килет-ши ку йапала?)

## Шыв шӑннӑ ҫухне шыва мӗн пулаҭ.

Епӗ пӗҫикҫӗле хулара вӗреннӗ ҫухне, аттесем мана пӗрре шӑннӑ сӗт йаҫӗҫ (ку ӗҫ хӗлле пулҫӗ). Сӗтне тӑм ҫӳлмексемпе туллийех илсе килҫӗҫ; шӑннӑ сӗт ҫӳлмексенҫе тулса мӑкӑрӑлса тӑраҭ. иепле кусем сӗте ҫӳлмек хӗрринҫен ҫӳлерех тултарса шӑнтнӑ? тесе епӗ йӑлтах тӗлӗнеттӗм.

Йрӗлнӗ ҫухне ытлашши сӗт ан тӑкӑнтӑр тесе, епӗ ҫӳлмекри пӑрӑн мӑкӑрне малтан хырса илеттӗм. Кӑна ҫапла туни кирлӗ те маррине кайран пӗлтӗм вара. Пӗрре епӗ ҫӳлмекри сӗте ӑшӑ пӳртре манса хӑвартӑм. Ирӗлнӗ сӗт ҫӳлмек хӗрринҫен айаларах тӑнине курсан, епӗ йӑлтах тӗлӗнсе кайрӑм.

Вара епӗ ку йапалана шыв тӑрӑх сӑнаса пӑхас терӗм. Ҫӳлмеке шыв тултартӑм та сивӗ ҫӗре кӑларса лартрӑм. Ҫылай вӑхӑт иртсен, пӑхатӑп,—шыв шӑнса ларнӑ, пӑрӗ ҫӳлмекрен ҫӳлелле курпунланса мӑкӑрӑлса тухнӑ. Ӑшӑ ҫӗрте пӑрӗ ирӗлсен, шывӗ каллех ӗлӗкхи ҫухлех пулҫӗ.

Паллӑ ӗнтӗ: шыв йе сӗт, шӑннӑ ҫухне сарӑлса пысӑкланса кайнипе, савӑтра вырӑнаҫаймасҭ. (Пӑр шывран ытларах тайнипе тайманнине сӑнаса пӑхӑр. Ӑна пӗлес тесен, шывпа савӑта пӗрле шӑнаҫҫен те, шӑнсан та виҫсе пӑхӑр). Пӑр ирӗлсен, шывӗ савӑтра малтанхи пекех вырнаҫаҭ; тепӗр тӗрлӗ каласан, шывӗ малтанхи ҫухлех вырӑн йышӑнаҭ.

Мĕншĕн ҫӳлмекри пăр сăртланса (курпунланса) ҫӳлелле хăпарнине пĕлесси йулаҭ. Ăна пĕлес тесен, савăтри шыв йепле шăннине сăнаса пăхса тăрас пулаҭ.

Малтанах шыв сивĕнет. Авă шыв ҫинҫе ҫийелте ҫӳп-ҫӳхе пăр пулҫĕ (ăҫта вăл малтан курăнаҭ?) Ăна шăтарса унти шыва тăксан, пăр ҫӳлмек айккисене те хытса ларни лайăх палăрса тăраҭ. Ҫапла ĕнтĕ савăтри шыв пăр миххинҫе тăнă пулаҭ.

Шыв шăннăҫемĕн ҫӳхе пăр ҫӳлелле авăнса мăкăрăла пуҫлаҭ. Ку ĕнтĕ айалти шыв шăнса сарăлнипе ҫийелти пăра ҫӳлелле тĕртсе авăнтарнине пĕлгерет. (Ҫинҫе мăйлă путылккана туллийех шыв тултарса шăнтса пăхăр. Ҫак ĕҫе тунă ҫухне мĕн мĕнтен пулнине сăнаса асăрхаса пырăр).

Ҫаксене пĕтĕмпе курсан, епĕ вара ҫырмасенҫе пăр мĕншĕн путманнине тавҫарса илтĕм. Шыв, шăнса пăр пулсан, сарăлса кайаҭ. Апла пулсан, курка тулли пăр курка тулли шывран ҫăмăлтарах. Урăхла каласан, курка тулли пăртан ирĕлнĕ хыҫҫăн курка тулли шыв тухмасҭ. Пăр, шывран ҫăмăл пирки, йывăҫ пек, шыв ҫинҫе ҫийелте ҫӳрет. (Хĕл варринҫе те, хĕл пĕтнĕ вăхăтра та ҫырмари пăрпа кӳлĕри пăр хулăнăшне виҫсе пĕлĕр).

Ытти шĕвĕ йапаласем, сăмахран, ĕне ҫăвĕ шăннă ҫухне йăлтах урăхла пулаҭ. (Ҫу шăннă ҫухне ун ҫийĕнҫе мĕн пулнине сăнаса пăхăр. Мĕн-ши вăл? Ирĕлнĕ ҫу ăшне ирĕлмен ҫу тăтакĕ пăрахăр. Мĕншĕн вăл путаҭ?)

Ҫапла ĕнтĕ шыв, шăнса пăр пулсан, сарăлса шывран ҫăмăлтарах пулаҭ; ҫавăн пекех сĕт те, мĕншĕн тесен сĕтре шыв нумай. Ытти шĕвĕ йапаласем ку тĕлĕшрен ҫу йевĕрлĕ: вĕсем, сивĕнсен, тăкăсланса кайса, шывран йывăртарах пулаҫҫĕ, ҫавăнпа шывра путаҫҫĕ.

## Мĕншĕн ҫулсем ҫурăла-ҫурăла тăпрана тухаҫҫĕ.

Щăматкунсенҫе, асанне мунҫа хутма тытăнсанах, епир те ăна пулăшма ҫупаттăмăр. Пулăшасси-мĕнĕ ҫукҫĕ ĕнтĕ, кансĕрлени анҫахҫĕ.

Пирĕншĕн мунҫара шыва ăшăтакан ҫулсем пахаҫҫĕ. Мунҫара епир шыва ҫулпа ăшăтнине пăхма йурататтăмăр. Мунҫа алкумĕнҫе тĕрлĕ ҫулсем купаланса выртаҫҫĕç; унта шурриеем те, кăваккисем те, улисем те, тата урăх тĕслисем те пурҫҫĕ; хăшĕ вĕсенҫен алă ҫăмăрĕ пысăкĕшҫĕ, хăшĕ шултăрарахҫĕ. Кăмака çуннă ҫухне асанне çав ҫулсене кăмака çинҫи вĕри ҫул çине пăрахаҫҫĕ. Пăртак тăрсан, пăрахнă ҫулсем вĕриленее кăвар пекех хĕрелсе кайаҫҫĕç.

Унтан асанне хĕрелнĕ ҫулсене клешҫепе иле-иле йерипелен каткари шыва йараҫҫĕ. Акă пирвайхи ҫулне йаҫĕ: çийелти шыв вĕресе çунса кайнă пекех туйăнҫĕ, ҫулĕ вĕлт çăтăнса кайрĕ, пĕтĕм каткари шыв шавласа кĕрлесе кăпăкланса кайрĕ.

Ҫулсене пĕрерĕн-пĕрерĕн йара-йара пыраĭ. Шывĕ темиçе тĕрлĕ лакăртатса кĕрлет. Ҫулсене ҫылай йанăран, шывĕ вĕриленсе катка туллийех пулҫĕ. Акă мунҫа хатĕр те.

Мунҫаран пур те тухсассăн, асанне каткари сивĕннĕ ҫулсене кăлара-кăлара каллех купаласа хураҫҫĕ. Купаланă ҫухне ҫулсем хушшинҫе хăшĕн хĕррисем катăлса та кайаҫҫĕç. Пĕр суртли ҫул темиçе хут каткана лекнĕ хыççăн йăлтах саланса кĕрпекленсе кайаҫҫĕ. Ăна пуртă тăршĕпе çапсанах вăл саланса тусанланса кайаҫҫĕ.

Çак ҫулăн пĕрҫисене лайăхрах тишкĕрсе пăхсассăн, есир вĕсен тĕсĕпе хурми пĕр пек маррине ҫасах курăр. (Миçе тĕрлĕ пĕрҫĕсем? Кашни сурт мĕнлине çырса хурăр). Çак ҫул кранит (вырăсла „гранит“) икенне кайран вара епĕ пĕлтĕм. Унăн пĕрҫисен хушшинҫе акă мĕн-мĕн пур: тăрăхла хĕрлĕ пĕрҫисене хирти шпат (полевой шпат) теççĕ, кĕленҫе йевĕрлĕ пĕрҫисене „кварц“ теççĕ, хура тăрăхлă çўхе пĕрҫисене слўта (слюда) теççĕ. (Мĕнле пĕрҫĕсем кранитра ытларах?)

Хирти шпат пур кранитра та хĕрлĕ тĕслĕ мар, хăш ҫулсенҫе вăл шурă тĕслĕ. Ун пек кранит айакран кăвак ҫул пек курăнаĭ. Кранит вăл пит хатă,

çирĕп ҫул. Епир, аҫапҫасем, ҫулпа ҫула пĕтĕм вăйпа çапа-çапа ватса çӳреме йурататтăмăр. Хăшĕ вĕсенҫен ҫăнахах та ванаҫҫĕç, кранит нихçан та ванмасҫĕ. Тата епир ҫула çĕçĕпе персе вут кăларма йурататтăмăр. Пуринҫен ытла вут кăвакрах ҫакăртарах вутҫулĕ текен ҫултан тухаҫҫĕ. Вăл, çав тери хытăскер, кĕленҫене те ҫăрат. Ана „кварц“ текен ҫулăн расна сурҫĕ теççĕ. Вутҫулăн çӳхе татăкĕсене епир çĕçĕ выранне тытаттăмăр; çав таран вĕсем хытă та, çивĕҫ те.



№ 4. Арман ҫулĕ хатĕрлени. Маçтăр ҫулăн хĕрнĕ йенне шыв сапат.

Пысăк кранитсенҫен пирĕн йенҫе арман ҫулĕсем тăваççĕ. Кунта çемçе ҫул йурамаст: вăл ҫасах йе çийĕнсе пĕтет, йе çурăлса кайат.

Анҫах ҫав тери хытӑ ҫул та, вӗрилетсе шыва йанӑ хыҫҫӑн, ҫасах ванса саланса кайаҭ.

Ҫак йапалана арман хуҫи лайӑх пӗлеҫҫӗ, ҫавӑнпа вӑл, арман ваҫҫи ҫӗнӗ ҫул тӑвас тесен, акӑ мӗнле хытланаҫҫӗ. Тӑвас ҫул ҫумӗнҫе малтан вут хурса ҫунтараҫҫӗ. Ҫул лайӑхрах хӗрсе ҫитсен, унӑн хӗрӳлӗ айккине сивӗ шывпа вӑйлӑ сапаҫҫӗ. Ҫав тӗлтен вара ҫул катӑла-катӑла ӳкеҫҫӗ. Пур йенҫен те ҫула ҫапла хӗрте-хӗрте, унтан шывпа сапа-сапа, ӑна ҫаврашкалӑ тӑваҫҫӗ, айккисене йӗри—тавра тикӗслеҫҫӗ. Ҫапла туса хатӗрлесен, кайран мӑлатукпа шаккаса ҫула тикӗслесе йакатаҫҫӗ.

Арман хуҫин ӗҫӗ йаланах та аванах тухмасҫӗ: хӑш ҫухне ҫулӑн ҫурӑкӗ шалалла та кӗрсе кайӑҫҫӗ; ун пек ҫухне вара ӗҫне пӑрахаҫҫӗ, мӗншӗн тесен ун пек ҫул пурӗпӗр ҫурӑлса кайаҭ.

Ҫакӑн пек йапаласем мӗнтен килнине ӗлӗк епӗ пӗлместӗмҫҫӗ, ун ҫинҫен кайран шкулта тин пӗлтӗм. Ќунта пире ҫак ӗҫсене ӑнлантаракан сӑнав кӑтартрӗҫ. Ӑна кирек кам та тума пултараҭ. Хӑма ҫине икӗ пӑта ҫапас пулаҭ, вӗсен хушшинҫе сӑмавар камхуркки тухмалӑх вырӑн йултӑр. Камхурккана кӑмака умӗнҫе, йе сӑмавар трупи ҫинҫе хӗртсенех, вӑл икӗ пӑта хушшинҫен тухаймасҭ. Икӗ пӑта хушши малтанхи пекех. Ќу сӑнав ӗнтӗ камхуркка сарӑлнине кӑтартаҭ. Сивӗнсен, камхуркка каллех пӑтасен хушшинҫен тухаҭ. (Ќу сӑнава акӑ ҫакӑн пек те туса пӑхӑр: хӑма ҫине хут сарса, хут витӗр икӗ пӑта ҫапӑр, вӗсен хушши каҫа пӳрне тӑрӑшшӗ пултӑр. Унтан пӑтасем ҫумне камхурккана тӗртӗнтерсе, камхуркка тавра кӑранташпа ҫырса ҫаврашка тӑвӑр. Ҫавӑн пекех ҫаврашка хӗртнӗ камхуркка тавра та тӑвӑр. Икӗ ҫаврашкана танлаштарӑр. Мӗн куратӑр?)

Ҫак сӑнавсене ӑнланма йывӑр мар: хӗртсен, пӑхӑр камхкуркка сарӑлса пысӑкланаҭ; сивӗтсен, пӗрӗнсе тӑкӑсланаҭ те, пӗҫикленет.

Ҫулсем те ҫак еретренех ҫурӑлаҫҫӗ пулмалла. Арман хуҫи ҫулӑн хӗрнӗ айккине сивӗ шывпа сап-

сан, сивĕннĕ айкки пĕрĕннипе, ӡул çурăлса каталаť.

Хирсенӡе те, çырмасенӡе те çурăлнă ӡулсем сахал мар. Хăшĕ вĕсенӡен кăшт анӡах çурăлма пуçланă, хăшĕ çурăлса йăлтах саланса кайнă. Çапла ĕнтĕ пĕтĕм çутçанталăкри ӡулсем сивĕпе ăшă ӡеретленнипе саланаççĕ пулмалла.

Çуллахи хĕрӳлĕ кун пĕçерекен ӡул çине сивĕ çумăр çуни ахалех иртмест: çумăр хыççăн ӡул çинӡе куçа курăнми çурăк пулма пултараť. (Мĕншĕн?) Çумăрсем хыççăн хайхи çурăкра шыв йулса, ӡула йерипен-йерипен çисе шăтарса пыра пуçлаť. Кĕркунне çурăкри шыв, темиçе хутӡен шăнса ирĕлнипе, çурăка ӳстерсе тарăнлантарса пыраť. (Мĕншĕн?) Кунта ĕнтĕ пăр пĕренене çуракан савăл йевĕрлех тăрăшаť. Темиçе çул та иртсе кайĕ, тен вуншар çулсем те иртĕç, хайхи ӡул çурăксем тăрăх темиçе пайа саланса кайĕ.

Пĕтĕм ӡулсем хушшинӡе кранит çеç саланса пĕрӡĕленсе кайаť. Çакна пирĕн тăнласа илес пулаť.

Ытти ӡулсен ăшне пăхсассăн, епир акă мĕн куратпăр: вĕсем пĕр тĕрлĕ йапаларан пулнă иккен, вĕсен ăпĕнӡе кранитăнни пек тĕрлĕ пĕрӡĕсем çук. Çавăнпа çав ӡул хĕрнĕ ӡухне пĕтĕмпех пĕр пек сарăлаť. Кранитра темиçе тĕрлĕ пĕрӡĕсем харпăр хăй тĕрлĕ сарăлаççĕ: хирти шпатăн пĕрӡисем пĕр тĕрлĕ сарăлаççĕ, кварц пĕрӡисем урăхларах сарăлаççĕ. Пĕрӡĕсен хушшинӡи çыхăнăç хавшаса кайаť, вара пĕрӡĕсем пĕрпĕринӡен уйăрăлаççĕ. Хайхи кранит саланса кайаť те, унтан хирти шпат, кварц, тата слӳта тухаť. (Слӳтана йĕппе йе çĕçĕпе ӡакаласа, вăл мĕнлине, йепле ӡăмăртанса тăнине сăнаса пăхăр).

## Йепле епир тăвар кăлартăмăр.

Нумайах та пулмасť, пирĕн таврара пĕр вăхăтлăха сутӳ-илӳ ӡарăнса тăӡĕ. Йут çĕртен килекен таварсем килми пулӡĕç. Çитсă, сахăр, тăвар таврашне нийепле

илме пулмарӗ. Хамӑр ҫӗрти ҫынсем вара, аптранӑ йенне, пур йапалана та хӑйсем туса хатӗрле пуҫларӗҫ. Ђасах вӗсем пӗтӗм кирлӗ йапалана хамӑр тӑвассипе килӗштерсе, тӗрлӗ ӗҫе хӑнӑхрӗҫ, тӑварсӑр пурӑнма анђах вӗренеймерӗҫ. Хатӗрлесе хунӑ тӑвар пӗтсессӗн, тӑварсӑр ҫиме тытӑнђӗҫ, анђах тӑварламан апатӑн ним тути те ҫук вӗт.

Акӑ пирӗн кӗпӗрнере пӗр ҫӗрте тӑварлӑ шыв тупнӑ тесе хыпар сарђӗҫ. Кайма пултаракансем пур те пиђӗкесемпе ҫав шыва турттарма кайрӗҫ. Тӑварлӑ шыва йашка пӗҫерес шыва йарса, йашкана тӑварла пуҫларӑмӑр.

Ђасах ҫав шывран типӗ тӑвар тума вӗренђӗҫ. Кӳршӗсем ушкӑнӗ-ушкӑнӗпе каллех тӑвар хыҫҫӑн кайрӗҫ,—хаљ ӗнтӗ тӑвар кӑлармa. Епир те аттепе кайрӑмӑр.



№ 5. Таканара тӑвар шывне вӗретсе тӑвар тӑваҫҫӗ.

Тепӗр кунне тӑвар кӑларакан ҫӗре ҫитрӗмӗр. Вӑл йухса выртакан тарӑн варта иккен. Ун тӑрӑшшӗпе унта-кунта пур ҫӗрте те вут ҫунни курӑнаӗ. Вӗсен тавра етем вӗркет. Ҫав вутсем ҫинђе тимӗр таканасемпе тӑвар типӗтеҫҫӗ. Тӑварлӑ шыв вӗренӗҫемӗн,

тăвар кăларакансем вăхăҫӗ-вăхăҫӗпе ҫиелти ҫӳплӗ кăпăка йывăҫ кӗреҫепе илсе ывăтса, ҫӗнӗрен тăварлă шыв тултарса тăраҫҫӗ. Тăварлă шывне вӗсем витрепе варти тарасаран ăсса пыраҫҫӗ.

Ку тараса кутӗнҫе тăварҫăсем вӗркеҫҫӗ. Вӗсем кăшкăрашса тӗртӗнсе тараса патне пӳкӗнеҫҫӗ; кашни хăй витрине тарасана малтан ҫикесшӗн. Тӗлӗнмелле, кунӗн ҫӗрӗн ăссан та, тарасари шыв пӗртте ҫакмасть, ҫӗрпе танах тăрать.

Ҫак вырăнта пурăнакан ҫынсем калană тăрăх, ӗлӗк кунта тăвар савăҫӗ пулнă. Ҫав савăт тăварлăрах шыв илме тараса ҫавнă, вара ҫав тарăн тарасаран питӗ тăварлă шыв тапса тăнă.

Сăнаса пăхсан, епир те аттепе ҫав ӗҫе тытăнтăмăр. Вутне ҫӗртсе тимӗр такана лартрăмăр та, тăвар шывне тултарса вӗретме пуҫларăмăр. Темиҫе витре шыв вӗресе пӗтрӗ пулӗ,—тăварӗ ҫуках. Кайран вара, шывӗ кăшт ҫеҫ йулсан, тӗпӗнҫе кӗтнӗ тăвар курăнҫӗ. Кăшт вӗретсен, епир алла пӗрремӗш ушкăн тăварне илтӗмӗр. Ҫапла вӗретсе тунă тăвара „вӗретнӗ тăвар“ теҫҫӗ.

Епир ҫапла виҫӗ кун вӗретсе ҫултатаклăха тăвар хатӗрлерӗмӗр.

Кайалла таврăннă ҫухне ҫул тăрăшшӗпе ман пуҫран акă мӗнле шухăш тухмарӗ: ӗлӗк авал кунтан мӗн ҫухлӗ тăвар турттарнă, халӗ мӗн ҫухлӗ турттараҫҫӗ,— ҫапах та пӗте пӗлмест, ӗлӗкхи пекех тухса тăрать. Ҫакă вара пире ҫав тӗлти ҫӗр айӗнҫе питӗ нумай тăвар выртнине кăтартать.

Ҫынсем калană тăрăх, ҫав ҫӗр айӗнҫе тăвар ҫул пек сийӗ-сийӗпе выртать иккен. Ҫав тăвара ҫул пек тăвар теҫҫӗ. Ҫумăр шывӗ, ҫӗр витӗр анса кайса тăвар сийӗ патне ҫитет те, ăна ирӗлтерсе, тăварлă шыв пулса тухать.

Суту-илӳ майа кайсан, пирӗн пата малтан ҫав тăвара турттарса тултарҫӗҫ. Анҫах мӗн тăвар темелли пур ăна: вăл таса мар, пылҫăклă хура-кăвак татăксем кăна пулнă. Хăшӗсем ăна ҫӗр айӗнҫен кăларса

аран-аран ватса вакланӑ тӑвар терӗҫ. Ыттисем ӑна кӳлӗсен тӗпӗнҫен кӑларнӑ тӑвар терӗҫ. Ҫав тӑвар ҫуллахи шӑрӑх вӑхӑтра кӳлӗсен тӗпне хӑй тӗллӗнех лараӗ. Епӗ ҫав тӑвартан таса тӑвар тупас тесе шухӑш тытрӑм.



№ 6. Путылкка тӗпне кӑларса, путылккаран варинкке тунӑ. Айалти хура сийӗ — ватнӑ кӑмрӑксем, вӗсем ҫинҫи — хӑйӑр сийӗ, ҫӳлте — тӑварлӑ шыв.

Таса тӑвар тӑвас тесен малтан тӑварне ирӗлтермелле. Пирвайхи хут йанӑ тӑвар йӑлтах ирӗлсе кайрӗ. Тепӗр хут тӑвара ытларах хурса пӑтратрӑм. Ҫапах та пӗр касси тӑварӗ темӗн ҫухлӗ пӑлхатсан та пӗтӗмпех ирӗлмерӗ. Апла ӗнтӗ шывра тӑвар кирлӗ таран анҫах, шыв ҫӑтса тӑранаҫҫен анҫах ирӗлет, унтан ытлашши ирӗлмест.

Тӑвар шывӗ, епӗ шухӑшланӑ пекех, пӑтранҫӑк, пылҫӑклӑ пулҫӗ. Ӑна тӑрӑлтарса тасатмалла пулҫӗ. (Ҫакӑн пек ҫухне мӗн пулаӗ?) Тӑвар шывӗ ларса тӑрӑлаҫҫен кӗтес килмерӗ. Ҫак аптранӑ вӑхӑтра вара мана атте пулӑшрӗ: вӑл мана тӑвара хӑвӑртрах тасатма ҫӗнӗ май кӑтартрӗ. „Путылккан тӗпне персе шӑтарса путылккаран варинкке ту“, терӗ атте. Епӗ вӑл каланӑ пек турӑм. Тимӗр пӑтана путылкка тӗпӗ ҫине лартрӑм та, ун тӑрӑх мӑлатукпа ҫапса, путылккан тӗпне персе кӑлартӑм. Унтан путылккан мӑйӗнҫи ҫӑварне тутӑр татӑкӗ ҫикрӗм те, унта хӑйӑр хутӑм. Хай ман варинкке хатӗр пулса тӑҫӗ. Ҫав варинкке витӗр тӑвар шывне тултара пуҫларӑм. Варинкке витӗр тап-таса тӑвар шывӗ тухрӗ. Шыв пӑтранҫӑкӗ варинккери хӑйӑр ҫине ларса йулҫӗ. Тутанса пӑхрӑм—шыв ӗлӗкхи пекех ҫара тӑвар, унӑн тӑварлӑхӗ пӗртте кимӗлмен. (Мӗншӗн пӑтранҫӑк хӑйӑр витӗр тухмаӗ, тӑвар тухаӗ?)



№ 7. Тӑварӑн лутка пек татӑкӗ.

Таса тăварлă шыва типĕтсе тăвар тăвасси анҫах йулҫĕ. Ăна тума халĕ ĕнтĕ йывăр мар. Тăвар шывне ҫукун ҫине тултарса, ăна вĕри кăмакана лартрăм. Тепĕр кунне ирхине пăхрăм та, унта шывĕ ҫакса ларнă, ҫукун тĕпне йур пек шап-шурă тăвар ларнă. Апла ĕнтĕ, шывĕ типнĕҫемĕн тăварĕ тĕпне ларса пырать иккен.

Ҫукунта тата акă мĕн куртăм: шывĕ ҫинҫе ҫийелте лутка йевĕрлĕ пĕҫĕк тăвар татăкĕсем ҫӳреҫҫĕ. Шывне пăлхатсанах, вĕсем ҫукун тĕпне лараҫҫĕ. Ҫак татăксем ҫийеле тĕпĕнҫи тăвартан хăпараҫҫĕ пулмалла.

Кунсăрăн пуҫне ҫукунра епĕ тата акă мĕн куртăм: тĕпне ларнă тăвар пĕрҫисем пĕҫĕк купсем пекех. Ку-



№ 8. Тăвар кристалĕсем.

пăн айккисем йап-йака. Ҫавăн пек йапалана вырăсла „кристалл“ теҫҫĕ. Ҫа ла ĕнтĕ шыва типнĕҫемĕн, тăварĕ кристалсем пулса тĕпне ларса пырать. Ҫавăн пек кристала ҫиппе ҫыхса тăварлă шыв ăшĕнҫе ҫакăнтарса тăратсан, ҫав кристал ӳснĕҫемĕн ӳсет. (Пасарта илнĕ тăвар пĕрҫисене сăнаса пăхăр-ха: мĕншĕн кунта куп хурмăлисем курăнмаҫҫĕ?)

## Шыва йепле ĕçлеттерме пулаҭ.

Пирĕн шыва пиҫĕкепе турттараҫҫĕç. .Епĕ пиҫĕкерен витрене шыв йухтарса тултарнине пăхса тăма йурататтăм. Пиҫĕке пăккине пăрса кăларсанах, пиҫĕкерен шыв сирпĕнсе тухаҭ; вăл, вирлĕ ҫупнипе, витре урлă та каçса кайаҭ, алăри витрене те перс кăларас пек.

Пиҫĕкери шыв ҫакнăçемĕн шывҫуппи кĕскелсе пыраҭ, шывĕ йериперех йуха пуçлаҭ. Кайран шыв пиҫĕке тăрăх йуха пуçлаҭ. Ку ĕнтĕ шыв пĕтсе килнине кăтартаҭ.

Çапла ĕнтĕ шыв вирлĕхĕ тăрăх, унăн ҫуппи тăрăх, пиҫĕкере мĕн ҫухлĕ шыв пуррине пĕлме пулаҭ.

Унтан епĕ пирĕн çĕрте ÿсекен кĕпçерен шыв йухтарма вĕрентĕм. Кĕпçе сыпăкĕнҫен кăшт çÿлерех йĕппе тирсе шăтăксем тăваттăм (вĕсене епĕ айлă-çилĕ



№ 9 Шыв тĕрлĕ шăтăкран тĕрлĕ йухаҭ.



№ 10. Вăйăллă шыварманĕ.

шăтарса тăваттăм). Кĕпçене шыв тултараттăм. (Кăна кивĕ витререн те тума пулаҭ; анҫах кăна тунă ҫухне пысăк шăтăксене питĕрсе, витрере пĕҫик шăтăксем шăтарас пулаҭ, вара витререн çинçе шывҫуппи айакка ҫупаҭ).

Шăтăкĕ айаларах пулсан, шывĕ вирлĕрех те айаккарах та ҫупаҭ. (Шыв пур шăтăкран та пĕр пек йухтăр тесен шăтăкĕсене хăш вырăнта тумалла?)

Пĕрре епĕ пысăк мар пушă пиҫĕке тупрăм. Епĕ ăна шывпа тултара-тултара, пиҫĕке шăтăкĕнҫен шыв йепле ҫупса йухнине пăхса тăраттăм.

Пĕр ҫын мана ҫав шыва шыварман урапи ҫине йама канаш паҫĕ. Ҫавăн пек урапана кирек кам та хăйех тума пултараҭ. Ăна акă мĕнле тăваҫҫĕ: икĕ ҫӳхе хăма йе хăйă илсе, кашни хăййине варринҫе ҫуррине ҫитеҫҫен картлаҫҫĕ, унтан пĕр хăййăн картне тепĕр хăййăн картне кӳртсе лартаҫҫĕ. Вара урапа хатĕр пулса тăраҭ.

Епĕ крана уҫрăм та, крантан шыва урапа ҫине йатăм. Вара урапа ҫаврăна пуҫларĕ: малтан вăл хăвăрт ҫаврăнҫĕ, унтан йериперех ҫаврăна пуҫларĕ.

Капла хытланнă ҫухне епĕ акă мĕн сисрĕм: пиҫĕкере шыв туллирех пулсассăн, айалти шыва ҫӳлти шыв хытăрах пусаҭ, ҫавăнпа шыв тулли ҫухне пиҫĕкерен шыв вирлĕрех ҫупаҭ; тепĕр йенҫен—айалти шыв пиҫĕке тĕпне те, унăн айккисене те хытă пусаҭ. (Ку ҫӳлти шыв айалти шыва пуснине акă мĕнпе танлаштарăр: аҫапҫасем вăйăра пĕр-пĕринҫен купа тунă ҫухне хăшне вĕсенҫен йывăртарах?)

Ку выҫамалли арман Пăла шывĕ ҫинҫе ларакан арман пекех-ҫке! Унта арманҫă арманне авăрттарма тăватă аршăн ҫӳллĕшĕ пĕве турĕ. Пĕвенĕ ҫухне малтăн вăл, ҫырман икĕ айккине икĕ пура лартса, ҫав пурасене ҫуллă тăпрапа таптаса тултарҫĕ. Икĕ пура хушшине сăвайсем ҫапса лартса, ҫăвайсем хушшине хăмапа пĕвесе хуҫĕ. Вара пĕве йерипен-йерипен висĕ кунтан тулса ҫитрĕ, шывĕ хăш тĕлте, ҫырансенҫен тухса, улăхсене, айлăмсене сарăлҫĕ.

Кирлĕ ҫухне пĕвери шыва канав тăрăх арманăн шывурапи ҫине йараҫҫĕ. Шыв вăйĕпелен, урапа ҫаврăнаҭ, вара арманĕ те ĕҫле пуҫлаҭ.

Шывăн вăйĕ сахал мар тăр, мĕншĕн тесен вăл урапапа вала ҫаварăҭ, вăл тăрăх йывăр ҫула та ҫавăраҭ.

Ђулĕ, хытӑ ҫаврӑннипе, куҫ умĕнђе урайне йанӑ вулђук пекех вĕлтлетет. Пĕвере шыв нумайрах ђухне арман вӑйлӑрах аварат̆ (мĕншĕн?)



№ 11. Шыв-арман урапи (ку урапана шыв айалтан пырса ҫавӑрат̆.)

Пирĕн патӑрта тата арман пĕђикрех шыв ҫинђе те пур, унта урапа ҫине шыв ҫўлтен йухат̆. Урапи тавра йешђĕксем тунӑ, пĕр йенђи йешђĕксене шыв тулсан, ҫав йенни йывӑрланса айалалла ҫаврӑнса анат̆. Айалта йешђĕксенђен шыв тӑкӑнат̆, пушӑ йешђĕксем вара ҫўлелле ҫаврӑнса улӑхаҫҫĕ. Унта каллех, йешђĕксене шыв тулнипе, вĕсем айалалла ҫаврӑнса анаҫҫĕ. Ҫапла вара урапа пĕрмайах ҫаврӑнса тӑрат̆. Епир пусӑран шыв кӑларнӑ ђухне алӑпа урапа каштине айалалла пусатпӑр, ҫавӑн пекех канавран йухакан шыв та урапана айалалла пусат̆.



№12. Ку урапана шыв ҫўлтен йўхса пырса ҫавӑрат̆.

Пăкки вырăнне атте пиҫĕке ваҫҫи пăхăр кран илсе, ăна пиҫĕкене пăрса кӳртсе лартрĕ. Шыва крантан тултарма авантарах: айалалла йухнипе, шывĕ пĕрте тăкăнмасŤ.

Крана пăхса аппаланнă ҫухне манăн кран ҫăварĕпе ҫӳлелле пулҫĕ. Крана уҫсан, шыв, ҫӳлелле ҫупса, пĕкĕ пекех авăнса ана пуҫларĕ. Апла ĕнтĕ пиҫĕке шăтăкĕ ăҫталла пăхаŤ, шывĕ те ҫав йеннеллех персе тухаŤ иккен. Ку ĕнтĕ фонтан йевĕрлех пулҫĕ.

Фонтан тума епир сăмавара лайăх майлама пултаратпăр. Ăна тума реҫинăлă кĕпҫе кирлĕ. Ҫав кĕпҫене сăмавар кранĕ ҫине тăхăнтараҫҫĕ те, хывăнса ӳкесрен, ҫиппе ҫыхса хураҫҫĕ. Кĕпҫен тепĕр вĕҫне хутран тунă варинкке ăшне кӳртеҫҫĕ. Варинккене ҫӳлелле туса крана уҫсанах, фонтан ҫӳлелле пĕрĕхет. Варинккене айалалла антарнăҫемĕн фонтанĕ вăйлăрах пĕрĕхет. (Мĕншĕн?)



№ 13. Фонтан.

Сăмаварти шыв ҫакнăҫемĕн фонтанĕ те ҫакса пыраŤ, мĕншĕн тесен шыв вăйĕ (пусни) ҫакса пыраŤ.

Апла ĕнтĕ фонтанран персе тухакан шыв сăмаварти шыв ҫӳллийех пĕрĕхесшĕн. (Анҫах вăл ҫав шыв ҫӳлĕшне сиксе ҫитейрет-и? Мĕншĕн)

Ҫапла ĕнтĕ шыв йе ҫӳлтен йухса хăйĕн йывăрăшне пусса урапана ҫаврăраŤ, йе ҫийелти пысăк шыв пуснипе ĕҫлет: ун пек ҫухне персе тухакан шыв шывурапине персе ҫавăраŤ.

Ҫӳле ҫĕкленĕ шыв пирĕншĕн ахалех ĕҫлекен пулса тăраŤ.

## Путылккана шыв тултарса епӗ мӗн пӗлтӗм.

Пӗҫӗкҫӗ ҫухне епӗ путылккана шыв тултара-тултара тӑкма йурататтӑм. Шыв катки патӗнҫе сехеҫӗ-сехеҫӗпе аппаланаттӑм. Малтан мана пушӑ кӗленҫе (савӑт) шывра путманни тӗлӗнтереҫҫӗ. Кӗленҫе татӑкӗ ҫасах шыв тӗпне кайаҭ. Путылккана шыва путарнӑ ҫухне вӑл путмасҭ, ӑна шыв кайалла тӗртсе кӑларнӑ пек туйӑнаҭ. Ӑна айалалла (тӗпнелле) антарнӑҫемӗн, шыв хытӑрах тӗртнӗ пек туйӑнаҭ.

Халӗ ӗнтӗ епӗ путылкка мӗншӗн путманнине пӗлетӗп. Катка тӗпӗнҫи шыв ҫӳлти шыв пуснипе путылккана вӑйлӑрах тӗртет. Пушӑ путылкка ҫӑмӑлтарах, ҫавӑнпа вӑл шыв тӗртнине ҫӗнтереймест. Шыв тултарсанах, путылкка хӑйех тӗпне путса анаҭ, мӗншӗн тесен халь ӗнтӗ путылкка айалтан тӗртекен шыв вӑйӗнҫен йывӑртарах. (Шыв айӗнҫе тытнӑ ҫух мӗншӗн ҫул ҫӑмӑлтарах пек туйӑнаҭ?)

Кунта ӗнтӗ интереслӑ сӑнав тума пулаҭ: епир путылккана пӗр путмасӑр, пӗр хӑпармасӑр шыв ӑшӗнҫе тӑмалла тума пултаратпӑр. Ӑна тӑвас тесен, путылккана шыв кирлӗ таран тултарса пӑкӑпа (прупкӑпа) питӗреҫҫӗ те, ӑна шыва йарса, путнипе путманнине сӑнаҫҫӗ. Шывне ҫакарса, йе кирлӗ таран пӑртаккӑн-пӑртаккӑн тултарса пырсан, путылкка шыв ӑшӗнҫе путмасӑр выртаҭ. Ҫапла хытланса епир путылккана шыв ӑшӗнҫе айаларах та, ҫӳлерех те тытма пултаратпӑр. Халӗ ӗнтӗ путылкка шывран ҫӑмӑлтарах та мар, йывӑртарах та мар.



№ 14. Сывлӑш хӑварса шыв тултарнӑ путылкка хӑпармасҭ те путмасҭ те.

Тепӗр тӗрлӗ каласан, айалтан тӗртекен шыв вӑйӗпе путылкка йывӑрӑшӗ (вӑйӗ) пӗр пекех. Ку ӗнтӗ акӑ

мĕн йевĕрлĕ пулаҭ: икĕ пĕр пек (пĕр тан) вăйлă аҫа пĕр-пĕрне тапăннă ҫухне пĕрне-пĕри вырăнтан тапратараймасăр тăраççĕ; çавăн пекех айалтан тĕртекен шыв вăйĕпе путылкка вăйĕ те пĕр-пĕрне парăнмасăр тăраççĕ. (Мĕншĕн йывăç шывра путмасҭ? Мĕншĕн етем путаҭ? Мĕншĕн епир ишме вĕреннĕ ҫухне хăма çине, йе йывăç татăкĕ çине кăкăрпа выртатпăр?)

Путылккана хăвăртрах тултарас тесе, ăна çăварĕпех шыв айне путаратăн. Ха, мĕн ку? Путылккана шыв кĕресшĕн мар. Путылккаран куçа курăнман йапала шыва хирĕç тухса ăна путылккана кĕме ҫарнă пек туйăнаҭ. Ку ĕнтĕ путылккари сывлăш шыва путылккана кĕме ҫараҭ. Вăл вĕтĕ хăмпăсем пулса путылккаран сике-сике тухаҭ. Сывлăш тухнăçемĕн унăн вырăнне шыв пакăлт-пакăлт! туса кĕрет.

Путылккана тайăлтарса, шыв пĕр хĕрринҫен кĕмелле тытса тăрсан, путылккана шыв лăпкăн йухса кĕрет, мѐншĕн тесен хаҫ ĕнтĕ путылккари сывлăша тухма та уçă вырăн йулаҭ. Путылкка çăварĕнҫе тĕл пулакан шывпа сывлăш, урамра тĕл пулакан йамшăксем пек, пĕр-пĕрне çаклатмасăр иртсе кайаççĕ: шывĕ пĕр хĕрринҫен кĕрет, сывлăшĕ тепĕр хĕрринҫен тухаҭ.

Шыв тултарнă путылккана çăвăрĕпе айалалла тытсан, путылккари шыв пакăлт-пакăлт! сиксе тухаҭ. Ăна хирĕç каскăн-каскăн сывлăш кĕрсе хăмпăланса, çӳлелле путылкка тĕпнелле хăпараҭ. Шыв мĕн ҫухлĕ тухаҭ, çавăн ҫухлĕ унта сывлăш кĕрет. Апла ĕнтĕ шывпа сывлăш пĕр-пĕринпе вырăн улăштарнă пек пулаҭ; савăта пĕр йапала кĕрсен, савăтри йапалан унтан тухас пулаҭ. (Шыв лăпкăн йухса тухтăр тесен путылккана мĕнле тытмалла?)

Çапла ĕнтĕ шыва йе краççина йе çăва савăтран йухтарса кăларнăçемĕн унта пӳртри сывлăш кĕрсе пыраҭ. Сывлăш пӳрте ăçтан килсе кĕрет-ши? Урамран, хиртен килсе кĕрет. Сывлăш пур çĕрте те пур: çĕр çинҫе те, шыв çинҫе те. Епир сывлăшра ҫӳхенетпĕр, сывлăшра ăна сирĕлтерсе (сирсе) çӳретпĕр.

Çапах та сывлăш пуррине епир сисместпĕр, мĕншĕн тесен вăл куçа курăнман тĕссĕр кас. (Мĕншĕн пире çиле хирĕç пыма йывăртарах, çиле май—çăмăлтарах? Кĕнекене сĕтел çинҫе выртакан хут йеннелле сулласа пăхăр-ха. Мĕншĕн хут сĕтел çинҫен ӳкрĕ?)

Сывлăш пĕртте шухăшламан-кĕтмен вырăнсенҫе те пур. Куркари ҫей çине сахăр татăкĕ йарсан, унтан ҫасах вĕтĕ хăмпăсем çийелелле хăпараççĕ. Ку ĕнтĕ сахăрăн кристалĕсем хушшинҫе йулнă сывлăш хăпарат.

Ерех путылккине сивĕ шыв тултарса ăна ăшă çĕрте пăртак тытсан, путылкка ăшĕнҫе тĕпĕнҫе те, айккисенҫе те вĕтĕ хăмпăсем çуталса лараççĕ. Ку та сывлăш. Аçтан килҫĕ-ши вăл? Тен, вăл пӳртри сывлăшах... Анҫах вăл çăмăл йапала; çăмăлскер, шывра путаймасть. Вĕтĕ хăмписем кĕленҫе айккинҫен хăпăнса çийелелле хăпара-хăпара тухса шăтаççĕ. Ку ĕнтĕ шывран çывлăш тухнине пĕлтерет. Шыва йанă сахăр ирĕлсе йепле куçа курăнми пулать, çавăн пекех сывлăш та шыва сарăлать. Шыва ăшăтсассăн, шыври сывлăш шывран уйăрăлса тухса, кĕленҫе айккисене хăмпăланса ларать. Ăшă шыва тула кăларса сивĕтсен, сывлăш хăмписем пĕтеççĕ: сывлăш каллех шыва сарăлса кайнă пулать. Апла ĕнтĕ сивĕ шывра сывлăш ытларах иккен. (Уçнă сăмаварта шыв ăшăннине сăнаса пăхăр. Шывран тухакан кас (сывлăш) хăмписем мĕнлине лайăхрах тинкерсе пăхăр). Вĕрекен шывра сывлăш çуккине пĕлсе çитнĕ ĕнтĕ.

Путылккапа аппаланса хытланнăçемĕн епĕ сывлăш çинҫен ытларан ытла интереслă йапаласем пĕлсе пытăм. Çапла, путылккана çăварĕпе айалалла шыва путарса, епĕ шыва нийепле те ăсаймарăм. (Мĕншĕн шывпа сывлăш пĕр-пĕринпе ылмашса пĕрне-пĕри вырăн памаççĕ?)

Пĕрре епĕ çапла путылккана тарăнрах путарса, шыв айĕнҫе унăн çăварне пӳрнепе хупласа ăна шывран туртса кăлартăм. Мĕн пулҫĕ вара? Путылкка çăварне пĕр вершука йахăн шыв кĕнĕ. Анҫах путтылккари сывлăш пĕрте тухмарĕ.

Путылккана ҫапла тарӑнтарах путарнӑҫемӗн унта шыв ытларах кӗрсе пырать. Ку оппӑтран ӗнтӗ сывлӑша хӗссе шыва вырӑн пани палӑрсах тӑрать. Кунта епир, путылккана алӑпа пусса, сывлӑша хӗсӗнтеретпӗр.

Ҭӑнахах та, путылккана путарас тесен, ӑна алӑпа пусас пулать. Епир пуснине хирӗҫ шыв хӑй йенҭен путылккана та тӗртет, унӑн ҫӑварӗнҭи сывлӑша та хӗсет. Шыв хӗснипе, путылккари сывлӑш, тӑвӑрланса, вырӑн сахалтарах йышӑна пуҫлать. Вара сывлӑш ран пушаннӑ вырӑна шыв кӗрсе йышӑнать. Паллӑ ӗнтӗ-шыв сывлӑша мӗн ҭухлӗ ытларах хӗсет, тепӗр тӗрлӗ каласан, мӗн ҭухлӗ путылккана тарӑнтарах путаратпӑр,—ҫавӑн ҭухлӗ унта шыв ытларах кӗрет.



№ 15. Пушӑ путылккана шыв хӑпарать.

Халь ӗнтӗ путылкка ҫӑварне шыв айӗнҭе пӳрнепе питӗрсе путылккана туртса кӑларар та, путылккана ҫӑварӗпе ҫӳлелле лартса, ун ҫӑварне кӑшт уҫар. Вара путылккари сывлӑш шыва сирпӗтсе пӑш! туса тухать. Ку ӗнтӗ хӗсӗннӗ сывлӑш; хӗсӗнӳ ҭарӑнсан вӑл каллех сарӑлса кайать. Кунсӑрӑн пуҫне тата вӑл, сарӑласшӗн пулса, савӑтӑн айккисене те сиктерсе кӑларма пултарать.

Пӗрре ман алла сахҳарин тытнӑ кӗленҭе трупи лекрӗ. Епӗ ӑна пистолет вырӑнне майларӑм. Трупа вӗҫӗпе паранкӑ ҭӗллине тӗртсе шӑтартӑм та, трупа ӑшӗнҭе паранкӑ пулӗ пек йулҭӗ. Тепӗр вӗҫӗпе те ҫаплах туса, шумпӑлпа паранкӑ пуљҭине шалалла тӗрте пуҫларӑм. Тӗртсе пынӑҫемӗн, тепӗр вӗҫӗнҭи пулӗ, сывлӑш пуснипе, хӑй тӗллӗнех сиксе тухрӗ.

Пулӗпе питӗрнӗ трупа вӗҫне сӗтел ҫумне пусса тытса, тепӗр вӗҫӗнҭен паранкӑ пуљҭине шумпӑлпа трукках тӗртсе кӗртсе шумпӑлне алӑран йарсан, пуљли те шумпӑлӗ те кайалла сиксе тухаҫҫӗ.

Ҫапла ӗнтӗ хӗсӗннӗ сывлӑш пӑрса хунӑ прушинӑ йеверлӗ: пӑрнӑ прушинӑ, сӳтӗнесшӗн туртӑнса, ҫумӗнђи йапаласене хайӑраҭ. Сывлӑш та ҫавӑн пекех: хӗссен, кайалла тапаҭ. (Шыв туллийех тултарнӑ путылкка ӑщне пӑккине пусса кӳртсе, шыв хӗсӗннипе хӗсӗнменнине сӑнаса пӑхӑр).




№ 16. Кӗленђе трупаран пистолет тунӑ.

## Мӗншӗн мађђа ҫумӗнђе урайӗнђинђен ӑшӑрах.

Кирлӗ ђухне пӳртре ӑшша ӑҫта шырамалла? Кӑмака ҫинђе. Хӗллехи сивӗ кун урамран шӑнса таврӑнсан, кӑмака ҫинђе анђах ӑшӑнса киленетӗн. Унта вӗри кирпӗҫсем кӳђесе кайнӑ ҫан-ҫурӑма ђасах ӑшӑтаҫҫӗ. Анђах, выртсан-выртсан, кӑмака ҫинђи ӑшша тӳсме хал ҫук пирки, унтан айала анас килет. Халђ ӗнтӗ урайӗнђе те аван: вӗри хутнӑ кӑмака пӳрте, пӳртри сывлӑша аван ӑшӑтнӑ, урайӗнђе ларакан кроват ҫинђе те ҫывӑрма пулаҭ.

Вӑрӑм ҫӗр иртсе кайнӑ ҫӗре ирпе пӳртре ӑшӑ пӗрте йулмасҭ, кӑмаки те сивӗнсе лараҭ. Анҭах епӗ йаланах та ӑшӑ ӑҫта тӑнине пӗлетӗп. Вӑл маҭҭа айӗнҭе, сентре ҫинҭе, асатте йаланах ҫывӑракан ҫӗрте. Ҫутӑлас умӗн епӗ ҫавӑнта куҫса выртайрап, унта ӑшӑнса каллех ҫывӑрса кайатӑп.

Ирхине алӑка уҫнӑ ҭухне алкумӗнҭи сивӗ сывлӑш, купаланса кӗрсе, пӗтӗм урай тӑрӑх сарӑлса кайаҭ. Хаљ ӗнтӗ ман кроват та сивӗре. Сентре ҫинҭе ӗлӗкхи пекех ӑшӑ: унта сивӗ улӑхаймасҭ. (Алӑ айӗнҭе кратусник пулсан, сентре ҫинҭе, тата урайӗнҭе мӗн ҭухлӗ ӑшшине виҫсе пӗлӗр).

Мӗншӗн сивӗ сывлӑш урайӗнҭе тӑраҭ-ши, ӑшӑ сывлӑш—маҭҭа ҫумӗнҭе? Ку ӗнтӗ сивӗ сывлӑш ӑшӑ сывлӑшран йывӑртарах пулнинҭен килет пулмалла; йепле йӗтӗн ҫӑвӗ шыв ҫинҭе ҫийелте тӑраҭ,—ҫавӑн пекех ӑшӑ сывлӑш та сивӗ сывлӑш ҫинҭе тӑнӑ пек пулаҭ.

Малтанах епӗ сивӗ сывлӑш мӗншӗн ӑшӑ сывлӑшран йывӑртараххине ӑнланаймастӑмҭҭӗ. Унтан епӗ ӑна ӑнлантӑм. Ак мӗн пирки. Пӗрре пирӗн килтисем тарасаран пӑр пек сивӗ шыв илсе килҭӗҫ. Епӗ, хам йӑла майӗпе, путылккапа шыв патне. Путылкки кӑмака ҫывӑхӗнҭе ӑшӑра лараҭҭӗ. Епӗ ӑна, ҫӑварӗпе айалалла туса, шыва путартӑм. Туртса кӑларнӑ ҭухне унӑн ҫӑварне ҭылай шыв кӗнине асӑрхарӑм. Мӗнле-ха ку апла? Ӗлӗк, епӗ путылккапа аппаланнӑ ҭухне, путылккари сывлӑш тухаҭҭен унта шыв кӗреймесҭӗ. Епӗ шыва тӑкрӑм та путылккана каллех ҫӑварӗпе айалалла путартӑм. Хаљ ӗнтӗ путылккана шыв кӗмерӗ.

Ӑшӑ савӑта ҫӑварӗпе айалалла тытса шыва путарнӑ тухне, унта шыв кӗрет. Савӑт мӗн ҭухлӗ вӗри (ӑна кӑмака умӗнҭе йе сӑмавар ҫинҭе ӑшӑтӑр), ҫавӑн ҭухлӗ унта шыв ытларах кӗрет; путылккине тарӑн путармасӑр ҫӑварне ҫеҫ ҭиксен те йураҭ. Путылкка сивӗнсен, шыв унӑн ҫӑварне хӑй тӗллӗнех хӑпараҭ.

Ку йапала мӗнтен килет-ши? Акӑ мӗнтен: путылккари ӑшӑ сывлӑш сивӗнсен, вӑл, тӑкӑсланса, вырӑн

сахалтарах йышӑнаҭ. (Ҫакна хирӗҫле оппӑт туса пӑхӑр: ӑшӑтман путылккана ҫӑварӗпе айалалла тытса, ӑшӑ шыва путарса пӑхӑр. Мӗн куртӑр? Мӗншӗн вӑл ҫапла?)

Паллӑ: сывлӑш сивӗрен тӑкӑсланаҭ, ӑшӑран—сарӑлса ытларах вырӑн йышӑнма тӑрӑшаҭ. Ку тӗлӗшрен сывлӑш шыв йевӗрлӗ, шыв йевӗрлӗ ҫеҫ те мар, сӗтпе краҫҫин йевӗрлӗ, пӑхӑрпа кранит йевӗрлӗ.

Апла ӗнтӗ сивӗрен те ӑшӑран та, тепӗр тӗрлӗ каласан, температурӑ улшӑннинҙен йапаласен пысӑкӗш улшӑнаҭ: ӑшӑннӑ ҙухне сарӑлаҭ, сивӗннӗ ҙухне тӑкӑсланса пӗҙӗкленет, анҙах пур те пӗр пек мар. (Пушӑ путылккана (пушшине-и?) вӗрекен шывра ӑшӑтӑр та, кӑларса хӑвӑртрах унӑн ҫӑварне пӳртри шыв ӑшне ҙикӗр. Путылкка сивӗнсен, унта мӗн ҙухлӗ шыв кӗнине асӑрхӑр. Унтан путылккана вӗрекен шывпа туллийех тултарса сивӗтӗр. Пӗр пек сивӗтнӗ ҙухне мӗн питрех тӑкӑсланса пӗҙӗкленнине танлаштарса асӑрхӑр: шыв-и, сывлӑш-и? Кӗленҙе сивӗннӗ ҙухне путылкка ӑшӗ пӗҙӗкленмерӗ-и? Мӗскер питрех тӑкӑсланаҭ, питрех сарӑлаҭ: шыв-и, кӗленҙе-и? Мӗнтен вӑл паллӑ?)

Ҫапла ӗнтӗ сывлӑш пӗр ҫӗртех нумайтарах та сахалтарах та пулма пултараҭ: сивӗ ҫӗрте, тӑкӑсланнипе, ытларах пулаҭ, ӑшӑ ҫӗрте—сарӑлнипе, сахалтарах. Ӑшӑ сывлӑша кӑпӑш йурпа танлаштарма пулаҭ, сивӗ сывлӑша—пусӑрӑнса тӑкӑсланнӑ йурпа. Ҫак икӗ тӗрлӗ йура кашнине пӗр пысӑкӗш илсен, пусӑрӑннӑ йур кӑпӑш йуртан йывӑртараххине ҙасах пӗлме пулаҭ. Халҙ ӗнтӗ пӳрте кӗрекен тулти сывлӑш мӗншӗн пӳртри сывлӑшпа хутшӑнманни паллӑ: сивӗ сывлӑш, йывӑрскер, урайӗнҙе сарӑлса выртаҭ; ӑшӑ сывлӑш, ҫӑмӑлтарахскер, кӑмака таврашӗнҙен ҫӳлелле хӑпарса, маҙҙа айӗнҙе сарӑлса выртаҭ. (Хӗллехи вӑхӑтра уҫнӑ фортӑҙкӑ витӗр пӳрти сывлӑш йепле тухнине, тулти сывлӑш йепле кӗнине сӑнаса пӑхӑр. Кӑмака ҫуннӑ ҙухне пӳртри сывлӑш мӗншӗн кӑмакаюналла туртӑнаҭ?)

# Тимĕрçĕ лаççинҫе.

Кирек хăçан та, кўршĕн тимĕрçĕ лаççи патĕнҫен иртсе кайнă ҫухне, унтан мăлатукпа ухлаттарни, йе вуҫах кĕрлени илтĕнет. Унта шакканине илтсен, çул майĕпе ун алăкĕ патĕнҫе ҫарăнса, унта мĕн-мĕн тунине итлесех килет, çав тэри интереслă тимĕрçĕ ĕçлени.

Авă, тимĕрçĕ кăшăл пек çаврака тимĕрĕн вĕçне вĕрекен вуҫаха хурса, ăна кăмрăкпа витрĕ. Унăн йулташĕ вĕркĕҫпе вĕртере пуçларĕ.



№ 17. Тимĕрçĕ лаççинҫе. Сылтăмри çын пĕр вĕркĕҫĕн çўлти хăмине айалалла пусаť, тепĕринне çўлелле çĕклет.

Тимĕрçĕ вĕркĕҫне икĕ сăран михĕрен тунă. Вĕсене айалтан та çийелтен те хăмасем çумне çĕлесе хунă. Айалти хăмисене, вĕркĕҫне лартма май пултăр тесе,

йывăç çине майлаштарса хунă. Кашни çиелти хăмара пĕҫик ҫӳреҫе пур, вăл сăрантан тунă клаппăнпа питĕрĕнсе тăрат.

Тимĕрçĕ йулташĕ пĕр вĕркĕҫĕн çӳлти хăмине айалалла пусат, тепĕринне çӳлелле çĕклет.

Пĕр сăранĕ картланса пусăрăнат, çав вăхăтрах тепĕр сăранĕ тăсăлат; унтан пирвайхи тăсăлат, тепĕри пусăрăнат

Çав вăхăтрах сăранăн пĕр ҫӳреҫи уçăлат те хупăпăнат, унтан тепĕр ҫӳреҫи уçăлса хупăнат; темĕнскер вĕсене уçса хупат. Çак йапалана пирвайхи хут курсан, епĕ куçа курăнми вăй ĕçлениҫен тĕлĕнсе хытсах кайрăм. Куç умĕҫе хĕлхемсем мăкăрланса вĕлтлете пуçласан анҫах епĕ ăçта тăнине аса илтĕм. Мĕнскер ку? .. çтан-ши çак шавласа вĕрекен çил; вăл тăвăллă тăман çилĕ пекех.

Кайран, пушă вăхăтра, тимĕрçĕ мана çак çил ăçтан пулнине каласа кăтартрĕ. Кашни сăран михĕрен вуҫах айне айалтан тимĕр трупа тухат иккен. Вуҫах айĕнҫе икĕ трупа пĕрле хутшăнса пĕр трупа пулаççĕ. Кунтан вара епĕ сывлăш вуҫаха ăçтан вĕрнине ҫасах мантавçарса илтĕм: сăран миххе хăмапа пуснă ҫухне михĕри сывлăш трупа тăрăх вуҫаха тухса кăмрăка вĕрсе çунтарат иккен. Кăмакапа йе сăмавара ҫĕртсе йанă ҫухне епир те çаплах хытланатпăр: малтан сывлăшпа нумайтарах туртса илсе хамăр ӳпкесене тултаратпăр, унтан сывлăшпа çăвар урлă çунакан вут çине вĕретпĕр; çапла тунă ҫухне пирĕн ăшри сывлăш ӳпкесем пусăрăнса хĕсĕннипе тухат.

Тимĕрçĕри вĕркĕҫ вĕрнипе епир вĕрни пĕр йевĕрлĕ, анҫах ку ĕçре у рămми те пур. Пире сывлăш йе çăвар йе сăмса витĕр кĕрет, туххассине те çăвартанах тухат, çавăнпа епир вĕрнĕ ҫухне татăккăн-татăккăн вĕретпĕр. Тимĕрçĕ вуҫаххинҫе кăмрăка пĕрмайах вĕрсе ҫĕртеççĕ. Апла пулсан, тимĕрçĕ вĕркĕҫне сывлăш ҫӳреҫе пеккисенҫен кĕрет пулмалла.

Лайăхрах тинкерсе пăхсан епĕ акă мĕн куртăм: сăран тăсăлнă ҫухне клаппăн уçăлат, сăран пусăрăннă ҫухне клаппăн хупăнат. Паллă ĕнтĕ, сывлăш сăран

миххе ҫӳреҫе уҫӑлнӑ ҫухне кӗрет. Ҫӑнах та, уҫӑлнӑ ҫӳреҫе патне ҫунакан хӑйӑ илсе пырсан, сывлӑша ӑҫталла туртни курӑнсах тӑраҭ.

Анҫах акӑ мӗнтен тӗлӗнмелле: йепле ҫӳреҫисем кирлӗ вӑхӑтра уҫӑлаҫҫӗ те хупӑнаҫҫӗ-ши? Вӗркӗҫӗн тулашӗнҫе те ӑшӗнҫе те клаппӑнсене тӗртекен, туртакан йапала тавраш͏ӗ ҫук. Вӗсене ҫав сывлӑшах уҫса хупаҭ пулмалла. Ҫӑнахах та, миххе пуснӑ ҫухне, михӗри сывлӑш, хӗсӗнсе, сахал вырӑн йышӑнаҭ. Пусӑрӑннӑ сывлӑш, пур йенне те сарӑласшӑн пулса, вӗркӗҫӗн стенисене тапаҭ, ҫавӑн ҫухне клаппӑна та хӑма ҫумне хӗссе питӗрет. Михӗ тӑсӑлнӑ ҫухне михӗри сывлӑш, сахалскер (сывлӑш михӗрен трупа тӑрӑх вуҫах айне тухнӑ), сайра пулаҭ. Вара тулти сывлӑш шалтинҫен вӑйлӑрах пусаҭ, ҫавӑнпа клаппӑн шалалла уҫӑлаҭ. Уҫӑлнӑ ҫӳреҫерен тулти сывлӑш, шалтинҫен тӑкӑслӑрахсер, михӗ ӑшне кӗрет.

Ҫапла ӗнтӗ пусӑрӑннӑ сывлӑш ҫеҫ мар, ирӗкре тӑракан тулти сывлӑш та йапаласем ҫине пусаҭ. Анҫах епир ӑна сисместпӗр, мӗншӗн тесен ҫӗр ҫинҫе пур ҫӗрте те пушӑ вырӑнсенҫе сывлӑш пур. Пӗр-пӗр йапала (савӑт) ӑшӗнҫен сывлӑша туртса илсен, ун ҫине ҫутҫанталӑкри сывлӑш пусни ҫасах палӑраҭ. Ҫапла, ҫӑварпа йанаха стаканпа хупласа стаканри сывлӑша туртса илсен, стакан ӳкмест, хӑй тӗллӗнех тытӑнса тӑраҭ. Ку ҫеҫ мар-ха: стакана илес тесен, ӑна вӑйпа туртас пулаҭ. Кунта ӗнтӗ стакан ҫутҫанталӑкри сывлӑш пуснипе тытӑнса тӑраҭ. (Ҫӳреҫе уҫӑ тӑнӑ ҫухне алӑка сасартӑках уҫсан, йе сасартӑках шалтлаттарса хупсан, кантӑк ҫаршавӗ ӑҫталла сулӑнаҭ? Мӗншӗн? Стакана туллийех шыв тултарса хут татӑкӗпе хуплӑр та, труках стакана ҫаврӑрса ҫӑварӗпе айаллалла туса тытӑр. Мӗншӗн стаканри шыв тӑкӑнмасҭ? Улӑм пӗрҫинҫен сывлӑша туртса илсен, улӑм пӗрҫи тӑрӑх мӗншӗн шыв ҫӗкленет?)



№ 18. Хут такӑкӗ шыв тултарнӑ стаканран хӑпӑнмасҭ.

Пирĕн тата çутçанталăкри сывлăш мĕншĕн çĕр çине, ытти йапаласем çине те, пур йенђен те: çӳлтен те, айалтан та, айккисенђен те пусни çинђен каласси йулат.

Ĕç ака мĕнре: вĕреннĕ ăслă çынсем калана тăрăх, сывлăш çĕртен çӳлелле 300 çухрăм ытла таранђђен сарăлса выртат. Çӳлти сывлăш айалти сывлăш çине пусат, çавăнпа айалти çĕр çинђи сывлăш çăра, çӳлтинђен тăкăсрах. Çемçетнĕ минтер (çитар) çине нумай минтер купаласа хурсан, минтер лапђăнса хытса кайат, кунта та ĕнтĕ çавăн йевĕрлех. Пусăраннă сывлăш, пусса хĕснĕ шыв пек, пур йеннелле те пĕр пекех тапат: çĕр çине те, йапаласем çине те, вĕсен хушшинђе пирĕн çине те. (Мĕншĕн вăл пире çӳреме кансĕрлемест?)

Айтăр, каллех тимĕрçĕ лаççине таврăнар. Тимĕр кăшăлăн вĕçĕсем тахçантанпах шуралађђен хĕрсе выртаççĕ. Тимĕрçĕ, кăшăла клешђепе илсе сунтал çине хуђĕ ђе, унăн пĕр вĕçне тепĕр вĕçĕ çине хуђĕ.Тимĕрçĕн йулташĕ вĕсен тăрăх мăлатукпа пере пуçларĕ. Ик-виç минут ĕçлесен, кăшăл вĕçĕсене çĕлесе сыпăçтарса хуђĕç, тимĕрçĕсем калана пек, „пĕçерсе хуђĕç“.

Çавăнтах тимĕрçĕ лаççинђе тата çĕнĕ урапа кускăçĕ шинпа турттарассине кĕтсе выртат. Тимĕарçĕ кăшăла урапа кускăçĕ çине тăхăнтарма тапăнсан тхăнтараймарĕ. „Шина кĕскетсе тимĕре пăсрĕ вĕт“, тесе шухăшларăм епĕ. Анђах тимĕрçĕн хуйхăрасси-мĕнĕ асра та çук. Каллех вăл шина кăвар ăшне ђикрĕ, каллех тимĕрçĕ вĕркĕђĕ ĕçле пуçларĕ. Çапла тимĕрçĕ пĕтĕм шина вут витĕр хĕртсе кăларђĕ. Вара вĕри кăшăла урапа кускăçĕ çине çăмăллăн тăхăнтарђĕ. „Ме, хатĕр“, терĕ маçтăрĕ. Мана халђхи хутра шин урапа кускăçĕнђен тухса ӳкес пек туйăнђĕ. Нумайах та вăхăт иртмерĕ, шин сивĕнсе урапа кускăçне хытă туртса илђĕ. (Мĕншĕн?)

Тимĕртен пирĕн тимĕрçĕ мĕн-мĕн тумас-ши: вăл туна тĕрлĕ йапаласене шутласа та кăларма çăмăлах мар. Ун аллинђе хĕрнĕ тимĕр хура тăхлан пек авăнат, ăвăс пек çӳхелет, пиçсе йĕпе тăм пек сыпçăнса хутшă-

наҟ. Ҫак ӗҫре ӑна питрех пулӑшаканни—тимӗрҫӗ вӗркӗҭӗ. Вӑл вута вӗрсе хӗртсе тимӗре ҫемҫетет. Ҫав тимӗрех сивӗлле ӗҫлеме пит йывӑр.

## Ҫил арманӗ.

Хӗллехи хӑмӑр кун тӑман тухнӑ вӑхӑтра пур ҭӗрӗҭун та хӳтлӗхе пытаннӑ ҭухне шакӑртаса ларакан вӑйӑлла арман анҭах пирӗн пушӑ урама илем параҟ.

Арманне епӗ иртеннех турӑм. Ӑна ҫӳлӗ кашта тӑрне лартса ампар ҫумне тӑратрӑм. Арман ҫунаҭӗсемпе ҫиле хирӗҫ ҫаврӑнҭӗ те, шакӑртатса уласа авӑра пуҫларӗ. Ҫил вӑйланнӑҫемӗн арманӗ пушшех шавласа авӑра пуҫларӗ. Пит хытӑ авӑрнӑ ҭухне ҫунаҭӗсем хӑмаран тунӑ ҫаврашка пек курӑнаҫҫӗ.



№ 19. Вӑйӑллӑ арман.

Армана хамӑр тума та йывӑр мар. Ҫур аршӑн тӑрӑшшӗ, икӗ вершук ҫарлакӑшӗ, ҫур вершук хулӑнӑшӗ тӑваткӑл йывӑҫ илсе, унӑн варринҭе пӑрапа шӑтарса шӑтӑк тумалла, унтан ҫав йывӑҫранах ҫӗҫӗпе касса икӗ ҫунат тумалла. Кашни ҫуната ҫуррине ҫитеҭҭен пӗр майлӑ хӑйаккӑн тумалла, ҫуррине тепӗр майлӑ хӑйаккӑн тумалла.

Ҫунатлӑ йывӑҫа пӑта ҫине тӑхӑнтарса, пӑтине тепӗр тӑваткӑл кӗске йывӑҫ вӗҫне ҫапса хумалла. Тӑваткӑл йывӑҫӑн тепӗр вӗҫне хӑма ҫапса хумалла. Хӑми айккӑ ҫинҭе выртмалла. Ку вара арманӑн хӳри пулаҟ. Йывӑҫра тӳрӗ лармалли вырӑна шыраса тупса (хӳре ларакан вӗҫӗ те йывӑртарах пулса тепӗр вӗҫне туртса ан илтӗр, ҫунатлӑ вӗҫӗ те хӳрелӗ вӗҫне туртса ан илтӗр), пӑрапа шӑтарса, армана ҭӑмӑр пӑта ҫине тӑхӑнтарса кашта вӗҫне ҫӳлтен ҫапса хурас пулаҟ.

Арман каштa çинҫе ҫётре-ҫётре лараť, çил ăна турткалаť, çунаҫёсене пёр йеннелле те тепёр йеннелле те çавăркалаť. Кăшт вăхăта çил ҫарăннипе арманё те лăпах лараť. Унтан çав çилех алăпа çавăрнă пекех арман хўрине çапса армана çиле хирёç лартаť, çунаҫёсем каллех авăра пуçлаççё. Арман авăрни çине пăхса, мёншён вăл çил пур ҫухне авăрни çинҫен, çил çук ҫухне авăрманни çинҫен нумай шухăшлаттăм. Çилё те мёскер-ха вăл, ăçтан тухакан йапала?

Çил мёскерри çинҫен нумай шухăшламасăрах епир ун çинҫен пёлетпёр: çил хăй çинҫен хăйех калаť. Калаť пире епир çиле хирёç пынă ҫухне утма ҫарса, çиле май утнă ҫухне кайран хăваласа. Мёскер-ха вăл, пёр ҫухне пире ҫаракан, тепёр ҫухне пире хăвалакан? Паллă, вăл—сывлăш.

Çав ёнтё çёр çинҫе пёр вырăнтан тепёр вырăна пётём массăпа çўрет. Çил çырмари йухан шыв йевёрлех: пире май йухнă ҫухне шыв та, сывлăш та пире пыма (йе ипсе пыма) пулăшаççё (кимё тавраш çинҫе çилпе йепле çўреççё?); хирёç йухнă ҫухне кансёрлеççё, ҫарса та тăраççё. Çил çук лăпкă çанталăка тўлек тăракан кўлёри шывпа танлаштарма пулаť. Лăпкă çанталăк ҫухне сывлăш пёр вырăнта хусканмасăр тăраť. (Çил çук çанталăкра тётём трупаран йепле тухаť, йепле тата тухаť çиллё çанталăкра? Мёншён апла?)

Çапла ёнтё çил—çўрекен, йухакан сывлăш.

Мёншён хăш ҫухне сывлăш пёр вырăнта тăраť, тепёр вăхăтра хусканаť, çўрет? Çакна пёлесси кансёртерех. Çил тухса вёре пуçлаť, унтан тăвăла та тухса кайаť. Хытă вёрекен çиле ҫаплă ҫупакан лаша та хăваласа çитеймест. (Çил хăвăрт ҫупнине-йухнине, хытă вёрнине мёнле паллăсем тăрăх пёлме пулаť?) Тăвăл шавлаť-шавлаť те, каллех ҫарăнса лăпланса лараť.

Мёнтен çил пулнине, мёнтен сывлăш çўренине епир сисме пултараймастпăр; çил, таçтан айакран тухса пирён патăртан иртсе, тен вуншар çухрăма, тен çёршер, пиншер сухрăма та кайаť тёр. Çиле хамăр кăларма, тума пултараймастпăр-ши?

Тулти çутçанталăкри сывлăшран епир пысăк çил кăларма пултараймастпăр, пĕђĕкçеççĕ çиле ђас-ђасах тăватпăр: ăна вут ђĕртнĕ ђухне те, çуртана сӳнтернĕ ђухне те, лампа сӳнтернĕ ђухне те, тусана вĕрнĕ ђухне те тăватпăр. Мĕншĕн пирĕн ӳпкесенђен сывлăш йухăмпа тухаĭ? Мĕншĕн тесен пирĕн сывлăша сывласа кăларнă ђухне ӳпкесем пусăрăнаççĕ, вара вĕсен ăшĕнђи сывлăш та пусăрăнаĭ, хĕсĕнет. Хĕсĕннĕ сывлăш пӳртри сывлăшран вăйлăрах тапаĭ (епир ун çинђен малта каланăђђĕ). Çавăнпа пирĕн ӳпкесенђен тухакан сывлăш, вирлĕ тухса, тулашĕнђи сывлăша малалла тĕртет. (Тимĕрçĕ вĕркĕђне сывлăш хăçан, тата мĕншĕн кĕнине астуса илĕр-ха).

Çутçанталăкри çилсем те сывлăш хăш çĕрте ытларах, тепĕр çĕрте сахалтарах пусăрăннипе пулаççĕ пулмалла. Хытăрах пусăрăннă сывлăш сахалтарах пусăрăннă сывлăш йеннелле ђупаĭ (йухаĭ), унти сывлăша малалла тĕртнĕçемĕн тĕртсе пыраĭ. Çапла „стенапа стена çине“ кайса выђанă ђухне ађасен вăйлă ушкăнĕ вăйсăртарах ушкăнне çĕнтерсе, ăна хăваласа кайаĭ.

Сывлăш пусăрăнни тĕрлĕ вырăнта пĕр пек пулађђен çил вĕретех, сывлăш пĕр вырăнтан тепĕр вырăна йухатех.

Сывлăш пусăрăнни пĕр пек пулса çитеймерĕ, çил урăх йеннелле вĕре те пуçларĕ. Çил хăш йеннелле вĕрнине кăтартакан йапала (флюгер) ђасах çил хăш йенђен тухса хăш йеннелле вĕрнине кăтартаĭ. Апла ĕнтĕ сывлăш ытларах пусăрăнни урăх çĕрте пулмалла. (Çиле хирĕç тăрса, сывлăш хăш йенђе ытларах пусăрăннине, хăш йенђе сахалтарах пусăрăннине тавçарса илĕр: мал йенђе-и, йе кайал йенђе-и?)

Мĕншĕн-ха çĕр çинђе сывлăш пусăрăнни пур тĕлте те пĕр пек пулма пултараймасĭ, çилĕ те ĕмĕрлĕхе йăлтах ђарăнмасĭ?

Çак хĕн ыйтăва пĕлес тесен, хĕрӳ хутнă кăмака патĕнђе паклаттарнă тапак тĕтĕмĕ ăçталла кайнине сăнаса пăхăр. (Ăçталла вăл кайаĭ? Мĕншĕн?)

Çутçанталăкри сывлăш та çавăн йевĕрлĕрех çӳрет. Шăрăх ăшă кун çĕр çумĕнђи сывлăш ăшăнса çăмăлланаť те, çӳле хăпарса, çӳлтен сывлăш сайрарах çĕрелле кайаť. Вара вăл кайнă çĕрте, сывлăш çăраланнипе, сывлăш пусăрăнни ытларах пула пуçлаť, вара ытларах пусăрăннă сывлăш ђасах сывлăш сахалтарах çĕре, сывлăш сахалтарах пусăрăннă çĕрелле вĕре пуçлаť. Апла ĕнтĕ, кайран-кайран, ĕç хĕвелте, сывлăш пур çĕрте те пĕр пек ăшăнманнинђе, температурă пĕр пек марринђе. (Çил хăш йенне вĕрнине кăтартаканни кăтартнă тăрăх йе кашта çине çакнă тутăр татăкĕ тăрăх, сирĕн çĕрте мĕнле çилсем вĕрнине асăрхăр. Аслă çилсем тăваттă: çурçĕр йенђен вĕрекенни, кăнтăр йенђен вĕрекенни, хĕвеланăç йенђен вĕрекенни, хĕвелтухăç йенђен вĕрекенни.

Епир ĕнтĕ арман мĕншĕн авăрнине пĕлес сатађђа тума патнех çитрĕмĕр.



№ 20 Хут арман.

Сатађђа тепĕр хут калар-ха.

Пирвайхи услови — арман çил вĕрнĕ ђухне, хирĕç çил çунатсем çине пуснă ђухне авăраť; иккĕмĕш услови—çунатсем пĕрне-пĕри хирĕç хĕреслесе тăмалла, тата çунађĕсем хăйаккăн пулмалла; пĕр çунађĕ пĕр йеннелле хăйаккăн, ăна хирĕç тăракан çунат тепĕр йеннелле хăйаккăн пулмалла. Кăна тата акă мĕнле каласа кăтартма пулаť: пĕр-пĕр йапалана пăрас пулсан, ăна епир икĕ алăпа икĕ вĕçĕнђен тытатпăр та, сылтăм алăпа пĕр йеннелле, сулахай алăпа ăна хирĕç йеннелле пăратпăр. Çил-арман çунађĕсем те, пĕрне-пĕри хирĕç тăраканнисем, çавăн йевĕрлĕ хăйаккăн тăраççĕ.

Хаљ ĕнтĕ çил-арман çунађĕсем хăш йеннелле çаврăннине пăхар: вĕсем çунатăн малалла тухакан айкки йеннелле çаврăнаççĕ-и, йе кайалла тухакан

айкки йеннелле-и? Малалла тухакан айкки йеннелле çаврăнаççĕ. Мĕншĕн çапла? Мĕншĕн алăка тĕртсен алăк уçăлаť—ку та çавăн пекех: петли сулахайра пулсан, алăк сулахай йеннелле уçăлаť. Сывлăш хăйаккăн ларакан çуната перĕнсе, çунат тăрăх унăн кайалла тухакан айкки йеннелле шуса, çуната пусса тĕртсе кайаť. Вара çунат ирĕксĕрех сулахайалла çаврăнаť (çунатăн малалла тухакан айкки сулахайра пулсан). Айалти çунат çав вăхăтрах сылтăмалла çаврăнаť. (Мĕншĕн?) Çапла ĕнтĕ хирĕç тăракан çунатсем пĕрне пĕри пулăшаççĕ.

Хаљ ĕнтĕ выђамалли хут арманĕ йепле ĕçленине те ђасах ăнланăпăр. Ăна тăвасси пит çăмăл.

Виç вершук пысăкĕш тăваткăл хут илсе, ăна тăватă кĕтесрен кĕтесе кĕтеспе хирĕç касмалла (йăлтах касса тухмалла мар). Вара сакăр шĕвĕр (çивĕђ) кĕтессем пулаççĕ. Пĕр кĕтессине сиктерсе хăварса иккĕмĕш кĕтесĕн вĕçне илсе, тăваткăл хут варрине авса хураççĕ, çавăнтах тата тăваттăмĕш, улттăмĕш, саккăрмĕш кĕтессен вĕçĕсене те çапла хурса, вĕсене пăта çине тăхăнтарса, пăтана патак вĕçне çапса лартаççĕ. Акă, хутран тунă арман хатĕр пулђĕ. Армана алла тытса ђупсассăнах, арманĕ авра пуçлаť, çил пулмасан та çаврăнаť. Хаљ ĕнтĕ есир хăвăр çил вĕт. Хирĕç вĕрекен çил, арманăн савăкĕсене перĕнсе, каснă çĕртен тухса



№ 21. Çил арманĕ. Çил тухсан арман çунађĕсем хăш йенелле çаврăнма тытăнĕç?

кайса, савӑкӗсем хӑш йеннелле ҫаврӑннӑ—армана та ҫав йеннелле ҫавӑрат̆. (Кӗтессене савӑкӗсем тепӗр йеннелле ҫаврӑнмалла туса ҫавӑрса пуҫтарса хурӑр).

Ку таранҫҫен епир выҫамалли йапаласем ҫинҫен каларӑмӑр. Авӑ, ҫӑн арманӗ те. Ҫӑх урисем ҫинҫе ларакан пӳрт пек вӑл сӑрт ҫинҫе ларат̆, ҫил ҫинҫе ҫунаҫӗсемпе вирлӗ суллат̆. Ара, унӑн ҫунаҫӗсем те мӗнле! Ҫунат тӑрӑшшӗ икӗ ҫалӑша йахӑн, сарлакӑшӗ ҫур ҫалӑша йахӑн. Вӗсем патне ҫывхарах пыма хӑрамалла та: пӗрмайах тумтиртен ҫаклатса тӗк пек ҫӗклесе пӑрахассӑнах туйӑнат̆.

Ҫак ҫилӗн пысӑк вӑйне арманҫӑ ӗҫлеттерме майлаштарнӑ: ҫав вӑйа ҫунатсем ҫине йанӑ, ҫунатсем вала ҫавӑраҫҫӗ, валӗ ҫулсене авӑртат̆. Ҫапла ӗнтӗ ҫил пӗвенӗ шыв тӑвакан ӗҫех тӑват̆.

## Сывлӑша йепле виҫме пулат̆.

Шкула вӗренме кӗреҫҫенех епӗ аслӑ пиҫҫерен вӗсене уроксенҫе куҫа курӑнман кассене кӑтартни ҫинҫен илтнӗҫҫӗ. Епӗ кассем ҫинҫен „мӗн йеверлӗ йапаласем вӗсем?“ тесе ыйта пуҫласан, пиҫҫе мана „вӗсем сывлӑш йеверлӗ йапаласем“, терӗ. Вӗсем сывлӑш пекех ҫӑмӑл; савӑта хупласа хумасан, савӑтран тухса кайма пултараҫҫӗ. „Сывлӑш хӑй те шыв пӑсӗ пекех кас“, терӗ вӑл кайран. Хам шкула кӗреҫҫен кас ҫинҫен урӑх ним те пӗлеймерӗм вара.

Шкулра кас ҫинҫен вӗренеҫҫен икӗ ҫул иртрӗ. Малтан уроксем сывлӑш ҫинҫен пулҫӗҫ.

Пире кӑтартнӑ оппӑтсене епӗ ӗлӗкех тукаланӑҫҫӗ, анҫах урӑхларах. Сывлӑш ӑшӑннӑ ҫухне сарӑлнине, сивӗрен пусӑрӑнса тӑкӑсланнине, сывлӑша вӑйпа хӗсме пулнине, хӗснӗ сывлӑш пур йенне те тапнине, сарӑласпӑн пулнине епӗ ӗлӗкех пӗлнӗҫҫӗ. Ҫутҫанталӑкри сывлӑш пур йапаласем ҫине пуснине те, тата сывлӑшсӑр трупана йе савӑта шыва хӑваласа кӗртнине те пӗлнӗҫҫӗ. Сывлӑш пур ҫӗрте те пӗр пек мар пусӑраннинҫен ҫил пулнине те пӗлнӗҫҫӗ.

Маншăн сывлăша ытти йапаласем пекех виçсе вăл мĕн ҫухлĕ тайнине пĕлесси анҫах ҫĕнĕ хыпар пулҫĕ. Сывлăша виçессине ака мĕнле тăваççĕ: уҫитĕл колпă текен çăмăл путылккана тараса çине лартрĕ, колпăн пăккине те çавăнтах хуҫĕ. Тепĕр тараса çине (ҫашкă çине) пăрçа йарса, икĕ ҫашкинне те пĕр пек тайакан



№ 22. Колпăри сывлăша ăшăтсан, колпă çăмăлланаť.

турĕ. Унтан колпăна вут çинҫе тытрĕ те, хăвăртрах питĕрсе, ăна каллех тараса çине лартрĕ. Пур те пăрçа хунă ҫашкă колпă лартнă ҫашка туртса илнине куртăмăр.

„Апла ĕнтĕ колпăри вĕри сывлăш сивĕ сывлăшран çăмăлтарах“, терĕмĕр епир. Пăртак тăрсан, колпă сивĕнҫĕ, вара унăн ăшĕнҫи сывлăш та сивĕнҫĕ, çапах та вăл пăрçаран çăмăлтарах йулҫĕ. Вĕсене танлаштарма (пĕр пек тума) икĕ пăрçине илмелле пулҫĕ.

Епир вара колпă çăмăлтараххи унăн ăшĕнҫи сывлăш вĕрипе сивĕ марринҫен килменнине тавçарса илтĕмĕр. Ĕç ака мĕнре: ăшăтнă ҫухне колпă ăшĕнҫи сывлăшăн пĕр касси тухрĕ (мĕншĕн?), унта сывлăш

сахалтарах йулҫё. Сывлăш сахалтарах йулнипе, колпă та çăмăлтарах пулҫё. Паллă ёнтё: сывлăш, темён ҫухлё çăмăл пулсан та, пăртак та пулин тайаť, унăн йывăрлăхё мён ҫухлё те пулин пур.

Уҫитёл колпăна тараса çинҫен илсе, ăна майёпе айалалла туса шыв айне путарҫё те, шыв айёнҫе унăн пăккине туртса кăларҫё. Шыв пакăртатса колпăна çуррине çитеҫҫен кёҫё (мёншён?). Курăнсах тăраť ёнтё: шыв колпăна мён ҫухлё кёҫё, çавăн ҫухлех унтан колпăна ăшăтнă ҫухне сывлăш тухрё. Çав сывлăш икё пăрçа ҫухлё тайаť. Апла пулсан, пётём колпăри сывлăш тăватă пăрçа виçине тайаť.

Пирён хушăмăртан пёри ыйтрё: „Çак оппăт ахаҫ тараса çинҫе ерех путтылккипе туса пăхсан тухё - и?“ терё.

Уҫитёл каларё: „Тытăнса пăхăр. Анҫах сывлăш çăмăл йапала, çакна астусах тăрăр. Шутласа пёлнё тăрăх, 770 стаккан сывлăш пёр стаккан шыв ҫухлё тайаť. Путылккана ăшăтса унтан сывлăша çуррине йахăн хăваласа кăларсан, çав сывлăш 6 тумлам шыв ҫухлё тайё. Наҫар тараса виçўре çавăн ҫухлё ҫакнине сисеймест те. Çавăнпа малтан оппăт тăваҫҫен тарасан сиселёхне пёлес пулаť. Тарасан ҫашки кăшт çеç хунинҫен тайăлсан, сăмахран — пёр пăрçа хунинҫен тайăлсан, çав тараса оппăт тума йураť“, терё.

Урок пётнё ҫухне уҫитёл пире акă мёнле сатаҫҫă паҫё: „Шывпа, стакканпа, тарасапа ёçлесе, витрери сывлăш мён ҫухлё виçнине пёлёр“, терё. (Кăна мёнле пёлмелле?)

Пётём пўртри сывлăш мён ҫухлё тайаť-ши? Çакна пёлме пит интереслă пулмалла*).

## Мён те пулсан çуннă ҫухне сывлăш улшăнни.

Каçхи ҫей ёçнё хыççăн стакkансемпе ҫей ҫашкисене пиҫҫепе мана параҫҫёç. Епир вара шыв тултарнă

---

*) Тёрёс виçсе пёлнё: куллă метр сывлăш 1,3 килокрам тайаť (куплă аршăн сывлăш $1^{1}/_{3}$ кёрепенкё тайаť).

ҫей ҫашкисем, йе шыв тултарнă турилккесем ҫине хутран тунă карапсене йарса, вĕсем ҫине вĕрсе, вĕсене пĕр хĕрринҫен тепĕр хĕрринелле шутарса ҫӳреме йурататтăмăр. Унтан ҫав аппаланăва пăрахса, карапĕсене ҫунтарса йараттăмăр.

Пирĕншĕн карапне вут ҫĕртсе йарса, ăна хăвăртрах стакканпа хупласа, унта мĕн пулнине пăхасси пит интереслăҫҫĕ. Стакканпа хупласанах, ун айĕнҫен хăмпăланса сывлăш тухать. Вут ҫӳнсенех—стаккан ăшне шыв хăпарать. (Стакканăн хăш пайĕ тулнине виҫсе пĕлĕр). Ку мĕнтен пулнине епĕ нумайҫҫен пĕлеймерĕм. Хаҫ ĕнтĕ ун ҫинҫен (мĕншĕн шыв стаккана хăпарни ҫинҫен) каласа кăтартма маншăн йывăр мар. (Мĕнтен пулать вăл?)


№ 23. Хутран тунă карапа ӳпĕнтернĕ стакканра ҫунтарни.

Пурнăҫра пĕр сатаҫҫă хыҫҫăн тепĕр сатаҫҫă та тухсах тăрать.

Ҫуннă карапсене сăнаса пăхкаласа, епĕ вĕсем нихҫан та ҫунса пĕтменнине асăрхарăм. Ҫав карапсемех уҫă сывлăшра йăлтах ҫунса кайаҫҫĕ, хăш ҫухне анҫах йĕпе тĕпĕсем йулаҫҫĕ.

Ҫак оппăта ҫурта татăкĕпе те тума пулать: ҫуртана ҫутса стакканпа, йе варени панккипе (савăҫĕпе) хупласа пулать. Карап ҫунтарнă ҫухнехи пекех тухать: ҫурта, пăртак ҫунсан, сӳнет. (Ҫурта стаккан айĕнҫе мĕн ҫухлĕ вăхăт ҫуннине, варени панкки айĕнҫе мĕн ҫухлĕ вăхăт ҫуннине асăрхăр).

Ҫуртана тата лампă трупине лартса шăрпăк савăҫĕпе витсен те йурать.

Лампă трупи ҫинҫен урăх каласăпăр: вăл пире ҫак ĕҫре хăш-пĕр йапалана пĕлме пулăшĕ.

Шăннă алла хăвăртрах ăшăтас тесе, епир ăна лампă трупи ҫумĕнҫе, йе трупа тĕлĕнҫе ҫӳлте тытатпăр: ҫӳлте ăшăраххине епир пĕлетпĕр.

Лампă трупи ăшне мамăк çипписем пăрахсан, кун-та ĕç мĕнрине курăпăр: мамăк татăкĕсем çӳлелле вĕçсе кайаççĕ.

Палла ĕнтĕ: лампă трупинђен вĕри сывлăш çӳлелле çĕкленет. (Мĕншĕн? Алла трупа тĕлĕнђе тытса, мĕн ђухлĕ çӳлелле ăшă çапнине сăнаса пĕлĕр).

Лампă трупинђен хăпаракан сывлăш акă мĕн тĕлĕшĕнђен интереслă: çав сывлăша çунакан хăйă йе çунакан çурта кӳртсен, вĕсем ђасах сӳнеççĕ. Апла ĕнтĕ çунакан лампă трупинђен хăпаракан сывлăш пăсăлнă сывлăш, ун ăшĕнђе тепĕр хут нийепле йапала та çунма пултараймасť. Трупине пĕр-пĕр йапалапа çӳлтен хупласанах,—лампă сӳнет: хаљ ĕнтĕ трупа ăшĕнђе пăсăлнă сывлăш анђах.

Апла пулсан, лампă çунтăр тесен, унта таса сывлăш пĕрмайах пырса тăмалла, пăсăлнă сывлăш унтан кайсах тăмалла. (Лампă трупине таса сывлăш йепле кĕнине сăнаса пăхăр. Алăпа хупласа, трупине сывлăш ан йарăр. Мĕнле улшăну пулнине, вăл мĕнтен пулнине каласа кăтартăр. Лампăран хăйă ђĕртнĕ ђухне лампă суттине мĕншĕн ђакараççĕ?)

Çапла ĕнтĕ кирек хăçан та мĕн те пулса çуннă ђухне сывлăш тепле те пулса улшăнаť пулмалла.

Апла пирĕн икĕ тĕрлĕ сывлăш пуррине пĕлсе тăрас пулаť: пĕри таса сывлăш, çутçанталăкри сывлăш, тепĕри пĕр-пĕр йапала çуннинђен тасамар пулнă сывлăш. (Йепле вĕсене пĕр-пĕринђен уйăрмалла?)

## Кассем.

Сывлăшра мĕнле кассем пур? Акă шкулта ытти кассене пĕлме те ђерет çитрĕ.

Малтан епир малта каланă оппăта турăмăр, анђах урăхларах.

Уђитĕл кăтартнă тăрăх, ђĕртнĕ хăййа кĕленђе савăтне айалалла ђикрĕмĕр: хăшĕ путылккана, хăшĕ урăх кĕленђе савăта. Епир шухăшланă пек, хăййи

ҫасах сӳнҫӗ. Хӑйӑи сӳнсен, уҫитӗл пирӗн савӑта шыв йаҫӗ те, ӑна ҫӳхесе пӑлхатма хушрӗ. Пире тӗлӗнтерсе шывӗ сӗт пек шуралса кайрӗ.

Унтан уҫитӗл ҫав шыва тутанса пӑхма паҫӗ. Шывӗ пӑхма таса пек; тутансан, темӗскер тути сисӗнет. Апла ӗнтӗ ҫак шывра мӗн те пулса ирӗлнӗ пулмалла.

„Ку шыв ахаҫ шыв мар,—терӗ уҫитӗл,—исвӗслӗ шыв, мӗншӗн тесен унта исвӗс ирӗлтернӗ. Сирӗн шухӑшпа, мӗншӗн пӑтранҫӗ-ха вӑл?“—терӗ уҫитӗл.

„Сӳннӗ хӑйӑран тухнӑ тӗтӗмрен пӑтранҫӗ“, тесе калаҫрӑмӑр епир.

Вара уҫитӗл путылккасенҫен шыва тӑкма хушрӗ те, путылккасене ҫӗнӗрен исвӗслӗ таса шыв йаҫӗ. Хаҫ ӗнтӗ путылккасенҫе тӗтӗм пулсан та шывӗ тасах тӑҫӗ. (Исвӗслӗ шыв ҫутҫанталӑкри сывлӑшра ҫӳхесе пӑлхатсан улшӑннипе улшӑнманнине сӑнаса пӗлӗр).

Апла ӗнтӗ ӗҫ тӗтӗмре мар. Курӑнсах тӑраҭ: хӑйӑ ҫуннӑ ҫухне куҫа курӑнман кас пулаҭ, вӑл исвӗслӗ шывпа хутшӑнса ӑна пӑтранҫӑклӑ тӑваҭ. Кунта вара шыв ҫав каса туртса илсе путылккари сывлӑша тасатнӑ пек пулаҭ.

Унта мана акӑ мӗнле шухӑш пырса кӗҫӗ: хӑйӑ ҫуннӑ хыҫҫӑн путылккари сывлӑша исвӗслӗ шывпа тасатнӑ пулсан, унта хӑйӑ каллех ҫунмӗ-ши, тесе шухӑшларӑм епӗ. Туса пӑхрӑмӑр, анҫах хӑйӑи ҫасах сӳнҫӗ.

Ҫакӑнтан вара епир „путылккара ҫунма паракан кас урӑх ҫук; ун пек кас малтан унта пулнӑ, анҫах вӑл хӑйӑ ҫуннӑ ҫухне пӗтнӗ“, терӗмӗр. Путылккара кас халӗ те пур, анҫах вӑл касра хӑйӑ ҫунмасҭ.

Ҫунма паракан каса уҫитӗл к и с л о р о т терӗ, ҫуннӑ хыҫҫӑн йулакан каса а с о т терӗ. Апла ӗнтӗ сывлӑш ҫак кассем хутшӑннипе пулнӑ. Иккӗшӗ те вӗсем тӗссӗр, куҫа курӑнмаҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсене куҫпа пӑхса уйӑрма хал ҫук.

**Кислорот**. Пирӗн пурин те сывлӑшӑн икӗ касне те кашнине расна тупас килсе кайрӗ, вара епир уҫитӗлрен—кислорота асотран йепле уйӑрмаллине вӗрент, тесе ыйта пуҫларӑмӑр.

„Асота кислоротран уйӑрма ҫӑмӑл: пӗр-пӗр йапала ҫуннӑ ђухне кислорот пӗтет, асот анђах йулат̆. Сывлӑшран кислорот тупасси пулмӗ, мӗншӗн тесен кислоротран асота кӑларма пит йывӑр. Кислорота йаланах кислорот пур йапаласенђен, сӑмахран, пертолет тӑварӗнђен тупса хатӗрлеҫҫӗ“, терӗ уђитӗл.



№ 24. Пертолет тӑварӗнђен кислорот кӑларни. Сылтӑмри путылккара шыв. Путылккине мӑйӗпе айалалла туса шыва ђикнӗ. Путылккаран шкалӗк патне реҫинлӑ пыршӑ пырат̆. Пыршӑн вӗҫӗсенђе кӗленђе трупасем. (Трупасен вӗҫӗсене, вӗсем путылккапа шкалӗке тађӑ кӗђђӗр тесе, ђуста сӗрнӗ). Шкалӗк айӗнђе шӑтӑклӑ шӑвӑҫ савӑт. Унта вут хунӑ.

Ҫапла каласан, уђитӗл епир ҫийекен тӑвар йевӗрлӗ шурӑ пурушук кӑтартрӗ. Хӑшӗ-пӗри пиртен ӑна ђӗлхепе тутанса та пӑхрӗҫ; вӑл тутлӑ мар, ђӗлхене тӑкӑслантаракан йыпала иккен.

Унтан уђитӗл пертолет тӑварне вӗтӗ тӑм пурушукӗпе хутӑштарђӗ те, ҫав хутӑшӑва пӗђӗк кӗленђе савӑта (шкалӗке) йарсан, пӗтӗм припора ҫак ӳкерђӗкре кӑтартнӑ пек пуҫтарса майлаштарса лартрӗ. (Мӗнле майлаштарнине каласа парӑр).

Шкалӗк айне йалкӑшакан кӑвара панккӑпа лартса, кӗнекепе хӑмсарса (сулласа) ӑна вӑйлӑрах ђӗртсе йарсан, шкалӗкрен путылккана трупкӑ тӑрӑх кас хӑмписем кайа пуҫларӗҫ. Вӗсем путылккари шыв витӗр хӑпарса ҫӳлте пуҫтарӑннӑҫемӗн путылккари шыв анса пыђӗ (мӗншӗн?) Ҫапла епир виҫӗ путылкка кислорот пуҫтартӑмӑр.

Вӑл пит интереслӑ кас. Тӗрӗс, тӗсӗ тӑрӑх ӑна сывлӑшран уйӑрас ҫук: сывлӑш пекех тӗссӗр. Анҫах пӗр путылккине сӳнекен хӑййа ҫиксенех, вӑл шатӑртатса ҫап-ҫутӑ ҫулӑмпа ҫуна пуҫларӗ. Хӑййа темиҫе хут та сӳнтерсе, темиҫе хут та айалтан айала ҫикеҫике ҫунтарса пӑхрӑмӑр. Кайран-кайран хӑййа вут илми пулҫӗ, апла ӗнтӗ кислорот пӗтнӗ пулаӗ.

Иккӗмӗш путылккана правлӑкпа ҫаклатса сӳнекен кӑмрӑк кӳртрӗмӗр: кӑмрӑкӗ ҫасах ҫӗрӗлсе кайса шуралаҫҫен хӗрҫӗ.

Виҫҫӗмӗш путылккана пӗтӗрнӗ ҫинҫе тимӗр правлука кӗртрӗмӗр, унӑн вӗҫне ҫӗртсе йанӑ пӑкӑ татӑкӗ хутӑмӑр. Кислорот ӑшӗнҫе пӑкӑ йӑлтах ҫунса кайрӗ, ун хыҫҫӑн тимӗр те ҫуна пуҫларӗ. Унӑн ҫап-ҫутӑ хӗлхемӗсем пур йеннелле те сирпӗнҫӗҫ.

Ҫапла ӗнтӗ кислоротра пур йапала та ҫунаӗ, тимӗр те ҫунаӗ, йалкӑшсах ҫунаӗ. Ахаҫ сывлӑшра ҫав йапаласем ҫавӑн ҫухлӗ ҫутӑ ҫунаймаҫҫӗ. (Мӗншӗн?)

Кӑмрӑк кислоротра малтан анҫах лайӑх ҫӗрӗлсе хӗрсе кайаӗ, унтан вут вӑйӗ ҫакнӑҫемӗн ҫакса пыраӗ, кайран кӑмрӑк сӳнсе лараӗ. (Ку мӗне пӗлтерет?)

Ҫапла ӗнтӗ пӗр-пӗр йапала ҫунтарнӑ ҫухне йапали ҫеҫ пӗтмест, кислорот та пӗтет. Пӗҫӗк савӑтра хӑвӑртрах пӗтет, пысӑккинҫе нумайтарах пыраӗ. Пӳртре лампӑ йе ҫурта пӗрмайах ҫунаӗ. (Мӗншӗн?)

Хамӑр таврари сывлӑша сӑнаса пӑхар. Сывлӑш пур ҫӗрте те пӗр пекех мар.

Пурӑнакан пӳрте кӗнӗ ҫухне епир кунти сывлӑш урамринҫен урӑхлараххине ҫасах сисетпӗр: урамра сывлама ҫӑмӑл, пӳртре йывӑртарах. Тулти сывлӑша пӳрте кӗртсессӗн, вӑл халӑх ҫинҫе пурпӗр улшӑнаӗ. Кам ӑна улӑштараӗ? Епир хамӑрах. Ку йапала мӗнле пулнине сӑнаса пӑхса пырар-ха.

Вырӑн ҫинҫе выртнӑ ҫухне епир, хӑвӑртрах ӑшӑнас тесе, ҫас-ҫасах пуҫ ҫийӗнҫенех витӗнетпӗр. Ҫӑнах та вара ҫасах ӑшӑ пулаӗ. (Мӗншӗн?) Анҫах ҫапла выртнӑҫемӗн пӑҫӑ сывлӑшпа сывлама йывӑртан йывӑртарах пулса пыраӗ, кайран, ҫӑтаймасӑр, пуҫа кӑларатпӑр.

Хамăр сывласа кăларакан сывлăша сăнаса пăхар. Ăна сăнас тесен, хамăр ăшри сывлăша вăрăмрах тытса тăрса, ăна улăм пĕрӡи тăрăх путылккана пĕтĕмпех сывласа кăларар. Ҫавăнтах путылккана ҫунакан хăйăа кӳртер. (Мĕн куратăр?)

Апла ĕнтĕ епир сывласа кăларакан сывлăшра та кислорот ҫук иккен. Ҫав кас пирĕншĕн апат пекех. Апатран та пахарах. Унсăрăн етем кăлт та (3-4 минут та) пурăнас ҫук. (Ҫеккунт кăтартакан стрелккă тăрăх, хăвăр сывлăша мĕн ӡухлĕ тытса тăма пултарнине асăрхăр).

Ҫапла ĕнтĕ кислоротсăр ним те ҫунма пултараймасĭ, кислоротсăр сывлама та ҫук. (Нумай халăх пур пӳртре мĕншĕн лампă йе ҫурта наӡар ҫунаĭ?)

**Уклеккислă кас.** Унтан тепĕр хутĕнӡе уӡитĕл таса кислоротра кăмрăк ҫунтарнă кĕленӡе илсе килӡĕ. Ҫав кĕленӡере кислорот анӡах пулнăӡӡĕ. Иртнĕ урокра кĕленӡе ăшĕнӡи кислоротра кăмрăк ҫунтарӡĕҫ. Кăмрăкĕ сӳнсен, кĕленӡине, лайăх питĕрсе лартса, ку таранӡӡенех усмасăр усранă.

„Ку путылккара халĕ мĕн пур?“—тесе ыйтрĕ уӡитĕл.

Епир, пĕлменнипе, малтан калаймасăр тăтăмăр. Унтан хăшĕ „ним те ҫук“ терĕҫ; хăшĕ „унта кислорот“ терĕҫ; ыттисем пĕлмен йапала ҫинӡен каласшăн мар пулса тăӡĕҫ. Акă хăшĕ пирĕн хушăран ку каса ҫунакан хăйăпа пĕлме пуррине аса илӡĕҫ. Путылккана уҫса, унта ҫунакан хăйă ӡикрĕҫ, хăййи ҫавăнтах сӳнӡĕ.

Вара пуриншĕн те путылккара кислорот ҫукки паллă пулӡĕ. Унта вăл пулас та ҫук: кăмрăк ҫуннă ӡухне вăл пĕтнĕ вĕт. Тата савăт пушă марри те паллă пулӡĕ (кăна ăҫтан пĕлме пулаĭ?) Унта мĕнле те пулсан кас пур.

„Асот,“--терĕҫ хăшĕ. Ыттисем кăна ĕненсех каймарĕҫ. Ӡăнах, асот путылккана сывлăшран анӡах лекме пултараĭ. Апла асотпа пĕрле унпа хутшăннă кислорот та лекĕӡӡĕ. Унта кислорот ҫуккине епир куртăмăр.

„Сирӗн алăра каса пĕлмелли тата тепĕр май пур,“— тесе шухăш паӡӗ пире уӡитӗл. Вара епир исвӗслӗ шыва аса илсе, ăна ӗçе йатăмăр. Путылккана шыв йарсанах, вăл пăтранӡӗ; кунта ӗнтӗ хăйă çуннă ӡухне пулакан таса мар кас пурри паллах.

„Ку касăн та хăйӗн йаӡӗ пур. Вăл мӗнле пулнине астуса илсен, есир унăн йатне хăвăр та калама пултарăр,“—терӗ уӡитӗл.

Вăл акă мӗнле пулӡӗ: таса кăмрăк таса кислоротра çунӡӗ; çуннипе кăмрăкӗ сахалланса йулӡӗ, кислороӡӗ те пӗтрӗ. Кăмрăкпа кислорот вырăнне çӗнӗ кас пулса тăӡӗ.

„Ку—кăмрăккислотлă кас,“—терӗмӗр епир. Вара епир каланине тӳртлетсе, ăна „уклеккислă кас“ тесе йат паӡӗç, кăмрăкра уклерот тиййекен кас нумайран.

Унтан вара уӡитӗл епир сывласа кăларакан сывлăша сăнаса пăхма каларӗ. Епир ăна мӗнле тумаллине ӡасах тавçарса илтӗмӗр. Стакkансене исвӗслӗ шыв тултарса, унта улăм пӗрӡисем ӡиксе, çав пӗрӡӗсем тăрăх вӗре пуçларăмăр. Шыв ӡасах шуралса кайрӗ. Ку пире тӗлӗнтерсех йаӡӗ. Апла пирӗн ăшра та уклеккислă кас пулаӗ иккен.

Хаӡ ӗнтӗ пире йапала çуннă ӡухне, тата сывланă ӡухне мӗншӗн сывлăш пăсăлни пит таса курăнса тăраӗ. Çуннă ӡухне те, сывланă ӡухне те кислорот пӗрет те, ун вырăнне уклеккислă кас пулса тăраӗ. Апла пулсан, çуннипе сывлани пӗрех пек пулса тăраӗ.

Кунта пире уӡитӗл килте акă мӗнле оппăт тума канаш паӡӗ. Путылккана çемçе çăкăр пӗрӡисем йе ншӳрпе йарса, пăкăпа лайăх питӗрсе лартас пулаӗ. Унтан ик-виç кунтан путылккари сывлăша хамăр пӗлекен майсемпе сăнаха пăхас пулаӗ. (Унта мӗнла кас пулӗ?)

Çакăн хыççăн пиртен—„ăçта тата уклеккислă кас тупма пулаӗ?“—тесе ыйтсан, епир вăл сывлăшра пуррине кӗç тавçарса илтӗмӗр. Ăна тавçарса илме те йывăр пулмарӗ. Ара, кашни çуннă шăрпăк, кашни сывлани сывлăша сахал та пулсан уклеккислă кас параӗ вӗт.

Ҫакна пĕлес тесе, учитĕл кăтартнă тăрăх, епир акă ҫакăн пек оппăт турăмăр. Им-ҫам кĕленчине исвĕслĕ шыв кăшт йатăмăр та, унăн ҫăварне ҫăкăр ҫемҫипе питĕрсе хутăмăр. Йăлтах питĕрес умĕн ҫăкăр ҫемҫи витĕр кĕленчене икĕ улăм пĕрчи чикрĕмĕр: пĕрне кĕленче тĕпне ҫитмелле, тепĕрне шыва ҫитмелле мар турăмăр, ун вырăнне унăн (иккĕмĕш улăм пĕрчин) тепĕр вĕҫне вăрăм тухмалла турăмăр. Ҫав вăрăм вĕҫĕнчен епир сывлăша турта пуҫларăмăр. Кĕленчери сывлăша туртса илнĕҫемĕн ун вырăнне кĕленчене тулти сывлăш кĕрсе пычĕ. (Мĕнле ҫулпа? Мĕншĕн кĕленчене сывлăш кĕрет?)



№ 25. Сывлăша исвĕслĕ шыв витĕр кăлармалли хатĕр. Сывлăша вăрăм трупа витĕр туртса кăларас пулаҭ.

Туртатпăр-туртатпăр, шывĕ пăтранмасах. Темиҫе хутчен те кантăмăр, шыв витĕр те чылай сывлăш кăлартăмăр, шывĕ кайран тин шурала пуҫларĕ.

Ҫакăнтан епир акă мĕн ҫинчен пĕлме пултаратпăр. ҫутҫанталăкри сывлăшра уклеккислă кас пур пулсан та вăл унта питĕ сахал. (Уклеккислă кас урамри сывлăшра нумайтарах-и, йе пӳртри сывлăшра-и? Мĕншĕн? Мĕншĕн перемена чухне класри фортăчкăсене уҫаҫҫĕ?)

## Исвĕслĕ шыв.

Уклеккислă каспа тăвакан оппăтсене килте те тума пулаҭ, анчах ăҫтан илес-ха исвĕслĕ шыв? Ҫак тĕлешрен ыйтса пĕлме епир учитĕл патне пытăмăр.

„Исвĕслĕ шыв исвĕс ирĕлтернинче пулассине есир пĕлетĕр ĕнтĕ. Вăл чул ҫуртсене тунă чухне тыткалакан исвĕсех,“—терĕ учитĕл.

Кунта нумайӗшӗ ђул ҫуртсене кирпӗҫрен йепле тунине каласа кӑтартасшӑн пулса аллисене тӑсрӗҫ.

Ыйтнӑ ађа каласа пара пуҫларӗ. Вӑл каланӑ тӑрӑх, кирпӗҫ хурас вырӑна малтан ђуста йеверлӗ исвесткӑпа сӗрсе шӑлаҫҫӗ. Унтан кирпӗҫе хурса ун тӑрӑх ҫӑмӑллӑн мӑлатукпа шаккаҫҫӗ. Шакканипе, кирпӗҫ айӗнђен айккисене исвесткӑ ҫӑрӑнса ђухаҭ. Исвесткӑ, типсен, кирпӗҫсене пит хытӑ ҫыхӑнтарса тытса тӑраҭ, вӗсене пӗр-пӗринђен туртса та татас ҫук. (Ђул ҫурт стенине пӑхса пӗр ерет кирпӗҫ тепӗр ерет ҫинђе йепле выртнине хут ҫине ӳкерсе илӗр. Мӗншӗн кирпӗҫсене ҫапла хураҫҫӗ?)

„Ҫутҫанталӑкра хатӗр исвӗс ҫук, ӑна пӗр ђултан хатӗрлеҫҫӗ,“—терӗ уђитӗл.

Унта епӗ пирӗн ҫӗрте ђиркӳ картине тунӑ ђухне йепле пӗр йышши ђула ҫунтарса исвесткӑ хатӗрленине каласа кӑтартрӑм.

Исвестђак текен (исвӗсрен пулнӑ ђул) хӑма татӑкӗ пек ђулсене кӑмака йеверлӗ купаласа хуђӗҫ те, ун ӑшӗнђе вут хутса йађӗҫ. Ђулсем хушшинђен тухакан сулӑм ђулсене ҫунтарса хӗртсе тӑђӗ. Кӑмакине кунӗнҫӗрӗн ернеђђенех вӑйлӑ хутса тӑђӗҫ. Ҫакӑн пек ҫунтарнӑ ђулсене „исвӗс“ теҫҫӗ.

Кирлӗ пулсан, ҫав исвӗс ђулӗсене йывӑҫ йешђӗксене хурса, шывпа сапрӗҫ. Тӗлӗнмелле йапала: шывран ђулсем саланса пурушук пулђӗҫ, йешђӗксенђен пӑс купаланса туха пуҫларӗ.

Исвӗс ҫине шыв ытларах йарса, тата кирлӗ таран хӑйӑр хутӑштарса пӑлхатса ҫӑрсан, исвесткӑ пулаҭ („исвестђак“, „исвӗс“, „исвесткӑ“ тенӗ сӑмахсене аташтарса ан пӗтерӗр).

Хаљ ӗнтӗ исвӗс шывне мӗнрен мӗнле тӑвассине тавҫарса илме хӗн мар: „исвестђак“ текен ђула виҫтӑват кун кӑмакара тытас пулаҭ, шыв йарса пӑлхатас пулаҭ.

„Анђах ђул кӑмакара саланса кайасран ӑна шӑвӑҫпа, йе ҫӳхе тимӗр татӑкӗпе ҫавӑрса илсе хума ан манӑр,“—терӗ уђитӗл кайран.

## Ҫунакан хăйă мĕн ҫинҁен калаť.

Ей, хăйййăм-хăйййăм, хурăн хăйййăм!

Епĕ сана пĕҁикренпех паллатăп-ҫке: мĕллехи вăрăм ҫĕрсене пĕрле ирттереттĕмĕр ҫав. Ун ҁухне епĕ шкулта вĕренеттĕм. Вуннăран ытла саспаллисем пĕлсе пăртак сăмахсене кăларкалаттăм. Ҫĕнĕ кĕнеке тăрăх саспаллисене тăсма, сăмахсене кăларма темĕн пекех кăмăллăҁҁĕ-ҫке, пĕтĕм ҁуна вĕҫтереҁҁĕ. „А-а-а-на-а-а, Ла-а-а-ша-а су-ух“. Мĕскер-ха ку „Сух?“.

Анҁах шухăшлама вăхăт ҫук: хăйă ҫунса пĕтсе килет; епĕ кĕнекене пăрахса ҫĕнĕ хăйă ҁĕртетĕп. Ҫĕнĕ хăйă ҁасах ҁĕрĕлмест; хăйă мĕн ҁухлĕ хулăнрах, ҫавăн ҁухлĕ ăна ҁĕртсе йама хĕнтерех. Акă хăйăран малтан пăс, унтан шурă тĕтĕм тухрĕ, вара хăйă ҫуна пуҫларĕ. Хаљ унтан ҫулăмлă ҁĕлхе ҫӳлелле тăсăлаť. Ҫуннă хыҫҫăн хĕрлĕ кăмрăк йулса пыраť.

Хăш ҁухне, ҫунакан вут ҫине пăхса шухăша кайса, тĕнҁене те манса кайатăн. Тĕрлĕ йапала ҫинҁен шухăш килеҁҁĕ: ăҫтан вут ҫурални ҫинҁен те, мĕншĕн кăмрăк ҫулăм кăларса ҫунманни ҫинҁен те. Тĕнҁере вут пурри пит аван-ҫке: унсăр пуҫне кăмака хутасси те, апат пĕҫересси те, каҫхине-ҫĕрле ҫутатасси те пулас ҫук.

Ҫапла шухăшласа ларнăҫемĕн епĕ хăйăран вут кутĕнҁен шурă тĕтĕм айалалла йухăнса тухса, унтан авăнса ҫӳлелле кăйнине сисмерĕм те. Кайарах, ăна курсассăнах, ăна хăвăртрах шăрпăкпа ҁĕртсе йатăм, вара тĕтĕм выранне вăрăм ҁĕлхе пек вут хыпса кайрĕ.

Ҫав тĕтĕме вутран уйăрса хăйне уйрăм ҫунтарма ҫăмăл май пур.

Хаҫат хутĕнҁен, йе ҫырнă пысăк листаран виринкке туса, унăн сарлака вĕҫĕнҁен вут ҁĕртсе йарар. Виринккен шĕвĕр вĕҫне пăртак ҫӳлелле тытсан, унтан шурă тĕтĕм мăкăрланса тухаť. Тĕсĕ тăрăх, ăна сăмавартан тухакан пăс йевĕрлĕ пăс теме пулаť, анҁах ку тĕтĕм ҁылай шурăрах. Пур йенҁен пăхсан

та, ку кас пулмалла. Ун патне ҫунакан вута илсе пырсан, ҫак кас сасартӑках ҫулӑмланса ҫутӑ ҫуна пуҫлаӗ.

Ҫапла ӗнтӗ, хӑйӑ ҫуннӑ ҫухне, ҫулӑм кӑларса хӑйӑйи ҫунмасӗ, унтан тухакан шурӑ кас ҫунаӗ. Ҫуннӑ хыҫҫӑн пулакан хытӑ кӑмрӑк ҫулӑм кӑлармасӑр ҫӗрӗлсе кӑна выртаӗ.



26. Ҫунакан хӑйӑ. Ҫӳлелле шурӑ тӗтӗм йавӑнса хӑпараӗ.



№ 27. Хутран тунӑ варинккене ҫунтарни.

Хӑйӑ ҫуннӑ ҫухне кас та, кӑмрӑкӗ те пӗтӗмпе тенӗ пекех ҫунса кайаҫҫӗ, кӗлӗ анҫах кӑшт йулаӗ. Кӑмакари вут та пӗтӗмпе тенӗ пекех ҫунса кайаӗ. (Мӗн йулаӗ вара?) Епӗ пӗрре вӑрманта смала йухтаракан кӑмака курнӑҫҫӗ. Унта ӗҫ йӑлтах урӑхла пулса пыраҫҫӗ.

Вӑл, пысӑкскер, виҫӗ пӳлӗмлӗ. Варринҫи пӳлӗм ҫи пысӑкки; ӑна смалалӑ йывӑҫпа, вутпа тӑп тултарса питӗрсе лартаҫҫӗ. Айккинҫи пӳлӗмсем ахаҫ кӑмакасем пек кӑмакасемех. Вӗсене кунӗн-ҫӗрӗн хутаҫҫӗ. Варринҫи пӳлӗмри шӑтӑкран шурӑ тӗтӗм тухса тӑраӗ; ӑна вут тӗртсен, вӑл ҫунаӗ. Шурӑ кас тухма ҫарӑнсан, айккинҫи кӑмакасене хутма пӑрахаҫҫӗ.

Хаҫ ӗнтӗ варринҫи сивӗннӗ пӳлӗмре (кӑмакара) кӑмрӑка тухнӑ пысӑк пуленесем выртаҫҫӗ. Смала айа-

ла йухса тулнă, унтан шăтăк витĕр валашка тăрăх çĕре ђавса лартнă такана çине йухса тăраť.

Апла ĕнтĕ пур йентен те хуплана çĕрте йывăçа хытă хĕртсен, йывăç çунмасť (мĕншĕн?) Çав йывăçран уйăрăлса темиçе тĕрлĕ йапала тухаť: кăмрăк та, кас та, смала та.



№ 28. Смала йухтармалли кăмака.

Анђах хаљ хăйă çинђенех калар-ха. Унăн çунакан вĕçне çўллелле тунăран, вăл сўнме хатĕр. Çунакан вĕçне хăвăртрах тайăлтаратпăр та, хăйă каллех ђĕрĕлсе çулăмланса çунаť. Мĕншĕн хăйă сўнет, мĕншĕн каллех ђĕрĕлсе çунма пуçлаť?

Смала кăмакинђи йывăçсем айккинђи кăмакасене хутнипе вĕриленеççĕ, пиçеççĕ. Хăйă çинђе те çавăн йевĕрлĕрех: çунакан çĕртен (вут кутĕнђен) тухакан шурă кас çунса йунашарти вырăна хĕртет, пĕçертет. Пĕçертнĕ çĕрте хăйăран шурă кас уйăрăлса тухаť.

Ҫапла хӑйӑ йерипен хӑйне хӑй вӗрилептерсе, пӗҫерт-се, каса, тата кӑмрӑка тухса пырать. Хӑййа ҫунакан вӗҫӗпе ҫӳлелле тусан, вӑл сӳнет, мӗншӗн тесен ҫунакан кас ҫӳлелле кайса йунашар вылтакан вырӑнсене вӗрилентерейместь, ҫавӑнпа вара хӑйӑран кас та уйӑрӑлса тухмасть, кӑмрӑк та уйӑрӑлса тухмасть. Кас ҫук, ҫулӑм та ҫук.

Хӑйӑ ҫинҫен калаҫма ҫитӗ ӗнтӗ. Вӑхӑт нумай иртрӗ. Епӗ ҫӗнӗ кӗнеке тӑрӑх сӑмахсене тепӗр хут вуласа тухатӑп та, ҫывӑрма выртатӑп. Хӑйӑ тыткӗҫӗнҫе тӑракан хӑйӑ ҫунса пӗтрӗ, пӳртре тӗп-тӗттӗм пулҫӗ.

## Пирӗн ура айӗнҫе мӗн пур?

Ура айӗнҫе мӗн пулма пултарать? Ҫӗрсӗр пуҫне мӗскер пултӑр: ҫийелте вӑл ҫеремлӗ, айаларах — хӑйӑр, йе тӑм. Нӳхреп валҫи шӑтӑк ҫавнӑ ҫухне ҫав виҫӗ тӗрлӗ ҫӗр тӗл пулкалать. Хӑш ҫӗрте, тӑмпа хӑйӑр хутӑш ҫӗрте, ҫулсем те лекеҫҫӗ: шултрисем те, вӗттисем те. Вӗсен хушшинҫе епир пӗлекен кранит та пур. (Мӗнле ҫулсем: йакалнӑ ҫулсем-и, йе ҫивӗҫ кӗteслӗ ҫулсем-и? Мӗне пӗлтерет ку?) Ҫӗр тарӑнӑшӗнҫе хӑйӑрпа тӑм анҫах пек туйӑнать. Ҫасах епӗ ҫӗр апла ҫеҫ маррине пӗлтӗм.

Пирӗн кӳршӗсене айакран ҫырмари ҫӑлтан шыв турттарасси йӑлӑхтарҫӗ, вӗсем вара йал хушшинҫе тараса тума тытӑнҫӗҫ. Тараса ҫавакана ҫӗнҫӗҫ те ӗҫӗ ҫасах пуҫланҫӗ. Малтан ҫемҫе ҫӗр, тӑмпа хӑйӑр хутӑш пыҫӗ, ӗҫӗ те малалла хӑвӑрт пыҫӗ. Малтанхи кунах каҫпа тӑватӑ кӗтеслӗ шӑтӑка, ҫӗр ишӗлесрен, йывӑҫран тунӑ пура антарҫӗҫ. Тепӗр кунне валне майлаштарса лартрӗҫ те, тарасари тӑпрана патйепе кӑлара пуҫтарӗҫ. Малтан патйепе те ҫемҫе тӑпрах: тӑм, йе хӑйӑр кӑларса пыҫӗҫ. Акӑ ҫемҫе тӑпрасем пӗтрӗҫ, ҫавакансем ҫара ҫул сине ҫитрӗҫ. Ӗҫлеме йывӑртарах пулҫӗ. Тимӗр кӗреҫене пӑрахса лумпа ӗҫлемелле пулҫӗ. Лумпа ҫулсене катса хырса патйесем ҫине хурса кӑлармалла пулҫӗ. Авӑ патйепе ҫулсене кӑларҫӗҫ.

ӡулӗсем кирпӗҫ тӗслӗ, вӗсенӡен хӑйӑр пӗрӡисем тӑкӑнкалаҫҫӗ. Ӡул тӑрӑх пуртӑ тӑршӗпе ҫапсан, вӑл саланса хӑйӑр пулаĭ. Ҫавӑнпа ӑна хӑйӑрӡул теҫҫӗ. Курӑнсах тӑраĭ: ҫак ӡул ҫӗр айӗнӡе пусӑрӑнса выртнӑ хӑйӑртан пулнӑ, анӡах хӑйӑр пӗрӡисем пӗр-пӗринпе ҫирӗпех ҫыхӑнайман.

Виҫ-тӑват кунтан хӑйӑрӡул пӗтрӗ, лум тата хытӑрах ӡул ҫине лекрӗ. Патйе шурӑрах тӗслӗ ӡул татӑкӗсене илсе тухрӗ. Епӗ ӑна пуртӑ тӑршӗпе персе пӑхрӑм та ӡасах ватаймарӑм. Интереслӑ, пенӗ ӡухне ӡултан хӑма йевӗрлӗ татӑксем пулаҫҫӗ, вӗсен таӡӑкӑшӗ пурин те пӗр пек мар, тӗрлӗ. Ваттисем мана—„ҫак ӡултан исвесткӑ хатӗрлеҫҫӗ, ҫавӑнпа ӑна исвӗсӡул (вырӑсла „известняк“) тесе калаҫҫӗ,“—терӗҫ.

Тараса ӡавас ӗҫ куллен-кунах малалла пыраĭ, кашни кун тарӑнтан тарӑна ӡавса анаҫҫӗ, патйепелен темиҫе тӗслӗ ӡул кӑларса пыраҫҫӗ.

Тахҫантанпах манӑн тараса ӑшне анса пӑхас килеӡӡӗ. Аттерен ыйтрӑм. Атте мана ӡармарӗ. Патйене кӗрсе тӑтӑм та, вӗрентен тытса, айалалла йарӑнтартӑм кӑна. Ӡасах тӗттӗм ҫӗре пырса ҫитрӗм. Темскерле киӡемлӗ туйӑнса кайрӗ. Анӡах ӡасах айалти хунар ҫутти курӑна пуҫларӗ. Акӑ, епӗ те тараса тӗпӗнӡе.

Унта мана тарасанӑн стенисем ҫара ӡултан пек туйӑнӡӗҫ. Лайӑхрах тинкерсе пӑхсан, епӗ исвӗсӡулӗнӡе темиҫе тӗслӗ сисем (сӑйсем) выртнине курах кайрӑм: унта шурӑ тӗслӗ си те, кӑвак тӗслӗ си те, сарӑрах тӗслӗ си те пур. Си ҫинӡе си пӗлӗм купи пекех выртаҫҫӗ. Тарасара йӗпе те, сивӗ те; ҫавӑнпа епӗ ҫӳле васкарӑм.

Исвӗсӡула тата пӑртак кӑларсан, тараса ӗҫне пӗлекен маҫтӑр—„айалти сисенӡен шыв туха пуҫларӗ,“—терӗ. Вӑл шыва тытакан си патне ҫитнӗ иккен. Ӡӑнах та, хаӡ тараса тӗпӗнӡен йӗпе ӡулсем киле пуҫларӗҫ.

Ку йышши ӡул та (исвӗсӡул) пӗтрӗ. Тараса тӗпӗнӡен хӗрлӗрех тӗслӗрех тӗслӗ ӡул татӑкӗсем хӑпара пуҫларӗҫ. Ку—ҫемҫе ӡул. Ана ҫӗҫӗпе касма та, щӑлпӑ

кышлама та пулаТ, Тути унӑн тӑм тутийех. Вӑл ҫӑнах та тӑм, анҫах вӑл ҫӗр айӗнҫе выртса пусӑрӑннӑ тӑм, ҫавӑнпа та ӑна „т ӑ м л ӑ с л а н е ц“ теҫҫӗ.

Ҫак ҫултан епир, пӗҫӗкҫӗ ҫухне, ҫӗҫӗпе касса ҫей ҫашкисем, ытти выҫамалли савӑтсем туса, вӗсене шыв тултарса ҫей ӗҫмелле выҫаттӑмӑр.

Хаҫ ӗнтӗ маҫтӑр, тӑмлӑ сланеца шӑтарасран хӑраса, йериперех, тата лайӑхрах пӑхкаласа ӗҫле пуҫларӗ. Тӑмлӑ сланец шыва тытса тӑраТ, ӑна шӑтарсан, шыв айалти сисене кайма пултараТ.

Тараса тӗпӗнҫе шыв ҫылай пуҫтарӑна пуҫласан, маҫтӑр, ҫавтарма пӑрахса, тарасана пура антарҫӗ. Унтан тараса тарӑнӑшне виҫсе пӑхрӗҫ: шыв патне ҫитеҫҫен сакӑр ҫалӑш иккен.

Акӑ мӗн интереслӑ: вӑл хӗлле те, ҫулла та пӗр пекех сивӗ. (Термометӑрпа унӑн температтурне виҫсе пӗлӗр). Апла ӗнтӗ ҫӗр айӗнҫе тарӑн вырӑнта ҫулӗпех пӗр пек температтурӑ тӑраТ. (Хӗлле тарасари шыв та, ҫӑлти шыв та ҫуллахинҫен ӑшӑрах пек туйӑнаТ. (Мӗншӗн?)

Пире кура, кӳршӗ йалсенҫе те тарасасем тӑва пуҫларӗҫ. Унта та ҫулсем пирӗн тарасари пекех тухса пынӑ.

Ҫак вӑхӑтранпа епӗ ҫемҫе тӑпра ҫийелте ҫеҫ выртнине, ҫӗр айӗнҫе, тарӑн вырӑнта, ҫулсем анҫах выртнине лайӑх пӗлсе ҫитрӗм.

Ҫул йӑхӗсем тӗсӗ тӗлӗшӗнҫен те, мӗнрен пулни тӗлӗшӗнҫен те, хытлӑхӗ тӗлӗшӗнҫен те тӗрлӗ пулаҫҫӗ. Вӗсем пӗр-пӗрин ҫинҫе нумӗрлесе тухнӑ кӗнекери листасем пекех выртаҫҫӗ. Тӳрем ҫӗрте ку курӑнмасТ, тарӑн ҫӑнкӑ ҫырмасенҫе ҫӗр йӑхӗсем силӗ выртни лайӑх курӑнаТ.

Ҫавӑн пек ҫӑнкӑ ҫыран Пӑла ҫырминҫе пур. Ҫав тӗлте унӑн тӗпӗнҫе тӑмлӑ сланец, ҫыранӗнҫе исвӗсҫулӑн сийӗсем курӑнаҫҫӗ. Исвӗсҫулӗ ҫурӑлкаласа пӗтнӗ: унтан хӑма йевӗрлӗ татӑксем пулнӑ, вӗсене хӑмасене туртса кӑларнӑ пек кӑларма пулаТ. Вӗсен ҫурӑкӗсенҫен тарасари пек сивӗ ҫӑл шывӗ персе тӑраТ.

Пӗрре епӗ Пăла ҫырми тӗпӗнҙен пирӗн йал мӗн ҙухлӗ ҫӳлте ларнине шутласа кăларма тытăнтăм.

Ҫырма хӗррин ҙи ҙăнкă ҫӳллӗшне вӗренпе виҫрӗм, ҫырма хӗрринҙен пуҫласа йал патне ҫитеҙҙен выртакан тайлăмăн ҫӳллӗшне куҫпа ҙухласа пӗлтӗн. Мӗн пурӗ вунă ҙăлăша йахăн тухрӗ.



№ 29. Ҙул йăхӗсем сийӗн-сийӗн выртаҫҫӗ. Ҫийелте — тăпра. Тăпра сийӗ айӗнҙе — хăйăрпа тăм хутăш выртаҫҫӗ, унта ҙулсем те пур. Тата айаларах сийре — тăм. Тăм айӗнҙе — исвесҙак, тăмлă сланец. Сирӗн таврари ҙул йăхӗсем мӗнле йӗркепе сийленсе выртаҫҫӗ? Танлаштарса пăхăр-ха.

Ҫырмара та йалти ҫӗр айӗнҙи пекех исвӗсҙулăн сийӗсем, тата тăмлă сланец сийӗсем выртаҫҫӗ пулмалла.

Шыв хӗрринҙе кранитран пулнă йăка ҙулсем тӗл пулкалаҫҫӗ. Вӗсем ҫурхи шывсем ҫырансене ҫурса ватнă ҙухне ҫырансенҙен ӳкнӗ пулмалла.

## Мӗншӗн тăмлă тăпра ҫинҙе тырă-пулă (ытти ҫимӗҫсем те) хăйăрлă тăпра ҫинҙинҙен лайăхрах пулать?

Пирӗн вулăсра йалсем пур те шывăн сулахай йенне ларса тухнă. Вӗсем пур те шыв йеннелле тайăлса анакан сăрт ҫинҙе лараҫҫӗ. Ҙас-ҙасах епӗ пӳрт

тăрне улăхса ларса, таврари çĕр-шыва пăхса килеттĕм, тахсанҫҫенех пăхас килеҫҫĕ. Пĕтĕм таврари çĕр-шыв питĕ лайăх курăнаҭ ĕнтĕ кунтан.



№ 30. Шыв айлăмĕ.

Кунтан йал патĕнҫен çырманалла шыв хĕрнелле хирсем тăсăлса анаççĕ. Хирсем пĕтнĕ çĕрте айалта шурă ленттă пек авкаланса, улăхсен курăкĕсем айĕнҫе пытанкаласа, шыв йухаҭ. Çырмăн леш айккинҫе ҫăнкă çыран хĕррипе стена пек вăрман тăраҭ. Пиртен сылтăмалла та сулахайалла та шывăн ку йенҫе унта та кунта йалсем. Хыçалалла тӳрем çĕр сарăлса выртаҭ, унта хурапус, унта кĕтӳсем те. Вĕсен хыçĕнҫе айакра курăк çӳллĕш курăнакан вăрман.

Пирĕн çĕр пысăк канав йевĕрлĕ: унăн тĕпĕнҫе çырма йухса выртаҭ, айккисенҫе еретпе йалсем лараççĕ.

Мĕншĕн шывăн леш айккинҫе йалсем ҫуккине епĕ пĕлетĕп: унта тырă акмалли путлĕ ҫĕр ҫук, ҫара хăйăр анҫах. Унта наҫар ҫĕре те килĕштерекен хырă вăрманĕ ахалех ӳссе ларман пуҫ ҫав.

Шывăн пирĕн йенҫе апла мар. Кунта сăртран шыв патнелле хура тăпралă, мăнтăр тăмлă тăпра пырат, ҫав тăпра ҫинҫе тулăпа урпа аван пулат. Айаларах—хăйăрлă тăпра, унта тăм сахал, хăйăр ытларах. Ҫак ҫĕрте ырашпа сĕлĕ анҫах пулат. Тата айаларах хăйарлă тăпра хăйăра тухат. Унтан хăйăр ырăнсем улăх выртакан тапа персе тухаҫҫĕ.

Шыв тăрăх ҫӳлелле те айалалла та йалтан-йала ҫӳресен, пур ҫĕрте те пĕр карттинă куратпăр: тăмлă тăпра шыв патне аннăҫемĕн хăйăра тухса пырат. Пирĕн асаттесем, ĕлĕк авал шыв тăрăх ларса пынă ҫухне, шывăн сулахай йенҫе выртакан лайăх тăмлă тăпра ҫине ларса йалсем туса пынă.

Ку тăмран йĕпе вăхăтра асапĕ те сахал мар вара. Ҫумăр шывĕ кашни шăтăкра, кашни путăкра тахҫанҫҫенех тăрат, ырăнĕ-ырăнĕпе кӳлленсе, лаҫакасем пулса тăрат. Типĕ ҫанталăкра ҫул пек хытăскер, халĕ тăм кӳпсе сарăлса ҫăрăнса кайса, урасене, урапасене калама ҫук йавăнтарат. Вăл ҫыпăҫса йавăннипе, урана аран туртса кăларатăн,—ҫав тери асаплантарат вăл пире. Ҫылай вăхăтран тин шывĕ сăрхăнса кайат, ҫĕрĕ типет. Айалти хăйăр тăрăх пыракан ҫул ҫасах типрĕ. (Мĕншĕн?)

Тăмран халăха хĕн-хур тивет пулсан та, халăх ăна тӳсет, мĕншĕн тесен вăл лайăх тырă - пулă парат.

Малтан епĕ тăпрара тăм пуртан ҫеҫ тырă - пулă лайăх пулат тесе шухăшлаттăм. Унтан, пысăкланнăҫемĕн, тырă пуласси пуринҫен ытла тăмран мар, урăх йапаларан килнине пĕлтĕм.

Ҫывăхри уйсемсĕр пуҫне пирĕн тата айаккарах вăрман айĕнҫе те акаҫҫĕҫ. Вăрман айĕнҫи ҫĕре хирти ҫĕр пек пĕрмайах акмаҫҫĕ: 8-10 ҫулҫҫен ĕҫлесен, ҫавăн ҫухлех вăхăта ăна пăрахса кантараҫҫĕ. Ҫĕр вара ҫеремленсе, тĕмленсе ҫĕнелет.

Пăрахнă çĕре малтанхи хут сухаланă ӡухне акапуçĕ (плук) ăна касса, çеремне айалалла, ӳсетăран тымарĕсене çӳлелле туса çавăрса пăрахса пырать. Хура тăпралă çерем айĕнӡе кĕл йевĕрлĕ шурă тăпра. Шăтăка çав тăпра çине шыв йарсан, шыв ун витĕр, хăйăр витĕр тухнă пекех, ӡасах сăрхăнса анать. Вăл ӡăнахах та хăйăр, анӡах сарă хăйăр мар, вĕтĕ пĕрӡĕллĕ шурăрах хăйăр.

Апла ĕнтĕ вăрман айĕнӡи çĕр çийелте хура тăпралă, айалта кĕл пек. Тăпра мĕнлине епĕ тĕппипе кайран тин пĕлтĕм. Хирте суха тунă çĕрте епир пур тăпрана та кураймастпăр, мĕншĕн тесен акапуçĕ çур аршăнран тарăн сухаламасть. Хăш ӡухне акапуç тарăнтарах та илет, ун пек ӡухне вара çĕр айĕнӡен тутăх тĕслĕ, йе хăмăр тăпра йавăнса тухать. Ку ĕнтĕ виççĕмĕш, ӡи айалти тăпра.




№ 31. Çĕре касса кăтартнă. A — çĕрĕн сийелти хура сийĕ. B — вăтаçĕрти çутă си, C — айалти си, D — тăм йе хăйăр, йе тăмпа хăйăр.

Ку тăпра мĕн ӡухлĕ тарăнта выртнине сухаланă ӡухне курма хал çук. Ăна курас тесен, тӳрем çĕре аршăна йахăн тарăн ӡавас пулать. Вара шăтăк айккисенӡе (стенисенӡе) виçĕ тăпраран кашни тăпран хулăнăшне аван курма пулать. (Кашни тăпран хулăнăшне сантиметăрпа йе вершукпа виçĕр. Вĕсем хăйсен тĕсĕ-пиӡĕпе пĕр-пĕринӡен мĕнпе уйăрăлса тăраççĕ?)

Тутӑх тӗслӗ тӑпра айӗнҫе йаланах йе кӑвак тӑм, йе хӑйӑр выртаҫ. (Ҫырма хӗррисенҫе, канав хӗррисенҫе, ытти ҫӗрте те тӑпра сийӗсем йепле выртнине, тата тӑпра айӗнҫи ҫул йӑхӗсем йепле выртнине, вӗсен хулӑнӑшне сӑнаса астуса ҫӳрӗр).

Сухаласа хунӑ ҫӗнӗ ҫӗр ҫуркуннеҫҫенех выртаҫ. Ку вӑхӑта курӑк тымарӗ ҫӗрсе пӗтет. Унтан ӑна иккӗмӗш хут тарӑнтарах сухаласҫӗ. Кайран сӳре, ҫӗрнӗ ҫеремлӗ ҫӗре ватса вакласа, хура тӑпрана кӗллӗ тӑпрапа хутӑштараҫ, вара тӗттӗм саланҫӑклӑ тӑпра тухаҫ. Канса выртнӑ ҫӗнӗ ҫӗрте кирек мӗнле тырӑ та аван пулаҫ, пуринҫен ытла сӗлӗ авантарах пулаҫ.

Виҫ-тӑват хут аксан, ҫӗр каллех наҫарлана пуҫлаҫ: 8-10 хут ытла парас вырӑнне виҫ-тӑват хут ытларах анҫах параҫ. Ҫӗре каллех канма парас пулаҫ. Мӗншӗн ку ҫӗр хӑйӗн хӑватне ҫас пӗтерет-ши?

Ырханланнӑ ҫӗре лайӑхрах пӑхар-ха. Унӑн тӗсӗ те ӗлӗкхи пек мар: каннӑ хыҫҫӑн сухаласан, унӑн тӗсӗ хураҫҫӗ, халӗ вӑл шуралса кӗл пекрех пулса кайнӑ. Апла ӗнтӗ ҫийелти ҫеремлӗ тӑпрара та ӳсетӑран хушшинҫе кӗллӗ тӑпрапа хӑйӑр пулнӑ пулмалла. Ун ҫинҫе пулнӑ ӳсетӑран ҫӗрнипе, ҫийелте ҫӗрнӗ хура тӑпра пулнӑ. Ҫав ҫӗрнӗ хура тӑпра пур ҫухне тӑмлӑ тӑпра ҫинҫе те, хӑйӑрлӑ тӑпра ҫинҫе те тырӑ лайӑх пулаҫ. Ҫӗрнӗ тӑпра пӗтсенех, тырӑ пулми пулаҫ.

Ҫапах та мӗншӗн ҫывӑхри хирсенҫе тырӑ пуласси наҫарланмасҫ? Кашни хресҫен кӑна хирӗҫ калӗ: мӗншӗн тесен вӗсене тислӗк тӑкса ҫӗнетеҫҫӗ,—тийӗ.

Ҫӑнахах та ҫывӑхри анасене кашни виҫӗ ҫултан тислӗк тӑкса пыраҫҫӗ. Тислӗке тикӗсрех сапаласа (мӗншӗн сапалаҫҫӗ?), акапуҫпе сухаласа хӑвараҫҫӗ. Кайран-кайран тирӗсрен ҫӗрнӗ тӑпра пулаҫ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ ҫывӑхри хирсем хура тӑпралӑ, тырра та аван пултараҫҫӗ. Айакри вӑрман айӗнҫи хирсем, тирӗс курмасӑр тӑнипе, хӑвӑртрах ырханланаҫҫӗ. Канма парсан, вӗсен те ҫӗрнӗ тӑпра пулаҫ.

Кунта нумайӗшӗ акӑ мӗн ҫинҫен ыйтӗҫ: ӗҫ ҫӗрнӗ тӑпрара ҫеҫ пулсассӑн, мӗншӗн тӑмлӑ тӑпра ҫинҫе

тырӑ лайӑхрах пулаҭ, хӑйӑрлӑ тӑпра ҫинҫе наҫартарах, вӗсене пӗр пек тирӗсленӗ пулсан та?—тийӗҫ.

Хӑш ыйтусене хирӗҫ сӑмахпа мар, ӗҫпе йе оппӑтпа анҫах калама пулаҭ. Ҫав ӗҫе йе оппӑта курас пулаҭ, йе хамӑрӑн тӑвас пулаҭ. Акӑ ҫакӑн пек ҫӑмӑл оппӑт туса пӑхӑр, вара есир хӑвӑр ыйтни ҫинҫен ҫасах пӗлӗр.

Хӑвӑр тунӑ варинккене, йе краҫҫин тултаракан варинккене илсе, унӑн шӑтӑкне тутӑр татӑкӗпе питӗрӗр те, варинкке ӑшне хӑйӑр йарса, ун витӗр тислӗк шывне йухтарӑр (тислӗк шывӗпе аппаланас килмесен, ҫей шывне, йе утӑ шывне илме йураҭ). Унтан ҫак оппӑта варинкке ӑщне хӑйӑр вырӑнне тӳнӗ тӑмӑн пурушукне хурса тӑвӑр. Хӑйӑр витӗр сӑрхӑнса тухакан шывпа тӑм витӗр тухакан шыв хушшинҫе пысӑк уйрӑм курӑр. (Мӗнле уйрӑм?) Кунта тата вӑхӑт тӗлӗшӗнҫен те пит пысӑк уйрӑм пулмалла: хӑйӑр витӗр шыв пӗр вӑхӑтра тухаҭ, тӑм витӗр—тепӗр вӑхӑтра. (Кашни оппӑт хӑҫан пуҫланнине, хӑҫан пӗтнине, варинккерен тумлама ҫарӑннине ҫырса хурӑр).

Курӑнсах тӑраҭ: хӑйӑр ирӗлнӗ йапаласене хӑй витӗр шывпа кӑларса йараҭ, тӑм вӗсене ҫарса тӑраҭ. Апла пулсан, нумайҫҫен ҫӑвакан ҫумӑрсем хӑйӑр хушшинҫи тырӑ-пулла кирлӗ йапаласене ирӗлтерсе хӑйӑр витӗр йухтарса кайаҫҫӗ. Тӑмлӑ тӑпрара кирлӗ йапаласем пур те ҫавӑнтах йулаҫҫӗ. Хӑйӑр ҫине тислӗк тӑксан, тислӗкӗн усӑллӑ пайӗсем нумайӗшӗ хӑйӑр витӗр ҫумӑрпа айалалла сӑрхӑнса тухаҫҫӗ. Ҫавӑнпа хӑйӑр ҫинҫе тислӗк усси нумайа пымасҭ. Тӑмлӑ тӑпра ҫинҫе тислӗк усси вӑрӑма пыраҭ.

## Шурлӑхра.

Епӗ малтанхи хут вӑрманта шурлӑха тухсан, шурлӑх хӑйӗн тӗсӗ-пиҫӗпе мана йӑлтах тӗлӗнтерҫӗ. Куҫ курнӑ таран сылтӑмалла та сулахайалла та уҫланкӑ выртаҭ; те шыв уҫланки, те ҫӗр уҫланки. Пӑхсассӑн, вӑл кӑвак мӑк ӳсекен йӗпе ҫӗр пек те туйӑнаҭ. Ан-

ҫах унта кĕме тапăнсанах, урасем темскерлĕ лаҫака ăшне ҫĕркуҫҫи таран ҫăрăнса кĕреҫҫĕ. Хăвăртрах урасене кăларса ҫывăхри хытăрах вырăна улăхса, ăҫта каймаллине, мĕнле каймаллине, мĕн тумаллине шухăшлакаласа пăхкаласа тăратăн.

Хытăрах вырăнсен айĕнҫе ҫĕр тăкăсрах,—ҫавăнпа вĕсем тăрăх утма пулаĭ. Ҫапла хытăрах вырăнсем тăрăх, ăҫта—сиксе, ăҫта—шыв тăрăх утса, шурлăхăн тепĕр йенне асаппа каҫма пулаĭ.

Ҫӳлĕрех вырăнсенҫе темскерле лутра тĕм-йывăҫсем, хăш ҫĕрте хырăсем те тĕл пулкалаҫҫĕ. Мĕнле хырă вара ку? Наҫарскер, ҫинҫескер, лутраскер, кĕске йĕплĕскер. Ăна пăхса ҫухласан, 10 ҫултан ытла пама ҫук. Анҫах ăна касса ункисем тăрăх вăл миҫе ҫултине шулама тытăнсан, тĕлĕнсех кайаҭăн: ҫак вĕтĕннĕ хырă 40-50 ҫулта. Пурне те килĕштерекен хырă та шурлăхра наҫар ӳсет пулсан, шурлăх тĕрĕссипе ӳсетăрансемшĕн (йывăҫ-курăксемпĕн) латсăр, йурами вырăн. Тымарсем пĕрмайах шыв айĕнҫе тăрсан йепле пурăнма маĭ пултăр унта! Ҫитменнине тата шывĕ те таса шыв мар, темскерле сарăскер. (Астăвăр-ха: сарални мĕнтен пулаĭ?) Ҫавăн пек шыв ҫасах йӳҫсе кайса ӳсетăрансене сиен тăваĭ.

Анҫах „тутлăх тĕлĕшĕнҫен, тĕс тĕлĕшĕнҫен йулташ ҫук“ теҫҫĕ.

Шурлăхри кăвак мăк ҫавăн пек ҫĕрте пурăнатех, лайăхах пурăнаĭ. Нӳр мĕн ҫухлĕ ытларах, ҫавăн ҫухлĕ вăл вăйлăрах, лайăхрах ӳсет, сарăлса минтерленсе кайаĭ.

„Етемшĕн шурлăхра ним те ҫук, унта ҫӳресси те ҫук,“—тесе шухăшлаттăм епĕ. Анҫах епĕ йунăшрăм: шурлăх та уссăрах мар.

Ҫылай пысăклансан, епĕ кӳршĕсемпе ҫулталăкра икĕ хут шурлăха кайкалаттăм. Малтанхи хутĕнҫе ҫулла варринҫе тутлă шăршлă морошкă (сарă ҫырла) ĕлкĕрсен, тепĕр хут—ҫенĭапĕр уйăхĕн пуҫламĕшĕнҫе клӳквă пуҫтарма. Ҫак икĕ ҫырла—шурлăх аҫисем. Вĕсен шултра мар аврисем шурлăхри хытăрах вырăнсенҫе сарăлса выртаҫҫĕ: унта нӳр ытлашши нумайах мар.

Шурлăхра тата пĕр кирлĕрех пахалăх пур,—епĕ ăна тĕл пулнă майпа пĕлтĕм.

Пĕр çул пирĕн çĕрте пит хĕрулĕ çумăрсăр типĕ çулла тăҫĕ. Вăрманти шывсем, пĕҫĕкçĕ кӳлĕ таврашĕсем типсе пĕтрĕç; пирĕн шурлăх та йăлтах типсе ларҫĕ. Ун пек ҫухне вут таврашне лайăх пăхас пулаҭ, унсăрăн ҫасах пушар пулма пултараҭ, пуринҫен ытла вăрманта. Çапла пирĕн вăрманта та пушар тухрĕ. Вăл шурлăх патне çитсен, шурлăх та çуна пуçларĕ. Анҫах вăл çулăмсар çунҫĕ: тĕтĕме мăкăрлантарса, сăмсана çуракан шăршă кăларса ҫĕрĕлçе выртрĕ, çĕр айĕнҫе те çунҫĕ.

Малтан епĕ шурлăхри çĕр мĕншĕн çуннине тавçарса илеймерĕн. Унтан, шурлăхри çĕре лайăхрах тинкерсе пăхсан, епĕ вăл ахаљ çĕр пек маррине куртăм. Мăк айĕнҫен илнĕ шурлăх ҫăмаккине ахаљ тăпрапа танлаштарсан, вăл пит çăмăл туйăнаҭ; йывăрлăх йенҫен вăл кустарса ҫăркана утă йеверлĕ.

Шурлăх ҫăмаккине алла илсе пăхсан, унта акă мĕн курма пулаҭ: унта мăк тымарĕсем те, мăк тураҫĕсем те пур, хыра йĕпписем те тĕл пулкалаççĕ. Апла пулсан, шурлăхри крунт, тепĕр тĕрлĕ каласан, торф шурлăхра ӳсекен мăкранах пулнă. Йепле капла пулнă-ха вăл? Çакăн çинҫен тĕплĕрех сӳтсе йавар.

Ирхи çуркунне, йур кайсанах, шурлăха кайса килер. Епир кайни ахалех пулмĕ: епир унта сĕткенлĕ тутлă клӳквă пуçтарăпăр. Хĕллехи сивĕсем ăна пĕтермен, тутлăлантарнă анҫах. Çак вăхăтра епир кунта çырлашĕн килмен. Епир торф пулакан мăка пăхмашкăн килнĕ.

Мăкĕ çамрăк йешĕпе йешерсе выртаҭ. Хĕллехи ыйăхран вăранса, нимĕскер пулман пекех, вăл пĕлтĕрхи пурнăçпа пурăнма, ăна тăсма тытăнаҭ. Анҫах, тĕлĕнмелле: кирек мĕнле йывăç та, курăк та, вăхăт иртнĕ майĕпе, çӳлелле ӳссе пыраҭ; мăк çӳлелле ӳсмест: вăл кăçал та пĕлтĕрхи пекех, вунă çул каялла та çавăн пекех пулнă. (Мăк тăрăщшĕне виçсе пăхăр).

Мăкăн айал йенне пăхар. Кунта тымарсем мар, мăкăн тымарĕсем çип пек çинçе, кунта мăк кĕпçисен айалти хăрнă пайĕсем. (Мăкăн тĕсĕ айалалла йепле улшăнса пынине сăнаса пăхăр).

Паллă ĕнтĕ: çийелтен мăк мĕн ђухлĕ ÿсет, çавăн ђухлĕ вăл айалтан хăрса пыраť. Хăрнă пайĕ шыва лексе, ытти курăксен тымарĕсем тăпрара çĕрнĕ пек, çĕрмест, кăмрăкланаť, хуралаť анђах.



№ 32. Шурлăхри мăк.

Шывра йапаласем хуралнине епĕ тата кивĕ кĕпер свайĕсем çинђе куртăм; свайсен шывран тухакан пайĕсем çĕрсе кайнă, шывра тăракан пайĕсем пĕртте çĕрмен, хуралса анђах кайнă. Апла ĕнтĕ нÿрлĕ сывлăшра тăракан йапала ђасах çĕрсе кайаť, шыв айне лекекен йапала çĕрмест, мĕншĕн тесен шывра сывлăш йе сахал, йе пĕртте çук. (Асăрхăр: мĕнле тăпрара шаљçасем хăвăртрах çĕреççĕ: тăмлă тăпрара-и, хăйăрлă тăпрара-и? Мĕншĕн?)

Шурлăх тĕпĕнђи мăка илсе пăхар. Вăл хурарах та, тăкăсрах та. Унта мăк турађĕсем ванса кăмрăкланса кĕççеленсе кайнă.

Нуша килсен, торф вут вырăнне кăмакасем ваљљи кайасси палă -сах тăраť. Пирĕн çĕрте ку таранђђен вăрман ђылай-ха, çавăнпа торф кăларасси çинђен шухăшламаççĕ. Анђах епĕ Мускав патĕнђе торф патне çитни çинђен илтнĕ. Унта вăрмансем сахал, хапрăк-савăтсем вутта нумай ыйтаççĕ. Вара ахаљ выртакан шурлăх кăмрăкне ĕçе йађĕç.

Çапла ĕнтĕ торф пулакан шурлăхсем çутçанталăк хатĕрлесе хунă склатсем пек пулса тăраççĕ, çав склат-

сенҫе выртакан хутмалăх (хутмалли) йапаласем тахҫана та ҫитмелле.

Анҫах йепле пулса тăнă-ши ҫак шурлăх? Кунта шурлăхра епир ăна пĕлес тесен, хамăр тавра кăшт та пулсан шурлăх йевĕрлĕ вырăнсене шырамалла.

Авă, улăхра шыв выртакан тахҫанхи шăтăк, ăна шывра пулакан ӯсетăрансем йăлтах пуснă. Авă, курăкланса кайнă кивĕ пĕве. Авă тата кӯлĕ, варринҫе тасаскер, хĕррисенҫе хăмăшлă-курăклăскер.



№ 33. Кӯлĕ шурлăха тухни. Ҫыран патĕнҫи курăксем хушшинҫе мăклă шурă вырăнсем курăнаҫҫĕ.

Есĕ кӯлĕ шывĕ патне пырасшăн, анҫах урасен айĕнҫи ҫыран авăнаť, путас пекех туйăнаť. Пăхатăн: есĕ торф пулакан мăк ҫине пуснă иккен. Вăл, тăкăс кавир пек сарăлса кайса, шыв тăрăх тепĕр ҫырана каҫма тытăннă; леш ҫырантан ăна хирĕҫ ҫавăн пекех сулă тухнă.

Вĕсем хирĕҫ пулса кӯлле пытарнине епир курас ҫук. Кăна темиҫе ҫĕр ҫул кĕтес пулаť. Ҫапла кайран,

нумай вăхăтран, кӳлĕ шурлăха тухать. Анҫах мăк айне пулнă шыв хăй ҫинҫен пĕлтермесĕрех тăмĕ.

Тен, тепĕр ҫĕрте есир шурлăхри крунт урасен айĕнҫе тытайманнине, пуссан унта-кунта тайăлнине тĕл пулнă тăр. Вăл—ҫийелтен мăкпа витĕнннĕ кӳлĕ.

Вырăсла ăна „трясина" теҫҫĕ.

Темиҫе ҫĕр ҫул та иртсе кайĕ, вăл шурлăха тухса кайĕ. Кӳлле хупласа выртакан мăкăн айалти сийĕ хăрса, вана-вана кӳлĕ тĕпне ларса пырĕ, кӳлĕ тĕпĕпе ҫийелти хуплавҫă хушшине тултарса пырĕ. Ҫапла кӳлĕ пĕтсе ларĕ, ун вырăнне шурлăх пулса тăрĕ.

## Ђӗрђунсемпе ӳсетӑран пурӑнӑҫӗнђен

# Ҫӗлен.

Епӗ вырӑсла кађуккӑ тенӗ хурӑн-ҫӗлене ђи малтан курсан, питӗ хӑраса кайрӑм: хӑранипе, утма ђаранса, сиккелейми пулса тӑтӑм. Мана ман умра хура вӗрен ҫӑмхи йавӑнса пырса сиксе сӑхассӑн туйӑнђӗ. Анђах ҫӗлен, пуҫне кӑшт ҫӗклесе малалла тӑсрӗ те, авкаланса шуса, пӗр сасӑ кӑлармасӑр, ҫывӑхри вӗтлӗх айне кӗрсе кайрӗ. Ҫӗлен куҫ умӗнђен ҫухалсан кӑна мана ђун кӗђӗ, епӗ вара ҫак вырӑнтан ђупса тарса кайрӑм.

Ӳлмӗренрех епир, виҫӗ йулташ, пӗр-пӗрне хаваслантарса теветкӗллентерсе, ҫӗленсенђен пӗртех хӑрами пултӑмӑр: епир вӗсене хӑвалама та, тытма та хӑнӑхрӑмӑр.

Епир ђи малтан вӗсем ӑҫта пурӑннине йӗрлесе ҫитрӗмӗр. Вӗсем кӳлӗпе шур таврашӗнђи тӗмесен хӗвелпиттинђе пурӑнма йуратаҫҫӗ иккен. Анђах ҫакӑнтах епир йуратакан ҫырласем: ҫӗр ҫырли, хурлӑхан, хӑмла ҫырлисем ӳсеҫҫӗ. Ҫавӑнпа, ҫак ҫырласене пухма кайнӑ ђух, епир йалан вӑрӑм ҫӳхе хулӑсем тытса кайаттӑмӑр.

Хурӑн-ҫӗлене уҫӑ вырӑнта тӗл пулсан, епир ӑна хулӑсемпе ҫаптарма тытӑнаттӑмӑр. Хӑш ђухне ҫӗленсем пиртен тарса ӗлкӗређђӗҫ, хӑш ђухне анӑраса вилнӗ пек пулса тӑсӑлса выртађђӗҫ. Ҫапла анӑранӑ ҫӗлене епир мӑйӗнђен патак ҫурӑкӗпе хӗстерсе пӑваттӑмӑр та вӗлереттӗмӗр.

Пӗр вӗлернӗ ҫӗлене хӑрамасӑрах тӗрлӗ йенђен ҫавӑрса пӑхса сӑнама пулаҭ. Хурӑн-ҫӗленӗн ҫурӑмӗ тӑрӑх хура кукӑр-макар йӗр курӑнса тӑраҭ, хырӑм айӗ урлӑ унӑн симӗс-кӑвак йӗрсем палӑраҫҫӗ. Хӑш ђухне хурӑн-ҫӗлен хура-ҫӗлен йевӗрлӗ те пулаҭ, анђах хура-ҫӗленӗн мӑйӗ ҫинђе кирек хӑҫан та шурӑ йӗрсем

палăрса тăраççĕ, çав йĕрсем хурăн-çĕленĕн мăйĕ çинҫе нихăçан та пулмаççĕ. Хурăн-çĕленĕн шăл-çăварĕ хăне кура мар пысăк, çав шăл-çăвартан пайтах малалла çинçе сенĕк йеверлĕ сăнă тухса тăрать. Епир пуринҫен ытла çак сăнăран хăраттăмăр.

Çĕленсенҫен хăрами пулса çитсен, епĕ ҫĕрĕ çĕленсем мĕнле иккенне, вĕсем мĕнле пурăннине сăнасшăн пултăм. Анҫах мĕнле майпа çакна тумаллине епĕ ҫухласа илеймерĕм. Ман телейе хирĕç пирĕн таврана çула Мускавран пĕр стутент пырса пурăнҫĕ. Вăл кунĕн-çĕрĕн хирте йе вăрманра çÿреҫҫĕ, хурт-кăпшанкă тавраш йалан пуçтараҫҫĕ. Епир, аҫасем те, çак стутент хыççăн ҫупса çÿреме тытăнтăмăр, ăна хурт-кăпшанкă пухма пулăшма тытăнтăмăр.

Пĕрре епир хурăн-çĕлене хулăпа çапça анăратрăмăр та, хÿрине патак çурăкĕпе хĕстерсе ҫĕррĕн халлĕнех стутент патне сĕтĕрсе пытăмăр. Стутент пĕр кĕленҫе савăт илҫĕ те, унăн тĕпне хăйăрпа вак ҫулсем сарҫĕ, унтан савăт ăшне çĕлене пăрахрĕ. Савăта вăл çийелтен пирпе витсе çыхрĕ. Çапла вара çĕлен пирĕн куç умĕнҫех витĕр курăнакан кĕленҫе савăт ăшĕнҫе пурăна пуçларĕ. Епир çак çĕлен çине тăраниҫҫен тĕрлĕ йенҫен пăхаттăмăр.

Çĕлен вăл пĕр вырăнта кăна выртма йуратакан ҫĕрҫун. Вăл ҫулсем хушшинҫе темиçе сехет тăршĕпе пĕр сиккеленмесĕр кукăрăлса выртать. Вăл куçне пĕр хупмасăр пăхса выртать. Çĕлен куçĕ, вăл пăхни—етемме сиввĕн туйăнать, ăна шиклентерет, хăратать. Ҫипер тишкерсе пăхсан,—çĕлен куçĕ тĕксĕм виле куç пек туйăнать, вăл тир çумне çыпçăннă куçлăх витĕр курăнакан куç пек туйăнать.

Хăш ҫухне çĕлен хăйĕн сăннине тăсса унпа йĕритавра хыпаласа илет. Çакна курсан епĕ „çĕлен хăйĕн çемçе сăннипе йепле пирĕн ÿте сăхса шăтарайать-ши“ тесе шухăшласа илтĕм. Çак хамăн шухăша епĕ стутента каласа патăм.

Стутент мана: „есĕ тĕрĕс калатăн, çĕлен çав вăрăм сăнăпа сăхмасть“, терĕ.

Унтан стутент пĕр тăвар шывĕ ăшĕнҫе выртакан вилĕ ҫĕлене туртса кăларҫĕ те, унăн шăл-ҫăварне сарса кăтартрĕ. Ҫĕлен ҫăварĕнҫе ҫӳлти йанахсем ҫинҫе икĕ кукăр йĕпсем йевĕрлĕ шăл пур иккен. Стутент мана—„ҫĕлен ак ҫак шăлсемпе сăхать ĕнтĕ", терĕ. Епĕ вара ҫĕлен сăнни вăл ҫĕлен ҫĕлхи ҫеҫ иккенне тин пĕлсе ҫитрĕм.

Епир савăтри ҫĕлене мĕнле те пулин канĕҫсĕрлентерсен, вăл ҫиленсе ҫашлатаҫҫĕ. Ҫĕлен ҫашлатас умĕн хăй ăшне сывлăш туртса сывласа тултарать те, пуҫ вĕҫĕнҫе хăмпă пек сарăлса кайать, унтан ҫав сывлăша вăл ҫăварне карса йеррипен кайалла кăларать. Ҫак сывлăша кайалла кăларнă ҫух ҫĕлен ҫăварĕнҫен хур ҫашлатнă пек сасă илтĕнет.

Малтан пирĕн ҫĕлен епир кĕленҫе ҫывăхне алла тăссанах йе кĕленҫене ҫĕрнепе хырма тытăнсанах мăйне хур пек тăсса тĕллесе пуҫне сасартăк пирĕн йенелле ывăтса пăрахаҫҫĕ. Ҫак пире питĕ хăрушăн туйăнаҫҫĕ. Кĕленҫе витĕр ҫĕлен сăхма пултарайманнине пĕлсе тăрсан та епир алăсене хăвăртăн кайалла туртса илеттĕмĕр. Стутент та ҫĕлен ҫапла хăй йенне сиксе ӳксен аллине кайалла туртса илмесĕр тӳсеймесҫĕ.

Ҫĕлен савăтра пĕр ҫимĕҫсĕр икĕ уйăх ытла пурăнҫĕ. Вăл пур панă ĕҫме-ҫимене тутанса та пăхмасҫĕ.

Унтан ҫĕлен выҫăхса вилсе кайрĕ.

Ҫак ҫул ҫĕленсем ҫинҫен епир тата тепĕр тĕлĕнмелле йапала пĕлсе ҫитрĕмĕр.

Пĕрре, кĕркунне ҫитеспе, епир халиҫҫен курман хулăн хурăн-ҫĕлен тытрăмăр. Ăна тытсан, епир—„мĕнле майпа ку ҫапла шыҫăнса кӳпĕннĕ-ши", тесе шухăшлама пуҫларăмăр.

Ку вăхăтра пирĕн стутент вĕренме кайалла Мускава кайнăҫҫĕ. Унтан пирĕн те вĕренес вăхăт ҫывăхарса пынăҫҫĕ. Ҫавăнпа епир ҫĕлене шкула уҫитĕл патне леҫме шухăш турăмăр. Шкулра ҫĕлене икĕ ҫӳреҫе хушшине пăрахрăмăр та, вăл унта канлĕ пурăнса irттере пуҫларĕ.

Пӗрре аван уйӑхӗнҫе, класра вӗреннӗ ҫух, пирӗн пӗр йулташ сасартӑк, хӑранӑ сасӑпа—„ҫӗлен ҫуралана, ҫӗлен ҫуралана“, тесе ҫухӑрҫӗ. Вӑл ҫӳреҫе витӗр пӑхнӑ иккен те, ватӑ ҫӗлен ҫумӗнҫе темиҫе вак ҫӗленсем йавӑннине курнӑ. Епир пурсӑмӑр та сиксе тӑрса ҫӳреҫе патне кӗпӗрлентӗмӗр. Уҫитӗл те унта пырса ҫитрӗ. Вӑл ҫӳреҫе хушшине ҫипер сӑнаса илҫӗ те, пире тӗрлӗ тӗлте выртакан ҫӳхе тир татӑкӗсем йевӗрлӗ йапаласем ҫине аллине тӑсса кӑтартрӗ. Ҫав йапаласем ӑҫтан пулнине епир малтан пӗлмерӗмӗр. Унтан пире уҫитӗл ҫапла ӑнлантарҫӗ: „Ҫак йапаласем ҫӗлен ҫӑмартисен хупписем; хурӑн-ҫӗлен ҫӑмарта тӑвать те, ҫӑмартаран ӑна тунӑ хыҫҫӑнах ҫӗрӗ ҫура тухать“, терӗ. Ҫурасене хисеплесе илтӗмӗр те, пӗр ҫӗленрен вунпӗр ҫӗлен ҫуралнине пӗлтӗмӗр. „Пӗр вӗлернӗ ҫӗлен вырӑнне ҫӗнӗрен вуншар ҫӗлен ҫуралать иккен; ҫук, ҫырла вӗтлӗхне ҫӗленсенҫен тасатасси пулмасть пиртен“, тесе хуйхӑрса илтӗм епӗ.



№ 34. Каҫуккӑпа унӑн ҫурисем.

## Пӗве сӗлекӗсем.

Епир, аҫа-пӑҫасем, ватӑ пулӑҫӑ Ахванеҫ пулла кайасинне кӑна кӗтсе тӑраттӑмӑр. Вӑл хӑйӗн ҫыннисемпе кӳлӗ ҫине ҫитсе тетелне шыва йарса та ӗлкӗреймесҫӗ—епир кӳлӗ хӗррине пырса та ҫитеттӗмӗр.

Шыв-шур ҫинҫе тетел туртни вӑл калама ҫук илемлӗ ӗҫ. Ак, пулӑҫӑсем кимӗпе ишсе шыв варринелле сулӑнаҫҫӗ те, тетелне пӗкӗ пек кукӑр йӗр туса шыва пӑрахаҫҫӗ. Унтан вӗсем шыв хӗррине тепӗр тӗле тухаҫҫӗ те, тетел ҫунаҫӗсене йеррипен сӗтӗрме

тытӑнаҫҫӗ. Ак ӗнтӗ тетел ҫунаҙӗсем шывран пӗтӗмпех типӗ ҫӗре тухрӗҫ,—тетел серети хушшинҙе унта-кунта ҙӑлханнӑ пулӑсем йӑлтӑртатаҫҫӗ.

Пулӑҫӑсем тетеле сӗтӗрсе кӑларса пулӑсене михӗсене тултарҙӗҫ те, урӑх вырӑна куҫса кайрӗҫ. Епир ҫав вырӑнтах кӗшӗлтететнӗр, нумай вӑхӑт тӑршӗпе тетел сӗтӗрсе кӑларнӑ тӗрлӗ ҙӗрӗ вак-тӗвек йапаласенҙен тӗлӗнсе тӑратпӑр.

Ҫав йапаласем ҙӗрӗҙунсем. Вӗсем вак илемлӗ шапа-хуранӗсен ӑшне пытанса тӑраҫҫӗ. Тӑрсан-тӑрсан вӗсем хӑйсен йӑвисенҙен йӑраланса тулалла тухаҫҫӗ. Ҫак ҙӗрлӗхсем—тӗрлӗ сӗлексем. Вӗсене шыв хурҙӗсем йе шыв улиткисем теме пулаӗ. Ҫав сӗлексем тек йавӑнса йӑраланаҫҫӗ, хӑш ҙухне вӗсем, хӑйсен хуранӗсенҙен пӗтӗмпех тухса, вӗсен ҫумне кӑшт ҫеҫ ҫакӑнса тӑраҫҫӗ.

Малтан епир сӗлексенҙен йӗрӗнеттӗмӗр те хӑраттӑмӑр та. Пыра-киле епир хӑрами пултӑмӑр, сӗлек хуранӗсене алӑ ҫинҙе тытса тӑма та хӑнӑхрӑмӑр. Сӗлек хуранне алӑпа тытсанах сӗлек хуран ӑшне шала кӗрсе пытанаӗ. Хуран ӑшне пытаннӑ сӗлеке нимӗнле тӑшман та сийен тума пултараймасӗ. (Сӗлекпе хурткӑпшанка шывра кам тытаӗ?)

Шыв хӗрринҙе типсе шуралса кайнӑ пушӑ хурансем нумай выртаҫҫӗ. Ҫав сӗлек хуранӗсене пулӑҫӑсем ӗлӗкрех тетелпе кӑларса силлесе хӑварнӑ. Вӗсен сӗлекӗсем ҫӗрсе йе типсе пӗркенсе пӗтнӗ, анҙах хуранӗсем тата та хытса илемлӗленсе йулнӑ. (Тӗрлӗ тӗслӗ сӗлек хуранӗсене пуҫтарса коллекси тума тӑрӑшӑр).

Малалла, аталанарах парсан, епӗ пӗҙҙенех кимӗпе кӳл ҫинҙе ҫӳреме тытӑнтӑм. Ҫапла ҫӳресе епӗ пӗр тӗслӗ сӗлек йӑхӗ мӗнле пурӑннине сӑнаса ҫитрӗм.

Епӗ кимӗпе хуллен хӑмӑш-хӑйах ӑшне ишсе кӗреттӗм те, кимӗ хӗрри ҫине пӗкӗрӗлсе выртса, шыв ӑшӗнҙи тӗнҙе мӗнле халпа пурӑннине сӑнаттӑм. Мана пуринҙен ытла пӑра йевӗрлӗ хуран ӑшӗнҙе пурӑнакан сӗлек тӗлентереҙҙӗ. Ҫав сӗлеке пӗве сӗлекӗ (вырӑсла—прудовик) теҫҫӗ.

Вăл йухса тăман шывра пурăнма йуратаҫ. Ак, вăл, шывра ӳсекен курăк туни тăрăх шуса, шыв тĕпне анса ҫухалҫĕ. Анҫах 5-10 минут та иртмерĕ,—вăл каллех ҫав курăк туни тăрăх шуса ҫӳлелле улăхаҫ. Ак, вăл хуранне айалалла ҫавăрса пăрахрĕ те, шывран пĕтĕмпех ҫийелелле тухса тăҫĕ. Унҫҫен те пулмарĕ—вăл „п-па“ тесе паклаттарса та илҫĕ.

Ҫак вăхăтра сĕлек ҫине тишкерсе пăхсан, унăн сылтăм айаккинҫе пĕр кĕске трупа пекки тухса тăни курăнаҫ. Ҫак трупан сĕлек ҫумĕнҫин вĕҫĕнҫе пĕҫĕкҫĕ



№ 35. Ҫĕлексем. Хура пăнҫă — сывламалли миххе пыракан шăтăк.

хăмпă пек йапала курăнса тăраҫ. Сĕлек, ҫӳлелле тухсан, ҫак хăмпăри сывлăша трупа витĕр сывласа кăлараҫ иккен те, пăкă илтĕнмелле сасăпах пăклатса илет. Пăсăк сывлăша тулалла хăваласа кăларсан, сĕлек ҫав трупа витĕрех шалалла таса сывлăш сывласа илет те, хăмпине таса сывлăшпа тултараҫ.

Унтан пĕр-ик минут та иртмест,—трупи хупăнса питĕрĕнет те, сĕлек курăк туни тăрăх шыв айне анса пытанаҫ. 10-15 минут иртсен вăл каллех таса сывлăшпа сывласа илме ҫӳле хăпараҫ. Пĕве сĕлекĕ пирĕнпе пĕрех атмосферă сывлăшĕпе сывлаҫ иккен. Ҫав сывлăша пула кăна пурăнăҫĕнҫе кунĕн-ҫĕрĕн каллĕмаллĕ ҫӳлтен айалалла анса, айалтан ҫӳлелле тухса ҫӳрет.

Анҫах пӗве сӗлекӗ мӗншӗн йаланах курӑк туни ҫумӗпе шуса кӑна ҫӳрет-ши? Ҫакна сӑнаса пӗлес тесен, сӗлексене тытса пӗр кӗленҫе савӑт ӑшне кӑна йарса пӑхас пулаӗ. Ҫав савӑт ӑшне курӑк пӑрахас пулаӗ, унтан шыв тултарас пулаӗ. Ҫапла тусан, сӗлексем савӑт ӑшӗнҫе кӳлре пурӑннӑ пекех пурӑнма тытӑнаҫҫӗ. Вӗсем йалан йӑраланаҫҫӗ, йалан темӗн кирлӗ ӗҫ ӗҫленӗ пек муталанаҫҫӗ. Кӗленҫе савӑт тӗпӗнҫе йӑралансан-йӑралансан, вӗсем прупкӑ пек сасартӑк ҫӳлелле улӑхаҫҫӗ те, таса сывлӑш сывласа илсе, каллех айалалла анса кайаҫҫӗ. Вӗсем ҫапла ҫӳренӗ ҫух йалан курӑк ҫумӗпе йе савӑт ҫумӗпе шуса йӑраланаҫҫӗ. Пӗве сӗлекӗсем вӗсем шывран та ҫӑмӑл иккен, ҫавӑнпа вӗсем шыв айӗнҫе мӗнле те пулин хытӑ, йывӑр йапала ҫумне ҫыпҫӑнса кӑна пурӑнма пултараҫҫӗ. Вӗсем, ирӗксӗрех, шыв ҫине сиксе тухас мар тесе, йывӑр йапаласем ҫумне вӑрӑм тӑтӑш хырӑмӗпе ҫыпҫӑнаҫҫӗ. Ҫавӑнпа сӗлек йӑраланса шуса иртнӗ кӗленҫе ҫинҫе кирек хӑҫан та нӑймакалӑ алӑ ҫумне ҫыпҫӑнакан йӗр йулаӗ. Ҫавӑнпа шывран тулалла тухса тӑракан пӗве сӗлекне алӑпа кӑшт тӗртсенех, вӑл сасартӑк пӗрӗнсе илет те, хӑмпӑри сывлӑша кӑларса ывӑтса, шыв тӗпне ҫул катӑкӗ пек персе анаӗ. (Мӗншӗн-ши?)

Пӗрер талӑк иртсен, савӑтри курӑксене сӑнаса пӑхӑр. Есир куратӑр: курӑксен хулӑн тунисем кӑна йулнӑ, вӗсен ҫулҫисем ҫурӑлса таткаланса пӗтнӗ. Ҫав ҫулҫӑсене сӗлексем ҫисе таткаланӑ. Сӗлек курӑк тавраш не йепле ҫинине те сӑнаса илме пулаӗ. Сӗлекӗн малта, пуҫ вӗҫӗнҫе, ҫӑварӗ палӑрса тӑраӗ. Ҫӑвар ҫумӗнҫе икӗ йенҫе унӑн икӗ мӑйрака курӑнса тӑраӗ. Ҫак мӑйракасем вӗсем ҫӑнтан мӑйракасем мар, вӗсемпе сӗлек епир йапалана алӑ-урапа хыпаланӑ пек хыпаласа ҫухлаӗ, тӗпҫесе пӗлет; ҫав йапала ҫиме йурӑхлӑ пулсан, ӑна ҫӑвара ҫикме тӑрӑшаӗ.

Унтан пӗве сӗлекӗ тата та урӑх мелпе тӑранса пурӑнма пултараӗ. Ак вӑл савӑт кӗленҫи тӑрӑх шуса ҫӳрет те, тек ҫӑварне карса ӑна ҫулаӗ. Шывпа пайтах

тăнă савăт кĕленҫи симĕсленсе кайат̆, мĕншĕн тесен кĕленҫе ҫумĕнҫе тĕрлĕ вотороҫҫĕлсем, вак шыв курăкĕсем ӳсме тытăнаҫҫĕ. Ҫапла симĕсленнĕ кĕленҫене сĕлек ҫуласан, вăл ҫуланă вырăн тап-таса пулса тăрат̆. Сĕлек ҫуланипе кĕленҫе мĕншĕн тасалса ҫутални тӳрех паллă: сĕлек кĕленҫе ҫумĕнҫе ӳсекен вак курăксене ҫуласа хăй ăшне ҫиксе ҫапрĕ пулат̆. Сĕлек ҫĕлхи хытă сăран пек каштăрка та хырăҫкăлă та. Ҫак ҫĕлхене пула кăна сĕлек курăк тавраше ҫăвара пĕтĕрсе ҫикме пултарат̆.

Сĕлеке савăтра тытни пĕр ерне кăна ирттĕр,— савăт стенисен ҫумĕнҫе йе курăк хушшинҫе кĕленҫе пек ҫутă пĕҫĕкҫеҫҫĕ михĕсем курăнма тытăнаҫҫĕ. Ҫав михĕсене салатса пăхсан, вĕсем вăлҫăпа тулнă иккенĕ палăрат̆. Ҫак михĕсем сĕлек ҫăмартисем пулаҫҫĕ. Ҫапла сĕлексем пулăсем пекех вăлҫа пăрахса ĕрҫеҫҫĕ. (Михĕсенҫе миҫешер ҫăмарта иккенне шутласа пăхăр).

Ҫав вăлҫа миххисене пуҫтарса тепĕр савăт ҫине майласа хурăр. Ҫав савăта та шыв тултарăр. Нумай та вăхăт иртмĕ—михĕсем тĕттĕмленсе сăрăланса кайĕҫ те, вĕсенҫен пĕҫĕкҫеҫҫĕ сĕлексем йăраланса тухĕҫ. Ҫав тин ҫуралнă сĕлексем сап куҫу умĕнҫех ӳсе аталанĕҫ те, пысăк сĕлексем пулса тăрĕҫ. Вĕсем ҫипер ӳсҫĕр тесен, савăт шывне кăна ҫасах ҫĕнетсе тăрас пулат̆, унтан шыв ҫине шывшур курăкĕсен ҫемҫе ҫулҫине, тата лаҫака наймакине пăрахса тăрас пулат̆.

## Вăрăмтунасем.

Ҫуркунне иртсе ҫула пулсан вăрăмтуна самани тапранат̆. Пăҫă ҫĕрпе—каҫпа хăш ҫухне вăрăмтунаран ниҫта пуҫа ҫиксе хăтăлма та майĕ пулмаст̆. Анҫах пĕр-е пĕр каҫ сулхăн йе ҫил-тăвăллă кăна пултăр,— вăрăмтунан тĕсĕ те йулмаст̆. Тепĕр кунах ҫанталăк ăшă та канлĕ те пултăр,—йĕритавра каллех вăрăмтуна наяăлтатат̆.

„Ăҫтан пулат̆-ши ҫак инкек-синкек?“ тесе ыйтса пăхар. Анҫах ҫак ыйтнине хирĕҫ тавăрса калиҫҫен

малтан тата „вăрăмтуна мĕнле вырăнсенђе йышлăрах пулаť“, тесе ыйтса хурар. Çапла ыйтсан, епир пур те вăрăмтуна лађака, кўлĕ йе ытти тĕрлĕ йĕпе йе нўрлĕ вырăнта йышлă пулаť, тетпĕр.

Çавăнпа ĕнтĕ, вăрăмтуна ăçта ĕрђенине пĕлес тесен, шыв-шур таврашне сăнаса пăхас пулаť.

Çак сăлтавпа стаккан илер те, ăна пĕве, лађака йе кўлĕ шывĕ ăсса тултарар. Пирĕн алăри стакканри шывра пайтах ђĕрĕђун пурри тўрех паллă. Стаккана тĕрлĕ ђĕрлĕх ытла та йышлă лектĕр тесен, шыва çи-




№ 36. Вăрăмтунасем. Çулахайра — лиђинкăсем, варринђе — кукăлкăсем, сылтăмра — çитĕннĕ вăрăмтунасем. Тĕрĕссипе вĕсем пурте кунта кăтартнинђен виçĕ хут пĕђĕк.

йелтен пысăк пир татăкĕпе сĕрсе сăрхăнтарса йарас пулаť. Çапла мелпе стаккана тултарнă шывра çĕр тĕслĕ ђĕрлĕх кĕшĕлтетни курăнса тăраť.

Çав ђĕрлĕхсен хушшинђе хурелĕ пăнђă йевĕрлĕ йапаласем палăраççĕ. Вĕсем шывра хўрисене лапђатса

тек каллĕ-маллĕ сиккелеççĕ. Унтан вăхăҫĕ-вăхăҫĕпе вĕсем шывран пăкă пек çийелелле сиксе тухаççĕ. Стаккана çийелтен хутпа хуплăр та, пĕр вăхăта сăнаса тăма пăрахăр. Кăшт тăрсан стаккана уçса пăхсан, есир çийелте пĕр-икĕ вăрăмтуна пуррине курăр. Çав вăхăтрах есир хисеплесе илнĕ хўрелĕ пăнҫăсем пĕр-иккĕш таçта кайса çухалнине ҫухласа илĕр. Вăрăмтунасем çав хўрелĕ пăнҫă пеккисенҫен пулса тăнă ĕнтĕ. Малалла ҫипер сăнаса пăхсан, есир шыв çинҫе хўрелĕ пăнҫăсен пушă тирĕсем ишсе çўренине курăр. Çак тирсене вăрăмтуна пуканишĕсем йе кукăлкисем теççĕ. Ўркенмесĕр вăрахăн сăнаса ларсан, есир хўрелĕ пăнҫă пеккисенҫен вăрăмтунасем йепле çуралса тухнине тўрех курса илме те пултаратăр.

Çав стакканри шывра тата пĕҫĕкçĕ патаксем йевĕрлĕ ҫĕрлĕхсем курăнаççĕ. Вĕсен пуçĕсем пăнҫă йевĕрлĕ, шывра вĕсем куçа пĕтĕмпех восклитсаттĕлни паллă йевĕрлĕн курăнаççĕ. Стаккана кăшт сиккелентерсен, çав ҫĕрлĕхсем иккĕлĕн хуçăлса авăнаççĕ, ҫаллĕмаллĕ сике-сике ўкеççĕ. Анҫах, шыв хумханма ҫарăнсанах, вĕсем каллех çўллеле хăпараççĕ те, патак йевĕрлĕ пулса, пуçхĕрлĕн йерипен ишсе çўреççĕ.

Пыра-киле çак патаксем сахалланаççĕ, анҫах вĕсем сахалланнăçем хўрелĕ пăнҫăсем йышлăланса пыраççĕ. Патаксем вĕсем вăрăмтуна лиҫинкисем. Çак лиҫинкăсенҫен хўрелĕ пăнҫă йевĕрлĕ пуканишсем йе кукăлкăсем ўссе аталанаççĕ. Унтан, вăхăҫĕ çитсен, кукăлкă ўссе вăрăмтунана çаврăнаԏ.

Çанталăк ăшă та канлĕ те тăрсан, кукăлкăсем хисепсĕр нумайăн вăрăмтунана çаврăнаççĕ. Çавăнпа та ăшă канлĕ çанталăкра вăрăмтуна питĕ йышлă пулаԏ. Çил-тăвăлра кукăлкăсем вăрăмтунана çавăрăнмаççĕ. Унтан çилтăвăлра вăрăмтуна хисепсĕр нумайăн шыва путса вилет. Вăрăмтуна, хăй шывра çуралса ўссен те, шыва пĕртех тўсеймест: шыва лексенех вăл вилет.

Çапла ĕнтĕ вăрăмтуна шывра çуралса ĕрҫет. Ăçта пĕр тĕлте пухăнса тăракан шыв çук,—унта вăрăмтуна та çук. Ăçта шыв тавраш кўленсе тăраԏ,—унта вă-

рӑмтуна пулатех. Ҫапла йалта урамри шыв лупашкисенҫе, унтан вут-кӑвар сыхлавӗшӗн усракан шыв касмӑкӗсенҫе йаланах вӑрӑмтуна лиҫинкисемпе кукӑлкисене тупма пулаҭ.

Ҫав лиҫинкӑсемпе кукӑлкӑсем мӗнле пулса тӑни каламасӑрах паллӑ: вӗсем ҫӗрле йал тӑрӑх вӗҫсе ҫӳрекен вӑрӑмтунасем хывса хӑварнӑ ҫӑмартасенҫен ҫуралса пулнӑ.

Касмӑкри шыва куллен-кун тишкерсе сӑнаса тӑрсан, хӑш ҫухне шыв ҫинҫе йӗтӗн вӑрри пысӑкӗш кимӗ ипсе ҫӳренине курма пулаҭ. Ҫак кимме вӑрӑмтуна хӑйӗн ҫӑмартисене пӗр-пӗрин ҫумне ҫыпӑҫтарса тунӑ. Ҫапла кимӗ йевӗрлӗ ҫӑмарта кумкине пӳрте илсе кӗрсе шыв тултарнӑ стаккана йарсан, ҫӑмартасенҫен вӑрӑмтуна лиҫинкисем пулса тӑнине сӑнаса илме пулаҭ.

## Шӑнасем.

Шӑнаран канӗҫсӗр ҫӑрмавлӑ йапала, тен, тӗнҫере те ҫук тӑр. Пӗртен пӗр сӑрӑлти ҫыпҫӑнсан та сана пӗтӗмпех аптӑратса халтан йараҭ. Ҫулла пире ҫӗрле вӑрӑмтуна, кӑнтӑрпа шӑна кансӗрлесе йӑлӑхтараҭ. Вӑрӑмтунаран ҫапах та хӑтӑлма пулаҭ: ҫӗрле ҫӳреҫесене ҫипер хупсан, вӑрӑмтуна ҫыпҫӑнаймасҭ. Унтан вӑрӑмтунасем ҫу пуҫламӑшӗнҫе кӑна йышлӑ пулаҫҫӗ,, кӗр йенне кайнӑҫем вӗсем сахалланса пыраҫҫӗ. (Мӗншӗн?) Анҫах шӑнаран кил - ҫуртра та хӑтӑлма майӗ ҫук. Шӑнаран киле пӑрахса хире йе ҫарана тарса ӳксен кӑна хӑтӑлма пулаҭ.

Шӑнасем ӑҫтан пулаҫҫӗ-ши?

Вӑрӑмтунасем пирӗн таврана шывшурсенҫен вӗҫсе пырса илешеҫҫӗ, Шӑнасем пирӗн кил - ҫурт таврашӗнҫех ҫуралаҫҫӗ, ҫавӑнтах аталанаҫҫӗ, ҫавӑнтах пурӑнса ирттереҫҫӗ.

Шӑна таврашӗ ҫуркуннепе ӗрҫеме тытӑнаҭ.

Ак, ӑшӑ хӗвел пӑха пуҫларӗ. Унҫен те пулмарӗ,— карташӗнҫе шӑна сӑрӑлтата та пуҫларӗ. Ҫак шӑна тен

хĕлле маҫҫа ҫинҫе мăрйе ҫумĕнҫе сыпҫăнса тăракан шăнах пулĕ. Сивĕ вăхăтра есĕ курнă ҫух сана вăл вилнĕ пек туйăнҫĕ, анҫах вăл вилнĕ пулман, вăл вăрăм ыйхăра кăна пулнă. Ҫурхи ăшă кăшт сисĕнсенех ҫав шăна ҫурҫул ҫывăрнă ыйхăран вăранаț те, ҫĕнĕрен пурăнма тытăнаț. Кил-ҫурт таврашĕнҫе ҫапла пĕрик теҫетке шăна ҫуркуннепе ҫĕнĕрен ҫĕрĕлсен, вĕсем ҫасах хисепсĕр нумай шăна ĕрҫетме пултараҫҫĕ.

Шăна ăҫта ĕрҫенине пĕлме ҫăмăл. Шăна тарваш кирек хăҫан та вите-карта патĕнҫе, тирĕс ҫинҫе, тĕрлĕ ҫĕрсе шăршланса выртакан йапала патĕнҫе нумай пулаț. Шăна ҫак тасамар ирсĕр вырăнсенҫе ĕрҫет.



№ 37. Сулахайри — шăна лиҫинки, варринҫи — кукăлкă, сылтăмри — ҫитĕннĕ шăна; пурне те тăвата хут пысăк кăтартнă.

Шăна мĕнле ĕрҫенине пĕлес тесен, йĕрĕнмесĕрех тирĕс ҫаваласа шăна йăвисене тупма тăрăшăр. Ҫапла ҫаваласан есир тирĕс хушшинҫе пĕр пуҫĕ хулăн, тепĕр пуҫĕ ҫинҫе хуртсем курăр. Ҫав хуртсем шапшурă. Анҫах ҫак йапаласем ҫăнтан хуртсем мар, вĕсем шăна лиҫинкисем. Ҫаваласа кăларнă хурт хастарлă йапала: вăл авăнса йăваланса ҫасах каллех тирĕс ăшне кĕрсе пытанаț. Шăна лиҫинки тирĕс ҫисе ӳсет.

Унтан ҫак шурă лиҫинкăсен хушшинҫех есир тырă пĕрҫи йеверлĕ тĕттĕм тĕвĕсем курма пултаратăр. Ҫак тĕвĕсем шăна кукăлкисем. Ҫав кукăлкăсене суйласа илсе пĕр-пĕр коропкă ăшĕнҫе хупса тытсан, вĕсенҫен шăнасем пулса тухаҫҫĕ. Вара кукăлкăсем пĕҫĕкҫĕ пушă пиҫĕкесем йеверлĕ кăна пулса йулаҫҫĕ.

Аслăлăхҫăсем пĕлсе ҫитнĕ: пĕр шăна 120—150 ҫăмарта хывма пултараț. Ҫав ҫăмартасенҫен ҫулталăк хушшинҫе лиҫинкăсем ҫуралса тухаҫҫĕ, лиҫинкăсенҫен виҫĕ ернерен шăнасем пулса тăраҫҫĕ. Ҫак ҫĕнĕрен

çуралнă шăнасем хăйсем те каллех ђасах çăмартасем туса çĕнĕ шăнасем çуратаççĕ. Çавăнпа та çу вĕçĕнђе шăна хисепсĕр нумай пулаť. (Шăна йепле хăвăрт ĕрђенине ђухлас тесен çакна хисеплесе пăхăр: пĕр мăшăр шăна 120-шер çăмарта тутăр, çу тăршĕпе çак шăнасен йăхĕ-несĕлĕ çиђĕ сыпăка çитиђђен ĕрђесе ĕлкĕрейтĕр—çапла вăр пĕр мăшăр шăнаран миçе шăна пулма пултараť? Анђах пĕр мăшăртан çавăн ђухлĕ шăна ĕрђеймест. Мĕншĕн-ши?)

Шăнасем тĕрлĕ тасамар йапала таврашĕнђе кăна ĕрђесе пурăнмаççĕ. Вĕсем пирĕн кил-çурта шала кĕме, çăкăр-тăвар, сĕт-турăх, йашка таврашĕнђе çӳреме тăрăшаççĕ.

Мĕн кирлĕ-ши вĕсене?

Сăнаса кăна пăхăр.—шăнасем пӳртре ахаљ вĕçсе çӳремеççĕ, вĕсем йалан хăйсен ĕçĕпе ђăрманаççĕ.

Акă сĕтел çинђе сахăр ванђăкĕсем выртаççĕ, вĕсене шăнасем хăвăртах сырса илеççĕ. Вĕсем сахăр тĕпренђĕкĕсене сăннисемпе тĕрткелесе сиктереççĕ. Анђах кăшт вăхăт та иртмест,—сахăр тĕпренђĕкĕ пирĕн куç умĕнђен пĕтĕмпех çухалаť. Çав тĕпренђĕк ирĕлсе пĕтет иккен. Ăна шăна хăй сăннинђен сĕлеке кăларса ирĕлтерет те, унăн тутă сĕткенне ĕмсе те илет.

Ак, шăна сан аллу çине ларђĕ. Ăна хăваламасăр тӳссе тăр-ха. Акă вăл йеррипен утса пыраť (унăн миçе ура икккенне хисеплесе илĕр). Вăл утнăçем сăннипе ӳт тирне хыпаласа пыраť. Ак вăл хăйне çимĕç тупрĕ те, ăна сыпçăнса тăрăшса ĕме пуçларĕ. Мĕншĕн есир аллăра çусах тăмастăр?

Çапла ĕнтĕ шăна кил-çурт таврашĕнђе йалан хăйне йурăхлă çимĕç шыраť.

Шăна тирĕс, ирсĕр, тасамар йапала таврашĕнђе çӳресе пӳрте пырса кĕрет те, апат-çимĕç çине лараť, пирĕн пит-куç çине, шăл-çăвар çине лараť.

Есир сăнанă пулĕ, тĕрлĕ сикекен ђирсем кĕркунне сывăхарнăпа йышлăланаççĕ. Çак вăхăтра шăнасем те ытла йышлăланаççĕ. Çапла йерекен ђирсемпе шăнасем пĕрле пĕр вăхăтра йышлăланса пыраççĕ. Мĕншĕн çапла-ши?

Акӑ есир ҫирлӗ ҫынна курма пынӑ. Есир ҫирлӗ ҫынпа калаҫса ларнӑ ҫухне, сисмен ҫӗртенех, ҫирлӗ ҫын патӗнҫен сан ҫине шӑна вӗҫсе пырса ларҫӗ. Вӑл сан ҫамку ҫине ларҫӗ. Сан ҫамку ҫинҫе пӗҫӗкҫеҫҫӗ суран пурҫҫӗ, есӗ ӑна пӗр шатрана пӑҫӑркаласа кӑларса тунӑҫҫӗ. Шӑна ҫав сурана сӑннине ҫикрӗ те, хӑйне кирлӗ сӗткене ӗмсе илҫӗ; ҫакна ӗмес умӗн вӑл ҫирлӗ ҫыннӑн йухӑнса тӑракан суран пӳрне ӗмнӗҫҫӗ. Ҫапла майпа сана шӑна ҫире йертмен пулсан, есӗ питӗ телейлӗ ҫын пулатӑн.

Шӑна ҫирсене пӗр ҫынран тепӗр ҫынна урисемпе унтан сӑннипе йертет.

Апла пулсан, шӑнаран ҫӑнтан сыхланас тесен, апат-ҫимӗҫе хупласа питӗрсе тытас пулаҭ, кил-ҫурта шалта та тулашра та таса тытас пулаҭ. Аҫта таса—унта шӑнана апат-ҫимӗҫ ҫук, ҫавӑнпа унта шӑча пулмасҭ.

## Вӑрлӑх шӑтнине сӑнани.

Пирӗн таврара тырӑ-пулӑран пуринҫен ытла ырашпа сӗлӗ акса ӳстереҫҫӗ. Сӗлӗ вӑл пӗртте ҫӗре тиркемен тырӑ: вӑл хӑйӑрлӑ ҫӗрте те, нӳрлӗ мӑкланса тӑракан вырӑнта та ӳсме пултараҭ. Паллӑ, сӗлӗ те аван ҫӗре йуратаҭ, вӑл та аван ҫӗрте ҫипертерех ӳсет. Ман атте йалан сӗлӗ нумайрах акма тӑрӑшаҫҫӗ.

Вӑл ҫуркунне пулнӑ-пулманах сӗлӗ вӑрлӑхӗ акма йурӑхлине йе йурӑхлӑ маррине сӑнаса ҫухлаҫҫӗ. Ҫакна пӗлесси питӗ ҫӑмӑл ӗҫ. Йывӑҫ пуленине илсе ҫавала та, ҫавалана шӑтӑка сӗлӗ пӗрҫисем тултарса, вӗсене шыв сапса ӑпӑ ҫӗре витсе хур. Нумай та кун иртмӗ,—сӗлӗ пӗрҫисем шӑтса тухӗҫ. Вӑрлӑх лайӑххи йе наҫарри пӗтӗмпех палӑрӗ. Пӗрҫӗсем пур те пӗр харӑс, хӑвӑртах шӑтсан—вӑрлӑх аван пулаҭ, пӗрҫӗсем пур те шӑтаймасан, унтан вӑрахӑн, тӗрлӗ вӑхӑтра ҫеҫ шӑтсан,—вӑрлӑх наҫар пулаҭ.

Вӑрлӑх лайӑх пулсан, ӑна сайра аксан та тырӑ лайӑх пулаҭ. Вӑрлӑх наҫар пулсан, ӑна ҫӑрарах акма тӑрӑшас пулаҭ, вара тин тырӑ ҫипер пулма пултараҭ.

Епӗ вӑрлӑх йепле шӑтнине сӑнаса тӑма йурататтӑм, пӗрӆӗрен йӗп пек симӗс ҫулҫӑ шӑтса тухнине, пулене шӑтӑкӗнӆен сӗллӗн симӗс шӆутки хастарланса ӳссе улӑхнине сӑнаса пурӑнма йурататтӑм.

Пӗрре епӗ атте вырӑнне хамах вӑрлӑх йепле шӑтассине сӑнаса пӗлес терӗм. Епӗ пурне те атте тунӑ пекех турӑм. Анӆах сӑнанӑ вӑхӑт иртсе кайрӗ, унтан тата та ерне иртрӗ, ман пӗр пӗрӆӗ те шӑтаймарӗ. Епӗ хӑраса ӳкрӗм, вӑрлӑх акма йурӑхсӑр пулӗ, тесе шухӑшлама тытӑнтӑм. Епӗ хам шухӑш ҫинӆен ӆасрах аттене каласа патӑм.

Атте ман пӗӆӗкҫӗ кункӑрана уҫса пӑхрӗ те, кула пуҫларӗ. „Вара есӗ, айван аӆам, вӑрлӑхсене пурне те




№ 38. Вӑрлӑха курка ӆашки ҫинӆе шӑтарса пӑхни.

шыва путарнӑ та вӗсене сывлӑшсӑр пӑнӆӑхтарса пӗтернӗ,“—терӗ мана атте. Ӆӑнахах та ман пӗрӆӗсем икӗ пӳрне тарӑнӑш шыв айӗнӆе выртаӆӆӗҫ. Атте мана вӑрлӑха ҫӗнӗрен шӑтарса пӑхма хушрӗ. Вӑл мана—„анӆах есӗ астуса пӗлсе тӑр, шӑтса ӳсекен вӑрӑсене сывлӑш кирлӗ, вӗсем пирӗн пекех сывламасӑр пурӑнаймаҫҫӗ“,—терӗ.

Епӗ хамӑн пӗӆӗкҫӗ кункӑрана урӑх пӗрӆӗсем тултарса лартрӑм та, ҫав пӗрӆӗсене кӑшт нӳрлӗрех хаӆлӗн кӑна тытса тӑтӑм. Вара ман пӗрӆӗсем питӗ лайӑх шӑтса тухрӗҫ.

Малалла епӗ, хавасланса, ыраш, тулӑ, урпа, кантӑр пӗрӆисене - вӑррисене шӑтса ӳстере пуҫларӑм. (Вӑрлӑх йепле шӑтнине ӆӑнтан ӆухлас тесен, суйламасӑр пӗр 50 йе 100 пӗрӆӗ илсе шӑтарса пӑхӑр, унтан ҫавӑн ӆухлех ӆи лайӑх пӗрӆӗсене суйласа илсе уйрӑм шӑтарса пӑхӑр).

Анҫах пӗрре каллех ман ӗҫ тухмарӗ. Ман алӑра йурӑхлӑ савӑт - сапа пулманнипе, епӗ пӑрҫа пӗрҫисене шӳтерсе путылкка ӑшне тултарса, путылккана пӑкӑпа питӗрсе лартрӑм. Ман пӑрҫа питӗ йывӑррӑн шӑгрӗ. Пӑрҫа пӗрҫисен шӑтса тухнӑ мӑйракисем кӑшт ӳснӗ пек пулҫӗҫ те, унтан пӗтӗмпех ӳссе хӑпарма ҫарӑнҫӗҫ. Мӗншӗн ҫапла пулҫӗ-ши? Ман пӗрҫӗсем халӗ шыв ҫинҫе мар-ҫке, вӗсем сывлӑш ҫинҫе-ҫке, мӗнле-ха вӗсем шӑтса хухаймарӗҫ?

Атте мана—„сын вӑрлӑху каллех сывлӑшсӑр пӑнҫӑхса пӗтнӗ; шӑтакан вӑрлӑх пӗрҫине таса сывлӑш кирлӗ, вӑл сывлакан сывлӑш улӑшӑнса тӑмалла“,—терӗ.

Епӗ путылккара мӗнле сывлӑш икенне ҫухлас сӑлтавпа хӑйӑ ҫутрӑм та, ӑна хуллен путылкка ӑшне



№ 39. Вӑрлӑха уҫӑ путылккара, тата пӑкӑпа питӗрнӗ путылккара шӑтарса пӑхни.

антарма тытӑнтӑм. Ман хӑйӑ путылкка ӑшне кӗнӗ-кӗменех сӳнсе ларҫӗ. Епӗ тата путылккана исвӗслӗ шыв йарса пӑлхатса пӑхрӑм, вара ҫав шыв шап-шурӑ пулса тӑҫӗ. Епӗ вара путылккара уклеккислӑ кас тулса тӑнине ҫухларӑм.

Вӑрӑ, шӑтнӑ ҫух, сывлӑшран кислорот туртса илсе, уклеккислӑ кас кӑлараҫ иккен. Ҫак мелпех епир те сывлатпӑр. Ҫапла ӗнтӗ тырӑ-пулӑ пӗрҫисем те пирӗн пекех сывласа шӑтса тухаҫҫӗ. Таса сывлӑш пулмасан, етемсем те ытти тӗрлӗ ҫӗрҫунсем те пурӑнаймаҫҫӗ,

сывлăшсăр пăвăнса вилеççĕ; çаплах вăрлăх пĕрӡисем те, таса сывлăш пулмасан, шăтнă-шăтманах пăнӡăхса пĕтеççĕ.

Епĕ сĕлĕ мĕнле халпа шăтса ӳснине тин ӡухласа çитрĕм. Ак мĕншĕн пирĕн хресӡенсем тырă—пулла типĕрех çĕре акма тăрăшаççĕ, ак мĕншĕн вĕсем тырă-пулă ытла йĕпе çĕрте, çуркуннепе шыв-шур ытла пусакан çĕрте çĕрсе пăнӡăхса пĕтет, теççĕ. Ак мĕншĕн хресӡенсем лап çĕрсенӡе пухăнакан шыва канав алтса, тарăн йăрансем туса айаккалла хăвалама тăрăшаççĕ.

Сĕлĕ вăрлăхĕ ăна акнă вăхăтра çумăр йалан тăтăшăн çусан та, шăтса тухаймасăр, нумайӡен асапланаĭ. Унтан вăл сайран кăна шăтса тухаĭ. Мĕншĕн çапла пулӡĕ-ши? Мĕншĕн сĕлĕшĕн çумăр та сийенлĕ пулӡĕ-ши?

Сĕлле тĕмелĕ типĕ çĕре акнă, çумăр шывĕ пухăннăçем айакалла йухса тăнă. Апла пулсан, çумăр хăш йенĕпе сĕлле сийенленĕ?

Çумăр тăпрана пăсса хăварнă. Тăпрана тĕрлĕ тĕлте ӡаваласа пăхăр. Есир куратăр: сухаласа çемçетнĕ ана тăпри пĕтĕмпех лапӡăнса ларнă, лапӡăннă тăмлă тăпра ӡул пек хытса кайнă, тăпра çийентен хытă хупăпа витĕннĕ. Тăпра ăшĕнӡе сывлăш пулма вырăн çук, тăпра ăшне сывлăш кĕмелли пур шăтăксем, пур хăвăш çулсем те питĕрĕнсе ларнă.

Каллех епир сĕлĕ кислорот çитменнипе наӡар ӳснине ӡухласа çитрĕмĕр.

Сĕлле пахӡасенӡи пек йăранлатса акнă пулсан, епир унăн йăранĕсене кĕреплесемпе ӡавса çемçетсе сывлăш кĕмелли çулсем уçăттăмăр. Анӡах ана-çаран вăл йăран мар вĕт, ăна алăпа кĕрепле таврашпе çемçетме майĕ çук вĕт. Апла пулсан мĕн тавас-ха ĕнтĕ, мĕн тăвас: ана тăрăх сӳре çӳретес пулаĭ, сӳре анана епир кĕреплепе йăрана çемçетнĕ пекех çемçетсе кăпăшлантарса тухаĭ.

## Ман ана.

Ман хамăн уйрăм ана пурҫҫĕ. Çав ана çине атте пăрçа акса парсаҫҫĕ. Анана епир пăрçа лайăх пулакан вырăнта, хăйăрлăрах тăпралă, унтан пĕр çулмантан çеç тирĕсленӗ вырăнта суйласа татнăҫҫĕ.

Епĕ пăрçана акиҫҫенех ана пысăкăшне виçсе илтĕм (мĕнле мелпе ăна виçеççĕ?), унтан акас вăрлăх мĕн ҫухлĕ туртнине виçсе пĕлтĕм. Çапла епĕ кĕркунне пăрçана пухсан, ун тухăçне ҫăнтан тĕп-тĕрĕс ҫухлама малтанах хатĕрленсе тăтăм.

Пăрçана акрăмăр ĕнтĕ. Епĕ вăл мĕнле шăтса ӳсnине сăнаса тăра пуçларăм.

Ман ана ытти анасенҫен пĕтĕмпех урăхла курăнса тăрать: йĕритаврa шăрт пек сĕлĕ ӳсет, ман ана çав йешĕл шăрт хушшинҫе кăтраланса йавкаланса выртать.

Пăрçа вăл пĕрте тӳррĕн ӳсмест: вăл тек йе пĕр йенелле йе тепĕр йенелле пăркаланса ӳсет. Унтан вăл тĕп тунинҫен тĕрлĕ йенне пĕҫĕкçĕ тунасем кăларса пырать, çав тунасем çине ик-виç мăшăр çеç çавракa çулçăсем лартса пырать; пăрçа çулçисем пăхăр укçа йевĕрлĕ. Пăрçан тĕп тунин айĕнҫе çĕр çумĕнҫе çеç пĕр мăшăр шултăра çулçăсем пур, çав çулçăсем пашалусем йевĕрлĕ.

Ӳснĕçем, пăрçа, пĕкĕрĕлсе, ҫире йернĕ пек çĕр çинелле йăванса пырать. Мĕншĕн çапла-ши вăл? Пăрçан туни питĕ ҫерҫен, вăл туратсемпе çулçăсен йывăрăшне çĕклесе тăраймасть, çавăнпа вăл авăннăçем авăнса ӳсет.

Пăрçа ӳснĕ ҫух мĕн тĕл пулнă ăна çакăнса ӳсет; çапла вăл çумкурăкне, йăран урлă йут ана çинҫе ӳсекен сĕлле йе тата тепĕр пăрçа тунинех те çакăнса ӳсет. Пăрçа мĕн çакланнă ăна çакăнать те, çӳлелле хĕвеле хирĕç улăхма тăрăшать.

Анҫах мĕнле алă-урапа вăл сапла çакăнать-ши? Пăрçа çулçи вĕçĕнҫе кирек хăçан та вăрăм çип пур, ăна майăх çипĕсем теççĕ. Пăрçа йепле тĕрлĕ йапа-

лана çакăнса ўснине сăнас тесен, пăрçа çумне çĕре пĕр патак тавраш̆ кăна ҫиксе ларт. Çак патак патне пăрçан мăйăх пĕрҫи тенĕ çипĕ кăна сырса перĕнтĕр,— çав çип хăвăртăн патак йĕри-тавра йавăнма тытăнаĭ, пĕр-ик кунтан ăна патакран туртса уйăрма та кансĕр пулаĭ.




№ 40. Пăрçа. Сулахайри — пăрçан ҫетеклĕ пайĕ, сылтăмри (çўлтисем) — ҫеҫек лепесткисем.

Ак ĕнтĕ пăрçа ўссе сарăлса кайрĕ. Унăн ҫеҫеке ларма вăхăт çитрĕ.

Пăрçа ҫеҫеке ларма тытăнсан, ман ана ытарма çук илемленсе кайрĕ. Ана çинҫе уйавран та уйав: çĕрше-рĕн те пиншерĕн мăшăрлă ҫеҫексем лараççĕ, çав ҫе-ҫексем пур те çинçе ҫерҫен туратсем çинҫе лараççĕ. Ана çине хисепсĕр нумай лĕпĕш пĕлĕҫĕ вĕçсе килсе

ларнă пек туйăнаť. Ирĕксĕрех ҫеҫексене ҫывăхарах пырса пăхас килет.

Пăрҫа ҫеҫекĕсем мăкăӊ йе кукша-пуҫ ҫеҫекĕсенҫен пĕтĕмпе уйрăм. Ҫак ҫеҫексем тирпейленсе ҫавракаҫăмăртанса лараҫҫĕ. Пăрҫа ҫеҫекĕсем апла мар. Ак пăрҫа ҫеҫекĕн пĕр тĕттĕм хĕм-хĕрлĕ курăнакан лепестăкĕ пĕтĕмпех парус кăкарнă кимĕ йевĕрлĕ. Ак ҫеҫек варринҫе тата пĕр мăшăр шупка хĕм-хĕрлĕ сĕмлĕ лепестăксем сарăлса лараҫҫĕ. Унтан вĕсенҫен шаларах тата та темиҫе лепестăк пытанса лараť. Ҫеҫек ҫулҫисемпе лепестăксене тытса уйăрсан, вĕсене турткаласа силлентерсен, ҫеҫек тусанĕ (пыӆтси) тăкăнни палăраť. Курас тесен епир ҫеҫек песҫикне те витĕр курма пултаратпăр: вăл пĕҫĕкҫĕ пашалу йевĕрлĕ, унăн ăшĕнҫе вак пĕрҫĕсем витĕр курăнса выртаҫҫĕ, ҫав пĕрҫĕсем пыра-киле пăрҫа пĕрҫисем пулса тăраҫҫĕ.

Пăрҫа ҫеҫеке лара пуҫланăрпа епĕ хам ана ҫине кулленех кайса килеттĕм. Пуринҫен ытла епĕ пăрҫа хутаҫҫисем йепле тĕвĕленсе пысăкланса пынине сăнаттăм. Кунран куна ҫеҫексем сайраланса пыраҫҫĕ, ҫеҫексем вырăнне песҫик пашалăвĕсем ларса йулаҫҫĕ. Ҫак пашалусем ӱсеҫҫĕ, хулăнланаҫҫĕ, шӱсе тулнă пек тулаҫҫĕ. Сисмен ҫĕртенех ҫеҫексен вырăнĕсенҫе пиншер йешĕл хутаҫсем ҫакăнса тăма тытăнаҫҫĕ. Ҫак хутаҫсен ăшĕнҫе шултăра лайăх сĕткенлĕ пĕрҫĕсем ӱснĕҫем ӱсеҫҫĕ.

Иешĕл пăрҫа ман кăмăла питĕ кайаť: йешĕл пăрҫа пылак, техĕмлĕ. Йешĕл пăрҫа, ҫырла пекех, сахăр тути калаť. Кĕркуннепе хутаҫсем сархайса хытаҫҫĕ те, пăрҫа пĕрҫисем тутлăмарланаҫҫĕ, ҫăнăх тути калакан пулаҫҫĕ. Ҫак сахăр ҫăнăха ҫаврăннине пĕлтермест-ши?

Пăрҫа ĕлкĕрсен, ăна вăхăтлă пуҫтарас пулаť, вăхăтлă ҫулса пăрахса анкартине леҫес пулаť. Вăхăтлă пуҫтараймасан, пăрҫа ана ҫинҫех шартлатса ҫурăлса тăкăнса пĕтет. Пăрҫа хутаҫҫийĕн хупписем пĕр-пĕринпе питĕ тăртанса ҫыпҫăнса тăраҫҫĕ, вĕсем кăшт тивсенех шартлатса ҫурăлаҫҫĕ те, хăйсем тĕллĕнех

винтланса пĕрĕнсе лараççĕ; çапла çавăрăнса пĕркеленнĕ ҫух вĕсем пăрçа пĕрҫисене тĕрлĕ йенелле прушинапа ывăтнă пек ывăтса салатаççĕ (Ана-çарана тухса пăрçа йевĕрлĕ ўсетăрансене шыраса тупăр. Вĕсене тупсан, вĕсем хăш йенĕпе пăрçа йевĕрлĕ иккенне ҫипер сăнаса илĕр).

Пăрçапа анкартинҫе çапса, сăвăрса, алласа илтĕмĕр. Унтан епир аттепе пăрçана михĕсене тултарса виçепе турттарса илтĕмĕр. Вара епĕ пăрçа тухăçне шутласа кăлартăм; ман пăрçа тухăçĕ хăй-çиҫҫĕ пулҫĕ иккен, çапла епĕ пĕр пĕрҫĕ акса çиҫĕ пĕрҫĕ пухрăм пулаť. Унтан епĕ çу тăршĕпе пăрçана пайтах йешĕл халлĕнех çисе пĕтернĕҫҫĕ. Çакна та шута илсен, пăрçа тухăçне ҫăнахах та çителĕклĕ теме кирлĕ. Çавăнпа епир атте те епĕ те пăрçа тухăçĕпе сапăр пултăмăр.

## Çĕр-çырли.

Çĕр-çырлинҫен кăмăллăрах йапаласен тĕнҫере те çук тăр. Вăл питĕ техĕмлĕ те питĕ илемлĕ çырла. Çĕр-çырлинҫен кĕнĕ пек тутлă шăршă нимĕнле çырларан та кĕмест пуљ. Çак çырлан çупки калама çук илемлĕ, çавăнпа ун çырлисене татса ăна çаратса хăварма шеллетĕн те, ирĕксĕрех çупкана пур туни-тураҫĕсемпе татса илетĕн; çĕр-çырли çупкисенҫен тирпейлесе пухнă пукета шыва лартсан, вăл пайтахҫен шанмасť, аван шăршă кăларса пире ирĕксĕрех вăрмансемпе çеçен хирсен уçланкисене асăнтарса тăраť.

Çавăнпа та çула ĕçрен пушă кун, мĕнле те пулин праçник кунĕ килессе кĕтсе кăна тăратăн. Çапла кăшт çеç пушă вăхăт пулсанах, пур хирти çерем тĕмисене, çарансене, çырма-ҫăрма хĕррисене, вăрман уçланкисене йĕри-тавра хутласа пăхса хыпаласа тухатăн. Çакна есĕ çĕр-çырли пуçтарас сăлтавпа тăватăн.

Çĕр-çырли етем кусĕнҫен пытанарах ўсет: унăн çырла тунисем кĕске, çавăнпа çырласем çулçă айне-

рех пулса ӳсеçç̆е, унтан пиçнĕ çырласем йывăрланса айалалла ӝикĕнсе çакăнса тăраçç̆ĕ. Пĕр тĕлте пĕртен пĕр çырла курăнсан та, çав тĕле тишкĕрсе пăхса тухас пулаҫ, мĕншĕн тесен çак çырла уйрăм ӳсме йуратмасҫ, вăл пĕрле хунаса тăтăш пысăк çемйепе ӳсме йуратаҫ.

Епĕ çĕр-çырлине килте ӳстерме шухăш турăм. Епĕ килте пӳртре тĕрлĕ ӝеӝек ӳсме пултараҫ, çавăнпа



№ 41. Çĕр-çырли.

çĕр-çырли те ӳссе ĕрӝеме кирлĕ, тесе шухăшларăм. Анӝах епĕ çĕр-çырли ытла та ирĕке, ытла та уçă сывлăша вĕреннĕ çырла, çавăнпа вăл ăна пӳртре питĕрсе тытсан йапăхса пĕтмĕ-ши, тесе иккĕлентĕм. Çапах та епĕ хам шухăшланине тăвасах терĕм.

Çуркунне епĕ хире çĕр-çырли кăларма кайрăм. Ман йĕри-тавра йешĕл курăк, пур те шăтса тухнă, пур те ӳсме тапратнă. Çак курăк хушшинӝе епĕ çĕр-

çырли çулçисене куртăм. (Унăн çулçисене хут çине хурса, йĕри-тавра кăранташпа йĕр туса ӳкерĕр). Епĕ ҫухласа пĕлеймерĕм,—çав çулçăсем те пĕлтĕрхи çулçăсем, те кăçал ӳссе ĕлкĕрнĕ çулçăсем пулҫĕç.

Çĕр-çырлине ҫаваласа кăларнă ҫухне малтан ман ĕç ăнаймарĕ: епĕ ҫавалапă хăйăрлă тăпра саланса кайрĕ, ман алăра тĕтĕм хулăн тымар çара халлĕн çеç тăрса йулҫĕ. Анҫах тымар-ши вара çак йапала? Вăл тымар пулсан, мĕншĕн тата ун çинҫех çулçăсем ларççĕ? Унтан, ăна хуçсан, вăл шурă çăнăхлăн туйăнаĭ. Çук, вăл тымар мар, вăл вырăсла корневишҫĕ тенĕ паранкă йе сухан пек тымар-çимĕçĕ, тымар-ҫăмăрĕ çеç пулма кирлĕ (çав тымар-ҫăмăрĕ çинҫе ҫăнтан тымар çӳçине сăнаса илĕр).

Çав тымар-ҫăмăрĕ хĕл тăршĕпе çĕр айĕнҫе каçаĭ, вăл çĕр-çырлин çимĕç саппасне сыхласа вyrtаĭ. Çуркунне вăл çав саппаспа ӳсме тапратнă туратсемпе çулçăсене тăрантараĭ. Çапла вăл вĕсене ӳссе вăй илиҫҫен тăрантарса пыраĭ.

Çĕр-çырлине пĕр тĕлтен тепĕр тĕле куçарас тесен, вăл ӳсекен çĕре йĕри-тавра çĕçĕпе касса тухас пулаĭ. Унтан, çав каснă çерем татăкне çĕр-çырлипе пĕрле кăларса, хуллен пĕр-пĕр ҫӳлмеке хурас пулаĭ. Ҫӳлмек тĕпĕ кирек хăçан та шăтăк пулмалла (мĕншĕн вăл шăтăк пулмалла?) Унтан çĕр-çырлине йĕри-тавра çителĕклĕ шыв сапас пулаĭ.

Çак мелпе çĕр-çырлине киле илсе пырсан, епĕ ăна хĕвеле хирĕç ҫӳреҫе çине лартрăм. Ман çырла шанса сархайса тăмасăрах ӳсме тытăнҫĕ, илемлĕленсе кайрĕ, çĕнĕ çулçăсем кăлара пуçларĕ.

Епĕ çырлана куçран йамасăр пăхса усра пуçларăм. Епĕ ăна аҫана апатçимĕç панă пек куллен шăварса илеттĕм. Унтан çу тăршĕпе темиçе хут епĕ ҫӳлмеке лаша тирĕсĕн сĕткенне пуçтарса йӳçтерсе йатăм. Епĕ тирĕслĕ вырăнта тыră-пулă лайăх пулаĭ, çавăнпа тирĕс сĕткенĕ çĕр-çырлине те усăлă пулĕ, тесе шухăшларăм.

Унтан епĕ сăнаса илтĕм: çырла çулçисем йалан урамалла, çутă йенелле тăсăлаççĕ. Вĕсем те пирĕн пекех пўртрен карташне, ирĕке, уçă сывлăша, хĕвел çуттинелле туртăнаççĕ. (Ђўлмеке çавăрса, çырла çулçисене кайалла пăхтарса лартăр, унтан пĕр-ик кунтан çав çулçăсем йепле каллех ђўређе йенне çавăрăнса ларнине сăнаса илĕр). Çакна ђухласа илсен, епĕ аван ăшă çанталăкра ђўлмеке тула та кăларса лартаттăм.

Çапла вăхăт иртсе пынăçем ман çырла аталанса пыђĕ. Малтан вăл пĕр сăнă пек турат кăларђĕ те, ун çине тăвată ђеђек папки тирпейлесе лартрĕ.

Çав папкасенђен пĕри пĕр хĕвеллĕ ирпе сарăлса кайрĕ те, илемлĕ шурă ђеђек пулса тăђĕ. Çĕр-çырли ђеђекĕ çĕмĕрт ђеђекĕ йевĕрлĕ, анђах вăл çĕмĕрт ђеђекĕнђен кăшт шултăрарах та илемлĕрех те. (Çак икĕ ђеђекĕн мĕнле уйрăм пур?) Унтан ытти папкасем те ђеђексем пулса ларђĕç.

Кăшт тăрсан, çырла хăй тунин тăррине тата тепĕр сăнă лартса хуђĕ, çав сăнă çине виçĕ папка кăларса çакса хуђĕ. Çак папкасем те кайарахпа ђеђекленђĕç. Çапла ђеђекленсе ларнă вăхăтрах малтан тухнă папкасем тĕвĕленсе çырласем тултара пуçларĕç. Çу тăршĕпе пĕр тĕпрен ман çиђĕ çырла умлă-хыçлă ўссе пиçсе çитрĕ.

Çырла йепле йеррипен ўссе пиçнине сăнама епĕ питĕ хавасђĕ. Малтан çырла тĕввисем пĕђĕкçеççĕ пулаççĕ, унтан, пыра-киле, вĕсем тулса тăртăнаççĕ, хăйсен тĕс-питне улăштараççĕ (çырлан тĕс-пиђĕ йепле улăшăнса пырать?), йулашкинђен, пиçсе, çĕрелле пĕшкĕрĕлсе лараççĕ. Çырла çитĕнсен, ăна йĕри-тавра хупăрлакан йешĕл çулçăсем унтан уйăрăлаççĕ, çавăнпа хĕпхĕрлĕ çырла айакранах курăнса тăракан пулать. Хĕрлĕ сĕмлĕ çĕр-çырли çинђе сарă пăнђăсем пайтахăн палăраççĕ, çав пăнђăсем—шалта пытанса выртакан вăрлăх пĕрђисем.

Епĕ çĕр-çырлин туни-турађĕсенђен пĕр вăрăм çип тăсăлса ўснине сăнаса илтĕм. Çав çип вĕçĕнђе икĕ

çулçă, çип айаккала тăсăлса ўсет. Епĕ çав çипе тытса йалан кайалла тĕп турат йенелле çавăрса хураттăм. Анђах çип йалан айаккалла тăсăлађђĕ. Йулашкинђен çав çипрен тымар çўçи тухрĕ те çĕре кĕрсе ларђĕ. Вара икĕ çулçăлă çип вĕçĕ çĕнĕ туна пулса хунаса ўсме тытăнђĕç. Унтан çак тунаран тата икĕ çулçăлă çип ўсе пуçларĕç. Епĕ çак çип айне урăх ђўлмек лартрăм, çав ђўлмеке те малтан çĕр тултарса лартрăм. Çип каллех тымар çўçи кăларса çĕнĕ ђўлмек тăпри çине тирĕнсе ларђĕ те çав ђўлмекре çĕр-çырли ĕрђесе кайрĕ, (çав çипе пахђаçăсем мăйăхсем, мăйăх пĕрђисем теççĕ; есир çĕр-çырли çу тăршĕпе миçе мăйăх пĕрђи кăларнине сăнаса илĕр).

Манăн ђўлмексене уйрăм айакка лартмалла пулђĕ. Çавăнпа мăйăх çипне ман ирĕксĕрех касса татмалла пулђĕ. Çипе кассан, çип вĕçĕ типсе хăрђĕ, анђах унтан çĕр çине тирĕнсе ўсекен çĕнĕ тунасем ăна касниpe ўсме пĕрте ђарăнса тăмарĕç.

Çапла ĕнтĕ çĕр-çырли хăйĕнђен айаккалла çипсем тăсса пăрахса ĕрђет, çав çипсенђен тымар пăрахса çĕнĕрен туналанса хунаĭ. Пĕрте пĕр йăран çине пĕр тĕп çĕр-çырли кăна лартса пăхас пулаĭ,—пĕр-ик çултан çав тĕп хунаса пĕтĕм йăрана сырса илет. Пыракиле çĕр-çырли ытти йăрансем çине те куçса, пĕтĕм пахђана сарăлса сырса илме пултараĭ. (Çумкурăксен хушшинђе мăйăх çипĕ йарса ĕрђекен курăксем пур, çавăн пек курăксене сăнаса шыраса тупăр).

## Кăмпасем.

Ађа пуçпа епĕ кăмпана çўреме питех те хавасђĕ. Нумай сехетсем тăршĕпе епĕ тĕрлĕ кăмпасем шыраса çўреттĕм. Кăмпа таврашне тĕл пулсан, ăна тăвана ыталанă пек ыталаса татса илеттĕм.

Çĕрле киле таврăнсан тĕлĕкре та кăмпапах атапаттăм. Ак, епĕ вăрмана лекнĕ пек те, хисепсĕр пысăк кăмпа купи çине пырса кĕнĕ пек. Вăранса тăрсан та

пайтахђен çак тутлă тĕлĕк çинђен кăна шухăшлас килет. Пуçра çак тĕлĕк тӳрре килтĕрђђĕ, вăл ђăнахах та пулса тăтăрђђĕ, тенĕ шухăш тек çаврăнаĭ.

Пĕрре çапла тĕлĕкре тĕлленнине ђăнахах та куçпа курма маĭ пулђĕ. Кĕркунне çитеспе пĕр тĕтрелĕ кун епĕ çул хĕрринђе тĕме çинђи вăрман вĕтлĕхне пырса кĕтĕм. Кĕтмен çĕртенех епĕ кăмпасен купи çине пырса пусрăм. Кăмпасем ман йĕри-тавра хисепсĕр нумаĭăн пуçĕсене тăратса ларăççĕ. Вĕсем шултăра, ашлă, сĕткенлĕ кăмпасем, тĕсĕпе вĕсем ђĕрĕ аш тĕслĕ хĕрлĕ. (Сирĕн таврара тата мĕн тĕслĕ кăмпасем пур?)

Епĕ васкаварлă пур кăмпасене те пуçтарса илтĕм те, тата урăх тĕлте те кăмпа çук-и тесе шырама тытăнтăм. Анђах вăрманра урăх кăмпа тавраш тупаймарăм.

Кăмпасем çемйепе ӳсеççĕ. Çавăнпа ăçта та пулин пĕр кăмпа тупсан, çав таврарах тата та пайтах кăмпа тупма пултаратăн.

Епĕ вăрмана çав кунах каçпа тата каĭса çаврăнса тухрăм. Анђах кăмпа тавраш каллех тупаймарăм.

Тепĕр кунне ирпе каĭсан кăна епĕ çав вырăнтах пайтах кăмпа тупрăм.

Малашне вара епĕ куллен ирпе вăрмана каĭаттăм та, çав вырăнтанах кăмпа пухса таврăнаттăм. Çапла ман вађђи куллен кун кăмпа ӳссе çитĕнсе пырађђĕ. Çав кăмпа маншăн нихăçан та иксĕлми мул пулса тăђĕ.

Епĕ шухăшла пуçларăм: кăмпа йалан пĕр вырăнта ӳсет, унтан вăл куллен çăлса пуçтарнипе пĕтмест, малалла ĕрђенĕçем ĕрђесе пыраĭ...

Ак курăк тавраш питĕ хуллен ӳсет. Ăна çулса илсен, вăл нумаĭ ернерен çеç çĕнĕрен ӳссе çитĕнет. Ак кӳршĕсен пилеш çырлисем те мĕнле вăрахăн тулса пиçеĭмесĕр асапланаççĕ. Çав пилеш çырлисене пĕр татса илсен, вĕсен вырăнне урăх çырласем килес çул кăна пулма пултараççĕ...

Анђах кăлпасем пĕрте апла мар. Каçпа пĕр кăмпа тĕпĕ те çук. Ирпе çавăнтах хисепсĕр нумаĭ кăмпа-

сем пуçĕсене тăрăтса лараççĕ. Çав кăмпасем çĕр тăршĕпе ӳссе çитĕннĕ. Кăмпа вăл халлăпри пек хăвăрт ӳсće ĕлкĕрет.

Епĕ тата шухăшла пуçларăм: кăмпасем вĕсем, паллă, çĕр сĕткенне ĕмсе ӳсеççĕ, çав сĕткенпе тулса шĕвеççĕ, ăшланаççĕ, хăпараççĕ, сарăлаççĕ. Анҫах кăмпасем ваҫҫи йепле çĕрте сĕткен çитет-ши?



№ 42. Кăмпа ӳсće çитĕнни.

Епĕ кăмпана тымарĕпе кăларса, тымарĕ таврашне ҫаваласа пăхрăм. Кăмпа тымарĕ тăврашĕнҫе кирек хăçан та çĕрнĕ-çĕрмен çулçăсем, тата çĕрсе пĕтеймен йывăç тураҫĕсем выртаççĕ. Çав çӳп-çапа ҫипертерех салатса пăхсан, унăн ăшĕнҫе шурă çипсем тăлланнипе-сыхланнипе пулнă кĕçе татакĕ йевĕрлĕ йапала курăнаҫ. Çак кĕçен çипĕсем пур те кăмпа тĕпĕнҫен тухса сарăлаççĕ иккен те, çĕрекен çулçăсемпе туратсене сырса илсе тирĕне-тирĕне лараççĕ. Çапла кăмпан тымарĕ пĕртех те ытти йывăçсемпе курăксен тымарĕ йевĕрлĕ мар.

Епĕ кайран тин пĕлтĕм: кăмпа çав çипсене пула çĕрте çĕрсе выртакан тымарсен, çулçăсен, туратсен сĕткенне ĕмсе тăранса ӳсет иккен. Çак кăмпа тымарĕсем темиçе çул тăршĕпе çĕр айĕнҫе кăнтăр çутти курмасăрах пурăнма пултараççĕ.

Ак, ăшă та нўрлĕ те çанталăк тапранаŷ. Кăмпа çипĕсем сĕткенпе шўсе кўпеççĕ. Кĕçеленнĕ çипсем хушшинҙе, вĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнса тĕвелленнĕ вырăнсенҙе кăмпа ҙăмăртанма тытăнаŷ. Çак кăмпана пур йĕри-тавра выртакан çипсем те сĕткен леçсе тăрса ўстереççĕ. Çавăнпа та кăмпа пĕр кас тăршĕпе çĕртен ўссе тухса çитĕнсе лараŷ. (Кăмпа мĕнле ўснине сăнаса илĕр, ăна вăл ўсекен вырăнти тăпрана ҙаваласа пăхса тăрса сăнăр).

Çапла ĕнтĕ ак мĕншĕн кăмпасем питĕ хăвăртăн ўсеççĕ. Вĕсем пур таврари çĕрсе выртакан йапаласен сĕткенне туртса ĕмсе ўсеççĕ иккен. Йешĕл курăкпа йывăç шанса, хĕрсе, çĕрсе выртаççĕ; çак вырăнта кăмпасем ўсеççĕ. Çĕр уйарпа типсе кайсан йе кĕркуннехи сивĕпе шăнса ларсан, кăмпасем те ўсме ҙарăнаççĕ. Анҙах кăмпа тымар-амăшĕ, унăн кĕçеленнĕ шурă çипĕсем çĕр айĕнҙе малашне те пурăннăçем пурăнаççĕ.

---

# ТУПМАЛЛИ.

## Шыв, сывлăш, тата çĕр.


| | Стр. |
|---|---|
| Шывсем мĕнлисем пур | 3 |
| Сăмавар пире мĕне вĕрентет | 6 |
| Ирхи сивĕпе | 11 |
| Шыв шăннă ҫухне шыва мĕн пулаҫ | 14 |
| Мĕншĕн ҫулсем çурăла-çурăла тăпрана тухаççĕ | 15 |
| Йепле епир тăвар кăлартăмăр | 19 |
| Шыва йепле ĕçлеттерме пулаҫ | 24 |
| Путылккана шыв тултарса епĕ мĕн пĕлтĕм | 28 |
| Мĕншĕн маҫҫа çумĕнҫе урайĕнҫинҫен ăшăрах | 32 |
| Тимĕрçĕ лаççинҫе | 35 |
| Çил арманĕ | 39 |
| Сывлăша йепле виçме пулаҫ | 44 |
| Мĕн те пулсан çуннă ҫухне сывлăш улшăнни | 46 |
| Кассем | 48 |
| Çунакан хăйă мĕн çинҫен калаҫ | 56 |
| Пирĕн урасен айĕнҫе мĕн пур | 59 |
| Мĕншĕн тăмлă тăпра çинҫе тырă-пулă (ытти çимĕçсем те) хăйăрлă тăпра çинҫинҫен лайăхрах пулаҫ | 62 |
| Шурлăхра | 67 |


## Ҫĕрҫунсемпе ÿсетăран пурăнăçĕнҫен.


| | |
|---|---|
| Çĕлен | 73 |
| Пĕве сĕлекĕсем | 76 |
| Вăрăмтунасем | 80 |

| | Стр. |
|---|---|
| Шăнасем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . | 83 |
| Вăрлăх шăтнине сăнани . . . . . . . . . . . . . . . | 86 |
| Ман ана . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . | 90 |
| Çĕр-çырли . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . | 93 |
| Кăмпасем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . | 97 |

Ђăваш ъĕлçипе мĕнле кĕнекесем ăçтан мĕнле хакпа илме пуррине пĕлме

**КАТТАЛĂК ЫЙТСА ЙАРĂР.**

**Атрĕс:** Москва, Никольская, 10.

Хакĕ 90 пус. Цена 90 к

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

И. НИКИТИНСКИЙ РОДНАЯ ПРИРОДА. ЧАСТ

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СС

Москва, Никольская 10